А 86
Ч-43994

Т. В. Артемьева, О. И. Печников

2 класс

# ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВӖН урокӗсем



Национальная библиотека ЧР
4-043994

Обязат экз, К74.268.11
А86

Т.В. Артемьева
О.И. Печников

# ЛИТЕРАТУРА ВУЛАВӐН УРОКӖСЕМ

## 2-мӗш класс

*Меслет сӗнӗвӗсем*

Шупашкар
2011

УДК 373
ББК 74.268.3(2Рос=Чув)
А 86

**Чăваш Республикин Вĕренӳ
тата çамрăксен политикин министерстви
шкулсенче усă курма ирĕк панă**

**Рецензентсем:**

***А.Р. Кульева*** — педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн доценчĕ

***П.Н. Метин*** — филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, Чăваш патшалăх педагогика университечĕн профессорĕ

***Л.А. Ермакова*** — Шупашкар районĕн Салапайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта пуçламăш классенче вĕрентекен

**Артемьева Т.В.**

А 86 2-мĕш класри литература вулавĕн урокĕсем: меслет сĕнĕвĕсем / Т.В. Артемьева, О.И. Печников. — Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2011. — 111 с.

**УДК 373**
**ББК 74.268.3(2Рос=Чув)**

© Артемьева Т.В., Печников О.И., 2011
© Чăваш Республикин Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви, 2011
© Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ, 2011

-43994
...НАЛЬНАЯ ...ОТЕКА
Ч
РЕСПУБ...

# ПРОГРАММĂРАН

## 2-мĕш класс

## Литература вулавĕ *(85 сехет)*

**Вулав карти**. Мĕн-ши вăл *Тăван çĕр-шыв?* Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ. Пирĕн çĕр-шыври хуласемпе ялсем. Тăван республика çыннисен ĕçĕ-хĕлĕ. «Пирĕн ял (хула)» экскурси.

*Кĕркунне.* Кĕрĕн тĕрлĕ тапхăрне (пуçламăшĕ, ылтăн кĕркунне, хура кĕркунне), чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансен пурнăçĕнчи улшăнусене сăнлакан калавсемпе сăвăсем. «Кĕрхи сăнсем» экскурси.

*Эпир— туслă ачасем.* Ачасен пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсем туслă пулни, пĕр-пĕрне пулăшни.

*Ĕç телей те савăнăç кӳрет.* Ĕç çинчен, тĕрлĕ професси çинчен, ĕçĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ, халăх пурлăхĕшĕн тăрăшни, ĕç çынна телей кӳни çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем.

*Хĕлле.* Хĕллехи çанталăк. Чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансен хĕллехи пурнăçĕ. Çĕнĕ çула кĕтсе илни. «Хĕл çитсен» экскурси.

*Чĕр чунсем — пирĕн туссем.* Чĕр чунсем çинчен çырнă калавсем, сăвăсем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем (тупмалли юмахсем). Чĕр чунсене хӳтĕлесси, вĕсене пулăшасси.

*Халăх сăмахлăхĕ.* Чăваш халăхĕн тата ытти халăхсен юмахĕсем, юррисем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем.

*Тăван кил-йышра.* Пирĕн несĕлсем. Аннесемпе асаннесем, кукамайсемпе аппасем, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ. Анне çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем.

*Килчĕ ырă çуркунне.* Чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансен пурнăçĕнчи улшăнусем. Пăр кайни. Ачасен вăййи-кулли. Аслисен çурхи ĕçĕсем. Космонавтика кунĕ. Космонавтсем çинчен.

*Çу уйăхне кĕтĕмĕр.* Çуллахи çут çанталăк, уй-хирти тата пахчари ĕçсем çинчен çырнă калавсемпе сăвăсем, тĕрленчĕксем.

*Ӳсен-тăран тĕнчи.* Вăрман пурнăçĕ, ӳсен-тăран çинчен çырнă сăвă-юрă, калавсемпе халапсем.

**Пăхмасăр калама вĕренмелли сăвăсем:** çут çанталăк, тăван ен, тус-тăванлăх, тĕрлĕ чĕр чун çинчен калакан 5—6 сăвă (вĕрентӳçĕ сĕннисем тата ачасем хăйсем кăмăлласа суйланисем).

**Вулав хăнăхăвĕсем.** Тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (кăткăс тытăмлă сăмахсене — сыпăкласа) вуласси. Вулав хăвăртлăхĕ — минутра 50 сăмахран кая мар (ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 60 таран ӳсмелле). Вуланă чух шухăша пăсмасăр, тĕрĕс чарăнусем туса сывлăш çавăрса ярасси. Хутсăр предложенин пур тĕсĕсене те тĕрĕс интонаципе вуласси. Шухăшпа тĕллеве кура текста хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр вуласси.

**Текстпа ĕçлесси.** Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравласси, каланине текстри предложенисемпе çирĕплетесси. Текста пахаласси, ăна вĕрентӳçĕ ыйтăвĕсем е кĕнекери ӳкерчĕклĕ план тăрăх аса илсе каласси.

Вуланă текст тăрăх сăмахлă ӳкерчĕксем тăвасси. Пысăках мар калав шалăшне (содержанине) пăтраштармасăр, йĕркипе аса илесси.

Кĕнекери ӳкерчĕксем мĕне сăнланине, вĕсем калавăн хăш пайне кăтартнине палăртасси, çав вырăна текстра тупасси.

Калава темиçе пая уйăрасси, вĕсене ят парасси; вуланă текстăн тĕп шухăшне палăртасси (вĕрентӳçĕ пулăшнипе).

Илемлĕх мелĕсене — танлаштарусене, эпитетсене, метафорăсене (терминсене асăнмасăр) — сăнасси.

Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсене танлаштарасси, ун пек сăмахсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе тупасси. Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тĕрĕс ăнланасси. Вĕрентӳçĕ пулăшнипе текстра тĕрлĕ пулăма, çынна, çут çанталăка сăнарлăн кăтартакан сăмахсене тупасси, вĕсемпе сăмахлă ӳкерчĕксем тунă чух усă курасси, тавралăха сăнасси, тантăшсемпе выляни çинчен пĕчĕк калав хайласси.

Юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрса илме пĕлесси.

Сасăллă пуплевĕн (калаçăвăн) пысăк пĕлтерĕшлĕ мелĕсене — хăвăртлăха, янăравлăха, сасă хулăнăш-çинçешне, кĕвĕлĕхне кирлĕ пек улăштарма вĕренесси. Сăмахсене тĕрĕс каласси.

**Вулав кĕнекипе ĕçлеме хăнăхтарасси.** Тупмаллипе паллаштарасси, кирлĕ калав е сăвă ятне шыраса тупма вĕрентесси. Хайлав хыççăнхи ыйтусемпе ĕçсене пурнăçласси (вĕрентӳçĕ пулăшнипе).

## Класс тулашĕнчи вулав *(17 сехет)*

**Вулав материалĕ.** Ача-пăча валли кăларнă 8—30 страницăллă кĕнекесем. Ачасем хăйсем тĕллĕн ăшра тата тепĕр хут сасăпа суйласа вуламалли сăвăсем, юмахсем, калавсем (калăпăшĕ — 5 страница таран).

**Вулав тематики.** Чăваш çĕр-шывĕ, ачасен пурнăçĕпе ĕçĕсем, чĕр чунсемпе ӳсен-тăран çинчен. Тем те пĕр курса çӳрени. Юмахсем.

**Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси.** Кĕнекен тĕп пайĕсене, вĕсен ячĕсене (хуплашка, страницăсем, тупмалли) пĕлесси.

Кĕнекене мĕн çинчен çырнине ячĕпе авторĕ, ӳкерчĕкĕсем тăрăх ăнкарасси (1-мĕш çур çул); мĕн е кам çинчен итленине, вуланине ыйтсан тĕрĕс хуравласси.

4—5 кĕнекене темине кура ушкăнласа уйăрасси; вулав темине палăртасси, кĕнекене унăн хăйне евĕр паллисем тăрăх суйласа илесси. 1-мĕш çур султа — итленĕ текста, 2-мĕш çур çулта — харпăр хăй тĕллĕн вуланине аса илсе ыйтусем тăрăх каласа парасси. Тĕрлĕ пулăма, сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕпе хăтланăшĕсене тĕрĕс хак парасси. Кĕнеке куравĕпе, сĕнӳ плакачĕпе (1-мĕш çур çул), хуплашкасен картотекипе тата ансат каталог карточкипе (2-мĕш çур çул) паллаштарасси.

1—2-мĕш класра тăтăшах курнă ача-пăча кĕнекисен авторĕсене тĕрĕс аса илесси.

Ачасен харпăр хăй тĕллĕн кĕнеке вулас кăмăл туртăмне вăйлатасси; класри вулавçă кĕтесне тирпейлесе тăма хăнăхтарасси, ун çине таянса тĕрлĕрен литература вăййисемпе паллаштарасси. Вуланă хайлавсен уйрăм пайĕсене кĕретĕн выляса кăтартасси.

**Çыхăнуллă пуплев.** Пуплевĕн пурнăçри пĕлтерĕшĕ. Текст. Ăна темăпа çыхăнман предложенисен пуххипе танлаштарасси. Текстра мĕн çинчен каланине (текст темине) палăртасси. Текста темиçе сыпăка (пая) уйăрасси. Пысăках мар текста, унăн пайĕсене ят парасси.

Изложени çинчен ăнлантарасси. Ыйтусене ушкăнпа хуравланă, йывăр орфограммăсене асăрхаттарнă хыççăн вĕрентӳçĕ пулăшнипе 30—45 сăмахлă текст тăрăх изложени çырасси.

Ачасен пурнăçĕпе çыхăннă темăсемпе (вăйă выляни, вăрмана экскурсие кайни, кама та пулин пулăшни, шкул çинчен) 4—5 предложенирен тăракан пĕчĕк калав тăвасси.

## Литература вулавĕн «Ешĕл калча» кĕнеки тытăмĕ

Иккĕмĕш класра литература вулавне вĕрентме пĕр кĕнеке калăпланă.

Вĕрентӳ кĕнекине (пĕрремĕш класри пекех) официаллă «Литература вулавĕ» ятсăр пуçне ятарлă ят та («Ешĕл калча») панă. Ăна аталану принципне тĕпе хурса суйланă: çĕр çинче мĕн пурри пурте вăрлăхран е пĕрчĕрен пуçланать. Пĕрчĕрен калча сăмсаланать. Калчаран пучах ӳссе çитĕнет, пучах çумне пучах çыхсан тĕшĕллĕ кĕлте пулса тăрать.

Литература тĕнчи тăрăх ăнаçлă çӳремешкĕн пулăшма пĕрремĕш класс кĕнекисене тăватă персонаж кĕртнĕччĕ: ачасен тантăшĕсем Верукпа Тимук тата пысăк ăслă та ырă кăмăллă ватăсем — Шухши мучипе Мариç кинеми. «Ешĕл калча» кĕнекере тата тепĕр персонаж хутшăнчĕ — ачасен вĕрентекенĕ Мария Васильевна.

Верукпа Тимук — çивĕч ăс-тăнлă, туслă ачасем. Вĕсем тем те курасшăн, тем те пĕлесшĕн. Кашни япаланах, пулăмах ăнланасшăн, хăйсен шухăшне палăртасшăн. Тантăшсем кĕнеке тăршшĕпех ачасене çивĕч ыйтусем тавра пĕрле ларса шухăшлама чĕнеççĕ, хăйсен шухăшĕсене пĕлтереççĕ.

Кĕнекери хăш-пĕр ыйтусем кĕнекепе нумай пулмасть паллашнă, чылай чухне туслашсах та çитеймен ачасемшĕн кăткăсрах та пулма пултараççĕ. Çавăн пекех вĕсене

хальлĕхе хăйсен кăмăл-туйăмне сăнаса палăртма та, шухăшĕсене уçăмлă йĕркелеме те çăмăл мар. Çавна пула хăшĕсем çăвар уçма та именсе тăраççĕ. Çавăнпа кун пек ыйтусем патне пĕрремĕш класри пекех Верукпа Тимук хуравĕсене панă. Верук пулăма хĕр ача, Тимук — арçын ача куçĕпе, ăсĕпе пăхса хакланççĕ. Хуравĕсен тĕллевĕ — ачасене вăл е ку пулăма тишкерме явăçтарасси; тарăнрах ăнланма, хăйсен шухăшне уçăмлă, çыхăнуллă, ĕнентерӳллĕ палăртма хăнăхтарса пырасси. Вĕсем ачасемшĕн тĕслĕх вырăнне пулаççĕ.

Шухши мучипе Мариç кинеми ачасемшĕн аслашшĕпе асламăшĕ (кукашшĕпе кукамăшĕ) вырăнĕнче. Мучи нумай пĕлекен, шӳте-мĕне ăнланакан, хăй те шӳтлеме юратакан ватă. Вăл ачасене йăлăхтармасăр ăса вĕрентет, ансат пĕтĕмлетӳсем калăплама сĕмлентерет. Кинеми ачасемпе кăмăл-сипет ыйтăвĕсене хускатать, вĕсем пирки калаçăва явăçтарать.

Пĕрремĕш класра ачасем хайлавсемпе паллашнă май ансат литература пĕлĕвĕсем те кăштах туяннă, хăш-пĕр терминсен пĕлтерĕшĕсене те тĕшмĕртме тытăннă.

Иккĕмĕш класра литература вулавĕн тĕллевĕсемпе задачисем анлăрах. Ачасем литература теорийĕ çинчен мĕн пĕлни тарăнланмалла. Çак тĕллевпе ĕçе йĕркелеме çĕнĕ персонаж — вĕрентекен Мария Васильевна пулăшса пымалла. Вăл литература пĕлĕвĕсене пĕтĕмлетет, терминсене ансаттăн ăнлантарса парать.

Ку кĕнекере те уйрăм палăртусем пур: ыйтусемпе ĕçсем, асра тытмаллине палăртни, харкам тĕллĕн хайлама, ӳкерме-сăрлама сĕннисем; сăмах енчĕкĕ (ачасем пĕлмен сăмахсене ăнлантарса пани) тата çĕнĕ палăртусем — текста пайсене уйăрни, çивĕч самантсене палăртни. Уйрăм палăртусен тĕллевĕ — ачасене кĕнекепе хăйсем тĕллĕн ĕçлеме пулăшасси.

Кĕнекери персонажсемпе ачасене малтанхи урокрах паллаштармалла, уйрăм палăртусен пĕлтерĕшне ăнлантармалла.

Кĕнеке 13 пайран тăрать. «Шкула» — чи малтанхи пай. Ун тĕллевĕ — ачасене вĕренӳ йĕркипе, ĕçĕ-хĕлĕпе, шкул пурнăçĕпе малалла паллаштарасси, вĕренӳ хăнăхăвĕсене йĕркелеме пулăшасси, кăмăл-туйăмне çирĕплетесси, вĕренме хавхалантарасси.

Хайлавсемпе паллаштарнă май ачасене вĕсен яваплăхĕпе тивĕçĕсем анлăланса пынине, вĕренӳ кăткăс ĕç, çавăнпа тăрăшуллă та тимлĕ пулмаллине ăнлантармалла.

«Мĕн-ши вăл Тăван çĕр-шыв» пайра ачасем тăван çĕр, çĕр-шыв, патшалăх ăнлавсене уçăмлатаççĕ, Патшалăх символĕсемпе паллашаççĕ, Чăваш Республикин ялавĕпе гербĕ çинчен вуласа пĕлеççĕ. Сăвă-калав тишкерес пултарулăха малалла туптаççĕ.

Илемлĕ литературăпа паллашасси 1-мĕш класри пекех халăх сăмахлăхĕнчен пуçланать. Ку вĕренӳ çулĕнче ачасем тупмалли юмахсемпе, пулмасла халапсемпе, уяв сăвви-юррисемпе, пуплешӳ сăввисемпе тата юмах-халапсемпе паллашаççĕ. Вĕсем хыççăн кĕнекере çыравçăсен хайлавĕсене панă. Тĕп вырăнта — чăваш çыравçисен хайлавĕсем. Хайлавсене календарьпе тематика принципне пăхăнса ушкăнланă: «Кĕркунне», «Эпир туслă та хаваслă ачасем», «Ĕç телей те савăнăç кӳрет», «Хĕл», «Тăван кил-йышра», «Килчĕ ырă çуркунне», «Чĕр чунсем пирĕн туссем», «Ӳсен-тăран тĕнчи», «Çу уйăхне кĕтĕмĕр».

Тематика кăçал самай анлăланать. Ку кĕнекене йывăç-курăк, çут çанталăк вăхăчĕсем, çут çанталăкри пулăмсем, çынсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калакан хайлавсем те кĕртнĕ.

Кĕнекере панă хайлавсен шучĕ уроксен шутĕнчен ытларах. Литература пĕлĕвĕн кашни ăнлавне уçăмлатма, программăра палăртнă уйрăм задачăна палăртма вĕрентекенĕн ачасен литература аталанăвĕн шайне, вĕсен тата харпăр хăйĕн кăмăлне шута илсе суйламалăх пултăр тенĕ.

Уроксенче ачасем хăш-пĕр литература ăнлавĕсене уçăмлатаççĕ, терминсемпе паллашаççĕ. Вĕсене кĕнекере хулăн шрифтпа палăртнă.

Хайлавсене ăспа йышăнма пулăшас, тишкерме вĕрентес тĕллевпе ятарлă ĕçсемпе ыйтусен системине йĕркеленĕ. Хăнăхтарусене пурнăçлама чĕнекен хушусене хушу наклоненийĕн 2-мĕш сăпат форминче пани ачасемпе куçа-куçăн ĕçлеме хистет, пĕррелле хисепре пани вĕсене кĕнекепе харкам тĕллĕн ĕçлеме хăнăхтарса пырать.

Ыйтусемпе ĕçсем текста тĕрлĕ енлĕ, тĕрлĕ тĕллевлĕ тишкерме май пăраççĕ:

— хайлав содержанине сӳтсе явасси, ăна тарăнрах ăнланма, ăса хывма пулăшасси; хăйсен кăмăл-туйăмне сăнама, сăнлама вĕрентсе-хăнăхтарса пырасси;

— хайлав тытӑмӗпе жанр уйрӑмлӑхӗсене сӑнаттарасси;
— хайлаври сӑнарсене тишкересси, хӑтланӑшӗсене кура хакласси;
— хайлав пуплевне сӑнаттарасси.

Юлашки ҫулсенче, шел пулин те, ачасен сӑмах йышӗ (активлӑ словарӗ те, пассивли те) пурнӑҫ ыйтнине тивӗҫтермест. Ҫакна шута илсе кӗнекере уйрӑм палӑртусем шутне «сӑмах енчӗкӗ» кӗртнӗ. Сӑмах енчӗкӗнче ачасене ӑнланма кӑткӑсрах сӑмахсене панӑ. Вӗсен пӗлтерӗшне ансаттӑн ӑнлантарнӑ.

## Вулавҫӑ ӑслайӗсене йӗркелесси

Литература вулавӗн урокӗсен тӗп тӗллевӗ — пултаруллӑ вулавҫӑ ҫитӗнтересси. Пуҫламӑш шкулта вулав хӑнӑхӑвӗсемпе пахалӑхӗсем тин ҫеҫ йӗркеленсе, ҫирӗпленсе пынӑ чухне ҫамрӑк ачасенчен пултаруллӑ вулавҫӑ хатӗрлесси питех те кӑткӑс, ҫав вӑхӑтрах явапллӑ ӗҫ пулнине те палӑртнӑччӗ. Ҫак ӗҫ ӑнӑҫлӑхӗ чылай ыйтӑва тӗрӗс уҫӑмлатассипе те ҫыхӑннӑ. Вӗсенчен пӗри — вулавҫӑ пултарулӑхӗ мӗнле ӑслайсем ҫинче никӗсленнине татса парасси.

«Вулавҫӑ ӑслайӗ» ӑнлава меслетлӗх литературинче тӗрлӗрен ӑнлантарни тӗл пулать. Пӗрисем ӑна анлӑн пӑхаҫҫӗ, ҫак ӑслая ачан литература вӗренӗвӗн ӗҫ-хӗлӗпе пӗтӗмӗшле ҫыхӑнтараҫҫӗ: ку вӑл хайлава тишкерме, пахалама, кӗнекепе ӗҫлеме пӗлни те, пуплев ӑслайӗсем те. Теприсем вулавҫӑ ӑслайӗсем шутне илемлӗ хайлава йышӑнассипе ҫыхӑннисене ҫеҫ кӗртеҫҫӗ.

Меслетҫӗсем ӑслай ӑнлава хӑйне те тӗрлӗрен ӑнлантараҫҫӗ. Пӗрремӗшӗсем ӑна ӗҫ е ӗҫсен системи тесе пӑхаҫҫӗ (Н.Д. Молдавская, А.М. Софронова т.ыт.те). Ӑнлава ҫакӑн пек пӑхни ачасен литература аталанӑвӗнче ӗҫ мелӗсене мала кӑларать: план, сӑмахлӑ ӳкерчӗксем калӑпласси, персонажсене сӑнласси...

Теприсем ӑслай вӑл — ҫын ӗҫ тума хатӗрри теҫҫӗ. Кун пек ӑнлантарни вулав ӑслайӗсене вӗренӳ задачисене кура текста тишкернӗ чухне тивӗҫлӗ мелсем суйлама пултарнипе ҫыхӑнтарать. Эпир хамӑр литература аталанӑвӗн концепцине палӑртнӑ чухне вӑл кӑткӑс пӗрлӗхлӗ система тесе йышӑннине тӗпе хуратпӑр. Ҫавӑнпа литература хайлавне тишкересси те кӑткӑс, уйрӑм мелсенчен йӗркеленекен ӑслай тесе шутлатпӑр.

Тишкерӳ уйрӑм ӑслайӗсем шутне меслетҫӗсем ҫаксене кӗртеҫҫӗ:

*Чӗлхен сӑнарлӑхпа палӑртулӑх хатӗрӗсене вӗсен хайлаври вырӑнӗпе тӳпине кура тишкерме пӗлни.* Кӗҫӗн ҫулхи ачасене мӗн пур сӑнарлӑх хатӗрӗсене пӗлни, вӗсене текстра тупма пултарни кирлӗ мар. Вӗсене ҫав сӑнарлӑх хатӗрӗсене тивӗҫлӗ йышӑнма, туйма, автор мӗншӗн вӑл е ку хатӗре суйласа илнине ӑнланма вӗрентсе пымалла. Ҫак мехел илемлӗ хайлавсене тишкернӗ май аталанса пырать.

*Хайлавра автор сӑнарланӑ ӳкерчӗке куҫкӗрет кӑларма пултарни.* Ку ӑслая пӗрремӗш хут Н.Я. Мещеряковӑпа Л.Я. Гришина асӑннӑ.

Хайлава итленӗ, йышӑннӑ чухне ҫак ӑслайӑн пӗлтерӗшӗ самай пысӑк. Вуланине куҫ умне кӑларса тӑратасси хайлав пуплевне, унти сӑнарлӑх мелӗсене мӗнле ӑнланнипе ҫеҫ мар, ачан пурнӑҫ опычӗпе те ҫыхӑннӑ. Пурнӑҫ, туйӑм опычӗ пуян пулсан хайлавра сӑнланнӑ ӳкерчӗк те ун куҫӗ умне уҫҫӑнрах, илемлӗрех тухса тӑрать, тӗп шухӑша тарӑнрах ӑнланма, ӑса хывма пулӑшать. Апла ача хайлава тарӑнрах туйма пултартӑр тесен унӑн пӗтӗмӗшле аталанӑвӗ, шухӑш вӗҫевӗн ҫивӗчлӗхӗ, пурнӑҫ опычӗн пахалӑхӗ ҫинчен те шутламалла.

*Хайлаври ҫыхӑнусемпе хутшӑнусене курма, сӑлтавлама пӗлни.* Ку ӑслай тӳррӗнех хайлав композицине ӑнланма пӗлнипе ҫыхӑннӑ. Ачан сӑнарсене шайлаштарма, сюжетри эпизодсене танлаштарма, ӗҫ аталанӑвӗн йӗркине палӑртма, хайлаври вак детальсем пӗр-пӗринпе мӗнле ҫыхӑннине, хайлав пайӗсене (пай, абзац, акт, строфа) курма пӗлмелле, сӑнлав мелӗсене асӑрхамалла.

Кӗҫӗн ҫулхи ачасем композици йӗркеленӗвӗн саккунӗсене тӗплӗн ӑнланма пултараймаҫҫӗ, паллах. Малтан вӗсене хайлав пайӗсемпе (сюжет кӳртӗмрен, ӗҫ пуҫламӑшӗнчен, аталанӑвӗнчен, пӗтӗмлетӳрен тӑнипе) паллаштармалла, вӗсем мӗнле йӗркеленнине, вӗсем хушшинчи ҫыхӑнӑва курма вӗрентмелле.

Чи ӑнӑҫлӑ мелсем — план тӑвасси, эпифильмсем йӗркелесси, видеоклипсем ӑсталасси.

*Хайлаври сӑнара пӗрлӗхлӗ йышӑнма пултарни.* Калав-хайлавсенче тӗп шухӑша сӑнарсем, вӗсен хӑтланӑшӗсем урлӑ палӑртаҫҫӗ. Сӑнара пӗрлӗхлӗ йышӑнма пултарни тесе ӑна туйнине, унӑн хӑтланӑшӗсене сӑлтавлама, характер

аталанăвне курма пултарнине каласçĕ. Çав вăхăтрах, ача сăнара чĕрĕ çын пек туйса ăнланать пулсан, вăл чăн пурнăçпа çыхăнманнине, хайлав тĕп шухăшĕпе çыхăнса тăнине асра тытма пĕлмелле. Хайлав тĕп шухăшĕ сăнартан анлăрах ăнлав.

Меслетçĕсем сăнар-персонажа тишкермелли мелсенчен ăнăçлăраххисем тесе çаксене палăртаççĕ:

— сăнарăн вăл е ку хăтланăшне сăлтавласси: Мĕншĕн çапла турĕ? Мĕнле лару-тăрура? Çакна пула малалла мĕн пулса тухрĕ?

— сăнарсен шухăшĕсене, туйăмĕсене танлаштарса тишкересси;

— вĕсен кăмăл-туйăмĕ хусканусенче, интонацире мĕнле палăрнине сăнасси;

— рольпе вуласси;

— хайлав содержанине вăл е ку сăнар ятĕнчен каласа парасси.

*Автор мĕнле пăхнине, мĕнле кăмăлпа каласа панине, унăн позицине курма пĕлни.* Автор хăйĕн позицине тӳрĕ хаклавсенче те, хайлав содержанийĕнчи вак пайрăмсенче те палăртма пултарать. Сăнарсене калăпланă чухне те, композицие палăртнă чухне те, хайлав пуплевĕнче те автор чун-чĕрипе ăс-хакăлне тата туйăм-сунăмне асăрхатпăр.

Автор позицине ăнланса илме вĕренсе çитеймен ача хайлавра сăнланнă ĕçсене, лару-тăрăва анчах тишкерет, унăн кулленхи пурнăç опычĕ кăна пуянланать. Вăл автор пурнăça мĕнле туйнине-йышăннине ăнланаймасть. Çавăнпа ачана автор мĕнле кăмăлпа хайланине, сăнарсене мĕнле туйнине-йышăннине курма вĕрентни питех те пĕлтерĕшлĕ.

*Хайлав тĕп шухăшне ăнланма пултарни.* Хайлавăн тĕп шухăшне ăнланасси — тишкерĕвĕн тĕп тĕллевĕ. Вăл хайлаври хутшăнусемпе çыхăнусене курма пĕлнипе çыхăннă.

Хайлав тĕп шухăшне ăнланни — ăна ăнлантарса, каласа пама пĕлни çеç мар, харпăр хăй шухăшне автор позицийĕпе шайлаштарма пултарни те.

Хайлавăн тĕп шухăшĕ унăн ятĕнчех палăрать. Çавăнпа та унăн тĕп шухăшне, идейине палăртма вĕрентнĕ чухне хайлав ятне тишкерни ăнăçлă мел шутланать: Мĕншĕн çапла ят панă? Тата мĕнле ят пама пулать?

Ӳкерчĕксем тутарни, хайлаври кăмăл-туйăмпа шайлашуллă кĕвĕ суйлаттарни те вырăнлă.

Асӑннӑ ӑслайсене черетлӗн, пӗрин хыҫҫӑн теприне ятарлӑ мелсемпе усӑ курса йӗркелеме ҫук, паллах. Вӗсем хайлава тишкерме вӗреннӗ май аталанса, ҫирӗпленсе пыраҫҫӗ. Вӗсем аталаннӑҫемӗн вара тишкерӳ пахарах пулса пырать. Ача хайлава туйӑмлӑрах йышӑнма, тарӑнрах ӑнланма вӗренет. Пӗчӗк вулавҫӑ ҫитӗнсе, ҫирӗпленсе пырать.

## Ачасен литература аталанӑвӗн шайне тӗрӗслесе палӑртасси

Илемлӗ литература ачан туйӑм тӗнчине, тӗнчекурӑмне йӗркелес ӗҫре уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнать.

Илемлӗ пуплевӗн сӑнарлӑхпа палӑрту хатӗрӗсемпе мелӗсем ачасене туйӑм тӗлӗшӗнчен аталантармалли никӗс. Пӗчӗк пепкерен гражданин, патриот ӳстерсе ҫитӗнтересси те илемлӗ литературӑн паха хайлавӗсемпе паллашассипе тачӑ ҫыхӑнать.

Ҫавӑнпа вӗсем илемлӗ хайлавсене мӗнле йышӑнни-ӑнланнине, вӗсен литература аталанӑвӗн шайне тӗрӗслесе палӑртсах тӑни питех те кирлӗ.

Паян вырӑс лингводидактикинче литературӑна вӗрентес, ачасен аталанӑвӗн шайне тӗрӗслесе палӑртас ыйтӑва тӗпчемен темелле мар. Ӑсчах-меслетҫӗсем педагогсене альтернативлӑ программӑсем те сӗнеҫҫӗ. Вӗсенче кӗҫӗн ҫулхи ачасене илемлӗ литературӑпа паллаштарас ӗҫе пачах расна пӑхни палӑрать. Пӗрисем ачасене литературӑна вӗрентесси (литературное образование), теприсем литература тӗлӗшӗнчен аталанасси (литературное развитие) ҫинчен калаҫаҫҫӗ.

Анчах ҫул-йӗрӗ тӗрлӗ пулсан та тӗллевӗ, ҫитес ҫулӗ пӗрех пулмалла. Кун пек чухне диагностика, ачасен пӗлӳ, ӑслай, хӑнӑху шайне тӗрӗслесси, палӑртса тӑрасси пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Паянхи куна тӗрӗслев методики те, авторӗсем те пӗрре кӑна мар. Вӗсем ыйтӑва тӗрлӗрен пӑхса тӗрӗслев системисене тӗрлӗрен йӗркелеҫҫӗ.

Пирӗн тӗллев — тӗрлӗ автор сӗнекен тӗрӗслев методикисене тишкерсе чӑваш пуҫламӑш шкулӗнче ҫак ӗҫе мӗнле йӗркелеме май пуррине пӑхса тухасси.

Чӑн малтан ҫакна палӑртмалла. Эпир кӗҫӗн класс ачисемпе ӗҫленӗ чухне литературӑна вӗрентесси ҫинчен

каласма иртерех пуль, ачасен литература аталанӑвӗ ҫинчен калаҫни тӗрӗсрех тесе шутлатпӑр.

Тишкерӳ тӗпчевҫӗсем литература аталанӑвӗн ыйтӑвне те пӗр евӗр пӑхманнине, ӑнлав пӗлтерӗшне те пӗр пек палӑртманнине кӑтартать. В.П. Ванюшкина ку тӗлӗшпе икӗ тӗп концепци пуррине палӑртать. Пӗрремӗшӗсем (Л.Т. Шабицкая, Н.Д. Молдавская т.ыт.те) литература аталанӑвӗн тӗп виҫи (критерийӗ) ача литература хайлавне мӗнле йышӑнни (непосредственное читательское восприятие) тесе шутлаҫҫӗ. Теприсем (В.Т. Маранцман, Г.И. Кудина т.ыт.те) ача литература хайлавне мӗнле йышӑннин шайӗпе пӗрлех тата ҫак виҫесене те шута илмелле теҫҫӗ:

— литература пӗлӗвӗн шайне;
— ачан вулав интересӗсене, вӑл мӗн чухлӗ вуланине;
— илемлӗ хайлава тишкерме пӗлнине;
— литература пултарулӑхӗн аталанӑвне;
— вулав сӑлтавне, вулав хыҫҫӑнхи ӗҫ-хӗле.

М.П. Ванюшкина вара, кӗҫӗн ҫулхи ачасен хӑйсен вулавне сӑлтавласси, вӗсен вулав интересӗсем тин йӗркеленсе пынине шута илсе, ҫак ӳсӗмрисене тӗрӗслеме асӑннӑ виҫесем тивӗҫтереймеҫҫӗ тесе шутлать. Ун шучӗпе пӗлӳпе хӑнӑхусем ӗҫ-хӗлте палӑрсан ҫеҫ вӗсем аталану, йышӑну шайӗн виҫи пулма пултараҫҫӗ.

Литература аталанӑвӗн шайне мӗнле майпа палӑртасси тӗрӗслев тӗллевӗнчен килет. Н.Д. Молдавская ачан малашнехи литература аталанӑвӗн шайне тӗрӗслес тесен, урӑхла каласан ача хайлава хӑй тӗллӗн, аслисем пулӑшмасӑрах мӗнле йышӑннине палӑртас пулсан, ӑна ытти ачасем валли ыйтусем калӑплама сӗнмелле теҫҫӗ. Тексчӗ ал айӗнчех пулмалла, кирлӗ пулсан тепӗр хут вулама, пайӗсене, содержанине чӑрмавсӑрах аса илме май пултӑр.

Ача калӑпланӑ ыйтусем вӗрентекене вӑл хайлава хӑй тӗллӗнех мӗн таран йышӑнма-ӑнланма пултарнине, мӗне ытларах тимленине, ӑна мӗн шухӑшлаттарнине, мӗне асӑрхама тата ӑнланма пултарайманнине тӗрӗслеме май параҫҫӗ. Ачан паянхи литература аталанӑвӗн шайне тӗрӗслес тӗллевпе ӑна вӗрентекен ыйтӑвӗсене хуравлама та сӗнмелле. Ҫакӑн пек тӗрӗсленӗ чухне ун шухӑшне асли ертсе пырать. Тишкерӳ ҫул-йӗрне те, тӗп ыйтусене, мӗне ытларах тимлемеллине те вӗрентекенех палӑртать.

Ыйтăвĕсене калăпланă чухне ачасен вулав йышăнăвĕн тĕрлĕ енĕсене (вĕсен кăмăл-туйăмне, шухăшлавпа шухăш вĕçевне) тĕрĕслеме май пулмаллине шута илмелле. Ачасен хуравĕсем тăрăх вĕсен çак ăслай хăнăхăвĕсене йĕрлеме, палăртма май пултăр:

— ача хайлавра сăнланă пулăма сăнарланă ĕçсене мĕн таран йышăнни-ăнланни;

— вăл хăйĕн кăмăл-туйăмĕ мĕнле улшăннине сăнама пултарни;

— хайлаври эпизодсем хушшинчи çыхăнăва курма: унти сăнлавсен пĕлтерĕшне, сăнарсен характерĕсене сăнама, хайлавăн содержанийĕпе формин шайлашăвне ăнланма пĕлни;

— хайлавăн тĕп шухăшне ăнланма, харкам тĕллĕн пĕтĕмлетӳсем тума пултарни.

Ыйтусемсĕр пуçне ачасен аталану шайне тĕрĕслеме ытти тĕрлĕ хăнăхтару сĕнме пулать: сăмахлă ӳкерчĕксем йĕркелеттересси, хайлав планне тутарасси т.ыт.те.

Ачасем литература аталанăвĕн шайне 2-мĕш класра та Н.Д. Молдавская палăртнă виçесем тăрăх пахаламалла. (Вăл хайлава туйса илессин шайĕсене, хаклав виçисене мĕнле палăртнине «Литература вулавĕн урокĕсем: 4-мĕш класс» ятлă меслетлĕх кĕнекинче çырса кăтартнă.)

## Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлесси

Маларах тишкерĕвĕн тĕп тĕллевĕ хайлавăн тĕп шухăшне, идейине ăнланасси, ăса хывасси тесе каланăччĕ. Тĕп шухăша сăнарсем, вĕсен хăтланăшĕсемпе характерĕ, сюжет аталанăвĕ урлă палăртнине асăннăччĕ. Çапла вара хайлав сюжечĕн аталанăвне йĕрлени, сăнарсене палăртни, вĕсен характерĕпе хăтланăшĕсене хаклани хайлавăн тĕп шухăшне, идейине, автор кăмăл-туйăмĕпе позицине тарăнрах ăнланма пулăшать.

Асăннă тĕллевпе литература вулавĕ валли хатĕрленĕ вĕренӳ комплексĕнче ӳкерчĕксен альбомĕ пур. Унти ĕçсем «Ешĕл калча» учебникри материалпа шайлашса тăраççĕ.

Вĕренӳ пособине ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме вĕрентес тĕллевпе хатĕрленĕ. Малтанах ĕçсене ушкăнпа калаçнă, сӳтсе явнă хыççăн пурнăçлама сĕнетпĕр. Каярахпа ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме те шанмалла. Ĕçе кирлĕ пек йĕркелеме йышăннă ятарлă палăртусем пулăшаççĕ.

Кашни страницăри ĕçсем кĕнекери уйрăм хайлава тишкерессипе çыхăннă. Тишкермелли хайлавсене суйласа илнĕ чухне вĕсем тĕрлĕ жанрлă, кăмăл-туйăм, содержани, сăнарсем тĕлĕшĕнчен тĕрлĕрен пулччăр тесе тăрăшнă. Календарьпе тематика принципне те шута илнĕ. Альбома пурĕ 31 хайлавпа çыхăннă ĕçсем кĕнĕ. Хăш хайлавпа ĕçлессине учитель хăй татса парать. Кăмăл пулсан альбома кĕмен хайлавсемпе те тĕслĕхе илнисем пек ĕçлеме юрать.

Альбомри ĕçсене хайлава итленĕ-йышăннă, учитель ертсе пынипе ушкăнпа тишкернĕ хыççăн тин пурнăçласан вырăнлă. Тĕслĕхрен, ĕçе çапла йĕркелеме пулать. Ачасем страницăри ӳкерчĕке е ӳкерчĕксене сăнаççĕ, мĕнле хайлава сăнланине калаççĕ. Унтан хайлав хăйсенче мĕнле кăмăл-туйăм çуратнине палăртаççĕ. Çакăн валли ятарлă палăртусемпе усă кураççĕ, вĕсенчен тивĕçлине суйласа илсе страницăн çӳлти кĕтесĕнчи çаврашкана ӳкереççĕ: ☹ — тунсăхлă, пусăрăнчăк туйăм, 😮 — хаваслă, çĕкленӳллĕ туйăм, ☺ — шӳтлĕ, чее туйăм, 😐 — тĕлĕнӳ. Енчен те хăйсен кăмăл-туйăмне палăртма сĕннĕ палăртусем çителĕксĕр пулсан, тивĕçлисене хăйсем шухăшласа кăларса ӳкерччĕр. Ку вăл харпăр хăй туйăмне тата тимлĕрех сăнама пулăшать.

Малаллахи ĕçсем хайлав тишкерĕвĕпе çыхăннă.

*Хайлав содержанине пĕтĕмĕшле сăнлакан ӳкерчĕксем.* Ачасем ӳкерчĕк çине тĕревленсе хайлава аса илеççĕ, унăн содержанине асăмлаççĕ. Сăрăсемпе илемлетнĕ май хăйсен тата авторăн кăмăл-туйăмне палăртаççĕ. Ĕçсен тĕсĕсене ятарлă палăртусемпе кăтартнă.

*Хайлаври пĕр-пĕр саманта сăнлакан ӳкерчĕксем.* Ку ĕç хайлавăн сюжет аталанăвĕпе çыхăннă: ĕç мĕнле пуçланать, мĕнле аталанса пырать, чи çивĕч самант хăшĕ, питĕ пăшăрханмалли е савăнмалли, хăрушă е хаваслă самантсем хăшĕсем пулчĕç, ĕç мĕнле вĕçленет. Альбомра уйрăм хайлаври чи çивĕч е мĕнле те пулин вăйлă туйăм çуратакан самантсене сăнлакан ӳкерчĕксем пама тăрăшнă. Ачасем çав самантсене аса илеççĕ, вуланă чухне çуралнă туйăмсене, персонажсен çав самантри ĕçĕсене тишкереççĕ. Автор персонажсене мĕнле сăнарланине те сăнаççĕ: Вăл е ку сăнара мĕнле ӳкернĕ? Çапла ӳкерсе ăна мĕнлерех кăтартасшăн пулнă?

Унтан ачасем хăйсен туйăмне, сăнланă самантa, сăнарсене мĕнле йышăннине ӳкерчĕке сăрăсемпе илемлетсе палăртаççĕ.

*Хайлаври тĕп сăнара тата ытти сăнарсене сăнлакан ӳкерчĕксем.* Ку ӳкерчĕксемпе ĕçленĕ май ачасем сăнарсене палăртма, вĕсене шайлаштарса ушкăнлама, тишкерме вĕренеççĕ. Тĕп сăнарсене альбомра çаврака рамкăра, ыттисене тăваткал рамкăсенче панă. Хăшĕсене ӳкернĕ, теприсене ачасен хăйсен аса илсе пушă çаврашкана е тăваткала ӳкермелле, кайран сăрласа илемлетмелле. Çакна тума ачасен сăнарсен сăн-питне çеç мар, вĕсен хăтланăшĕсене те, характерне те аса илмелле. Автор вĕсене мĕнле кăмăлпа сăнарланине шута илмелле. Унсăрăн ӳкерчĕксем витĕмсĕр пулĕç. Капăр ӳкерни мар, чĕрĕ сăнар кăтартма пултарни паха.

Сăнарсене ӳкерсе-сăрласа кăтартасси — çăмăл ĕç мар. Çавăнпа та ку ĕçе хайлаври чи çивĕч, асра юлнă самантa тишкернĕ хыççăн пурнăçласан вырăнлă. Альбомра та вĕсене çав йĕркепех вырнаçтарнă.

*Сюжетлă ӳкерчĕксен ярăмĕ.* Вĕсемпе усă курса альбомра тĕрлĕ ĕç тума сĕннĕ: хайлав пуçламăшне е вĕçне сăнлакан ӳкерчĕксем тăвасси, сăрласси; сиктерсе хăварнă самантсене аса илсе ӳкересси, сăрласси; ӳкерчĕксене хайлав сюжечĕн аталанăвĕпе шайлаштарса пырасси, тĕп сăнар тĕрлĕ самантра хăйне мĕнле тыткаланине, унăн кăмăлĕ çав самантра мĕнле палăрнине кăтартасси.

Малтан яланхи йĕркепе, хайлава сăнланине калаççĕ. Ăна вуланă май, хăйсен мĕнле кăмăл-туйăм çуралнине палăртаççĕ. Унтан хайлав сюжетне йĕрлеме пуçлаççĕ. Ĕç саманчĕсене кура ӳкерчĕксен йĕркине палăртаççĕ. Ĕç мĕнле пуçланать, мĕнле аталанса пырать? Çакна хăш ӳкерчĕксенче сăнланă? Ĕç вĕçне сăнлакан ӳкерчĕке тупăр.

Ӳкерчĕксен йĕркине палăртнă май ачасем унта сăнланнă самантсене аса илсе тишкереççĕ, ӳнерçĕ мĕн кăтартасшăн пулнине, çавна мĕнле мелсемпе сăнланине курма тăрăшаççĕ, каласа пама пикенеççĕ. Е ӳкермесĕр сиктерсе хăварнă (ун вырăнĕнче пушă вырăн — тăваткал) самантa аса илеççĕ. Хайлавра сăнланă ĕçсен йĕркине аса илĕр. Сирĕн шутпа хăш саманчĕ сăнланмасăр юлнă? Эсир пушă вырăнта хăш самантa ӳкерсе сăнламалла тесе шутлатăр? Çав самантa тĕплĕнрех аса илме тăрăшаççĕ: Унта мĕн пулса иртнĕ? Сăнарсенчен хăшĕсем хутшăнаççĕ? Вĕсем

çав самантра хăйсене мĕнле тытнипе вĕсен кăмăл-туйăмне, автор çак самантра мĕнле кăмăлпа сăнланине, ачасем хăйсем мĕнлерех йышăннине тишкереççĕ. Унтан мĕн ӳкерессине, мĕнле ӳкересси-сăрлассине сӳтсе яваççĕ. Кайран тин ӳкерме-сăрлама сĕнмелле.

Хăш ачан ку ӳсĕмре ӳкерес пултарулăх çирĕпленсе çитейменни те пулать. Кун пеккисемшĕн пĕчĕк хут çине ӳкерчĕк тума йывăртарах. Вĕсем пысăкрах ӳкереççĕ. Çавăнпа та ачасене альбом вырăнне уйрăм тетраде ӳкерме сĕнмелле. Майĕпен вĕсем альбомри пĕчĕк лаптăкра ӳкерме те вĕренсе пырĕç.

Е, калăпăр, вĕренекенсем тĕп сăнар хăйне тĕрлĕ самантра мĕнле тыткаланине тишкереççĕ. Малтан пĕр сăнарах тĕрлĕрен сăнланине палăртаççĕ. Кашни ӳкерчĕкре ăна мĕнлерех кăтартнине сăнаççĕ. Тĕслĕхрен, шăши (Н. Васильев. «Шиклĕ шăши» юмах) пĕр ӳкерчĕкĕнче пуçне, сăмсине каçăртнă, мăйăхĕ чăнк, малти тяппиcене пилĕке тытнă, кайрисене хĕреслетсе пуснă, тепринче вара пуçне уснă, тяппиcемпе сăмси-çăварне тытнă, мăйăхĕсем усăннă, хӳрине хĕснĕ, тата тепринче чĕрне вĕççĕн пырать, малти тяппиcене сарса тытнă т.ыт.те.

Кашни ӳкерчĕкĕнче шăшие çакăн пек ӳкерсе мĕнлерех сăнарланине (мăнаçлă, сĕмсĕр, асăрхануллă, мĕскĕн т.ыт.те) сӳтсе яваççĕ, вăл хăш самантра çакăн пек пулнине асăрхаççĕ. Ӳкерчĕксен ярăмĕнче çак самантa сăнланă ӳкерчĕксене тупса вĕсене çыхăнтараççĕ.

Хăш-пĕр страницăсенче икĕ ĕçе пĕрлештерни те тĕл пулать. Тĕслĕхрен, ӳкермесĕр сиктерсе хăварнă самантa сăнлакан ӳкерчĕк тăвасси, хайлав сюжечĕн аталанăвĕпе шайлашуллă ӳкерчĕксен йĕркине палăртасси. Кун пек чухне хайлава палласа илнĕ, кăмăл-туйăма палăртнă хыççăн сĕннĕ ӳкерчĕксенче хăш самант сăнланни çинчен калаттармалла. Унтан пушă вырăна хăйсем калаври хăш самантa сăнлакан ӳкерчĕк тăвасшăн пулни пирки шутлаттармалла, мĕншĕн çапла шут тытнине сăлтавлама хистемелле.

Асăннă ĕççемсĕр пуçне альбомра ытти вак ĕççем те пур. Вĕсене мĕнле пурнăçламаллине палăртусем тăрăх çăмăллăнах ăнланма пулать.

Альбомри ĕççем ачан хайлава туйăмлă йышăнас мехелне аталантарма, унăн тĕп шухăшне тарăнрах ăнланма пулăшмалла.

Ч-4399ч

## УРОКСЕМ

### 1-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А. Алкан «Чи савăнăçлă кун» сăвви; «Хутла вĕренме тытăнакана» хайлавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (1 с.).

**Урок теми:** Эпĕ иккĕмĕш класс ачи. «Литература вулавĕ» предметăн 2-мĕш класс валли палăртнă тĕллевсемпе задачăсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— литература вулавĕн урокĕсенче 1-мĕш класра мĕн вĕреннине аса илесси, 2-мĕш класри тĕллевсемпе тата задачăсемпе паллаштарасси;

— ачасене вĕренекен тивĕçĕсене мĕнле ăнланни, мĕнле пурнăçлани çинчен калаçтарасси;

— кĕнеке пĕлтерĕшĕ çинчен, унпа мĕнле ĕçлемелли, ăна епле тыткаламалли çинчен калаçасси;

— хайлава тишкерсе ăнланас ăслайсемпе хăнăхусене малалла аталантарасси.

#### Урок йĕрки

**1.** «Шкула каятпăр» калаçу. Ачасемпе çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланни, халĕ вĕсем иккĕмĕш класс ачисем пулни, çавăнпа яваплăхĕпе тивĕçĕсем те пысăкрах пулни çинчен калаçни.

1-мĕш класра литература вулавĕн урокĕсенче мĕне вĕреннине аса илни. Кăçалхи тĕллевсемпе тата задачăсемпе паллаштарни.

**2.** 2-мĕш класра литература вулавĕн урокĕсенче усă курмалли «Ешĕл калча» кĕнекепе паллаштарни. Кĕнеке ятне, кĕнекепе мĕнле ĕçлемеллине ăнлантарни. Кĕнекери сăнарсемпе паллашни. Тата тепĕр çĕнĕ сăнар — Мария Васильевна учительница — хутшăннине, вăл ачасене епле пулăшса пырассине палăртни.

**3.** А. Алкан «Чи савăнăçлă кун» сăввине вулани, ăна кĕнекери ыйтусем тăрăх ушкăнпа тишкерни.

**4.** Ĕç тетрачĕпе паллаштарни, унпа мĕнле ĕçлемеллине ăнлантарни. Ĕçсене ачасем харкам тĕллĕн пурнăçлани, унтан ушкăнпа сӳтсе явни.

**5.** «Хутла вĕренме тытăнакана» хайлава ачасем хăйсем тĕллĕн пурнăçлани, унтан ушкăнпа сӳтсе явни.

**6.** «Шкулта вĕренекенĕн мĕн асра тытмалла?» хушусемпе паллашни, вĕсене сӳтсе явни.

Пĕтĕмлетӳ: Халĕ вуланă хушу-канашсемпе сĕнӳсене тахçанах çырнă. Унта каланисем паянхи шкул ачисемшĕн те усăллă.

Çын хăйĕн ачине яланах ырра вĕрентесшĕн, ĕçчен те сапăр кăмăллă, аслисене хисеплекен, пулăшакан çын пулса ӳснине курасшăн.

— Çакăн пек хушу-канашсем халĕ хăвăрăн çырмалла пулсан эсир çакăнта çырнисенчен хăшĕсене суйласа илнĕ пулăттăр? Хăвăр тата мĕн хушнă пулăттăр?

## 2-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери И. Шухшин «Чернил» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (2—3 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** «Илемлĕ хайлав», «автор», «хайлаври сăнарсем», «хайлавра сăнланă ĕç йĕрки» ăнлавсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— ачасен хайлавсене вуласа йышăнас-ăнланас ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене малалла аталантарасси;

— урок теминче кăтартнă хайлав, автор, хайлаври сăнарсем, хайлав тытăмĕ ăнлавсене асăмласа уçăмлатасси.

— текста тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене малалла аталантарасси, хайлавра кирлĕ вырăнсене тупма, харпăр хăй шухăшне текстра каланисемпе çирĕплетме вĕрентсе пырасси;

— автор кăмăлне асăрхама, харпăр хăй кăмăл-туйăмне сăнама, палăртма хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Ĕлĕкхи шкул çинчен калаçни. Çавăн çинчен ăçта вуласа пĕлнĕ, кам каласа панă?

**2.** «И.Н. Ульяновпа И.Я. Яковлев Хутар шкулĕнче» ӳкерчĕке сăнани, ун тăрăх калаçни (класс пӳлĕмĕ, вĕренӳ хатĕрĕсем мĕнлерех, вĕренекенсем мĕн тăхăннă? Вĕсем

хăйсене мĕнле тыткалаççĕ? Кашнин сăнĕ-питĕнче мĕнле кăмăл-туйăм палăрать? Аслисене мĕнле итлеççĕ?).

**3.** «Чернил» калава пайăн-пайăн вулани, ăна кĕнекери ыйтусем тăрăх тишкерни, ӳкерчĕксене сăнаса çырмалли хатĕрсем мĕнле улшăнса пынине палăртни.

— Хайлаври тĕп сăнар кам? (Кунта тĕп сăнар — шкул ачи, каласа параканĕ (авторĕ) те вăлах. Анчах халĕ ĕнтĕ вăл çитĕннĕ çын, тахçан пулнине аса илсе каласа парать. Кун пек хайлава аса илӳ теççĕ.)

— Шкул ачи сирĕн шутпа мĕнлескер? Мĕншĕн çапла шутлатăр? Хăвăр каланине калаври йĕркесемпе çирĕплетĕр.

— Калаври ытти сăнарсене аса илĕр. Вĕсем мĕнлескерсем? Мĕншĕн çапла шутлатăр?

— Автор хăйпе пулса иртнине мĕнле кăмăлпа каласа парать? Мĕншĕн çапла шутлатăр?

**4.** Ĕç тетрадĕнчи 2—4-мĕш ĕçсене ачасем хăйсем тĕллĕн пурнăçлани, унтан ушкăнпа сӳтсе явни.

**5.** Ӳкерчĕксен альбомĕпе паллаштарни, унпа мĕнле ĕçлемеллине ăнлантарни (ӳкерчĕксене сăнани, тишкерни, вĕсене ят пани, харпăр кăмăлне палăртни).

**6.** Киле ĕç пани. «Чернил» калава тепĕр хут вуласа тухса ĕç тетрадĕнчи 5—7 ĕçсене тумалла. Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ӳкерчĕке сăрламалла.

## 3-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери П. Хусанкайăн «Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ» сăвви; Юхма М. «Чăваш çĕр-шывĕ» калавĕ.

**Урок теми:** Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— ачасене «тăван кĕтес», «Тăван çĕр-шыв» ăнлавсене уçăмлатма, харпăр хăй пурăнакан вырăна юратма, сыхлама хăнăхтарасси; тăван тавралăх, тăван кĕтес çинчен ытларах пĕлме хавхалантарасси;

— ачасене хайлавсен тĕрлĕ (илемлĕ, ăслăх) тĕсĕсене уйăрма, вĕсен уйрăмлăхĕсемпе хăйьеверлĕхне курма вĕрентсе пырасси;

— сăвăласа çырнă илемлĕ хайлавсене ăнланас пултарулăха аталантарасси, харпăр хăй кăмăл-туйăмне сăнама хăнăхтарасси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Ачасене тăван халăх çинчен, чăвашсем Атăл тăрăхĕнче ĕлĕкрен пурăнни, пирĕн тăрăх мĕнпе пуян, паллă пулни çинчен, харпăр ялĕ-салин тăрăхĕ çинчен калаçни.

**2.** П. Хусанкайăн «Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ» сăвва итлени, калаçни, харпăр хăй кăмăл-туйăмне палăртни.

— Сăвва мĕнле туйăмпа итлерĕр? Сирĕн кăмăла мĕн ытларах çĕклерĕ, сире сăвăра мĕн хавхалантарчĕ?

**3.** Хайлава хăйсем тĕллĕн вуланă хыççăн тишкерни. «Тема» ăнлав пĕлтерĕшне асăмлани.

— Сăвăра мĕн çинчен каланă? Унăн теми мĕнле? (Тема — хайлавра мĕн çинчен калани.)

— Чăваш халăхĕ хăш тăрăхра пурăнать? Сăвăра Атăла мĕнле тенĕ? Мĕншĕн? Чăваш çĕрне тата мĕнле сăнарланă? Тупса вулăр.

**4.** Сăвă пуплевне сăнаттарни. (Кĕнекери ыйтусемпе, пĕтĕмлетӳсемпе ĕçлемелле.)

**5.** Пĕтĕмлетни.

— Ку хайлава илемлĕ хайлав теме пулать-и? Ăнлантарăр.

**6.** Юхма Мишшин «Чăваш çĕр-шывĕ» калавне ачасем хăйсем тĕллĕн вулани, ушкăнпа калаçни.

— Чăваш Республики ăçта вырнаçнă?

— Хăш хула республикăн тĕп хули? Ун çинчен мĕн каланине тупса вулăр.

— Чăваш çĕрĕ мĕнпе пуян?

**7.** Пĕтĕмлетни. (Кĕнекери ыйтусемпе тата пĕтĕмлетӳсемпе усă курни.)

## 4-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери «Ялав» хайлав; Раççей Федерацийĕн ялавĕпе гимнĕ; Чăваш Республикин гербне, ялавне, эмблемине сăнлакан слайдсем; тăван районăн, ялăн гимнĕ, гербĕ, эмблеми.

**Урок теми:** Публицистика хайлавĕн тĕп уйрăмлăхĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— публицистика хайлавĕн тĕп паллисемпе тата уйрăмлăхĕсемпе паллаштарасси;

— палăртуллă вулав ăслайĕсене аталантарасси;

— патриотлăхпа гражданлăх туйăмĕсене тарăнлатасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу.

— Калăр-ха, ачасем, эсир хăш районта, хăш ялта пурăнатăр? (Ачасен хуравĕ.)

— Хăвăр ялта çуралса ӳснĕ паллă çынсенчен пĕринпе паллаштарăр-ха. (Пĕр çын çинчен каласа параççĕ.)

— Хăвăр районтан тухнă паллă çынсем çинчен мĕн пĕлетĕр? (Ачасен хуравĕ.) Вĕсенчен пĕрин çинчен каласа парăр. (Ачасен хуравĕ.)

— Ачасем, çуралнă ял пирĕн пĕчĕк Тăван çĕр-шыв пулать. Ытти çынсене эпир хамăр çинчен çав ялтисем, тетпĕр. Хăш районтан пулнине кура эпир çав районсем тетпĕр. Чăваш Республикине те эпир Тăван çĕр-шыв тетпĕр. Ытти вырăнсене кайсан эпир хамăра чăваш тесе калатпăр. Раççей Федерацийĕ вара пирĕн аслă Тăван çĕр-шыв. Урăх çĕр-шывсене кайсан эпир раççейсем тетпĕр хамăра. Эпир мухтавлă Раççейре пурăнатпăр.

**2.** Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин, (районăн тата ялăн) гимнĕсене итлеттерни. Итленĕ вăхăтра экран çинче слайдсем пулмалла.

**3.** «Ялав» калава вулани.

**4.** Кĕнекери ыйтусемпе ĕçсене сӳтсе явни (15—16 с.).

**5.** Пĕтĕмлетни.

Кунашкал текстсем пĕр енчен илемлĕ хайлав, тепĕр енчен ансат ăслăх хайлавĕ евĕрлĕ. Вĕсене публицистика хайлавĕ теççĕ. Унта халăх пурнăçĕн çивĕч ыйтăвĕсене çырса кăтартаççĕ. Автор туйăмĕ, вăл мĕн каласшăн пулни питĕ уçăмлă палăрать.

**6.** Киле ĕç пани. «Ялав» калава палăртуллă вулама хатĕрленмелле.

## 5-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери П. Хусанкайăн «Çĕршывăмăр пуçламăшĕ» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (4—5 с.).

**Урок теми:** Сăвăласа çырнă хайлав.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— ачасен сăвăлла хайлава итлесе ăнланас ăслайĕсене малалла аталантарасси;

— сăвăра туйăм мĕнле аталанса пынине сăнама хăнăхтарасси;

— хайлав чĕлхине туйма, сăнарлăх, палăртулăх мелĕсене ăнланма вĕрентсе пырасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу.

— «Çĕр-шывăмăр пуçламăшĕ» сăвă — «Тăван çĕр-шыв» поэма сыпăкĕ. Ăна чăвашсен паллă сăвăçи Петĕр Хусанкай çырнă.

**2.** «Çĕр-шывăмăр пуçламăшĕ» сăвва итлени.

— Сăвă мĕнле туйăм çуратрĕ?

— Куç умне мĕнлерех ял тухрĕ? Каласа пама тăрăшăр.

**3.** Сăвва иккĕмĕш хут вулани, тишкерни.

— Хайлавра мĕн çинчен çырнă? Унăн теми мĕнле? Автор Тăван çĕр-шыв ăçтан пуçланать тет? Вăл Тăван çĕр-шыва мĕнле сăнлать? Тăван çĕр-шыва асăнсан унăн куçĕ умне мĕнле сăнлăхсем туха-туха тăраççĕ?

— Тăван çĕр-шыв аслă пулнине автор мĕнле кăтартнă? Вăл çĕр-шывăмăр çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать?

**4.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлани.

**5.** Хайлавăн тĕп шухăшне уçăмлатни.

— Хайлав мĕн ятлă? Мĕнле шутлатăр, автор мĕншĕн хăй сăнлакан вырăнсене «çĕр-шыв пуçламăшĕ» тенĕ? Сирĕн шутăрпа Тăван çĕр-шыв ăçтан пуçланать?

**6.** Пĕтĕмлетни.

— Эсир хăш ялта пурăнатăр? Сирĕн ял мĕнле вырăнта ларать? Сăнласа пама тăрăшăр.

— Ялта сирĕн юратнă вырăнсем пур-и? Унта пулнă чухне сирĕн кăмăл мĕнле улшăнать? Мĕнле туйăмсем çуралаççĕ?

— Таврари ялсене пĕлетĕр-и? Унта пулса курнă-и? Каласа парăр.

**7.** Киле ĕç пани. Хăвăр яла е ялти юратнă вырăнсене сăнлакан ӳкерчĕк тăвăр. Ăна ăнлантарса пама хатĕрленĕр.

## 6-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери С. Тăваньялсен «Тăван чĕлхене ан манăр» тата Л. Мартьянован «Чăвашла» хайлавĕсем.

**Урок теми:** Илемлĕ хайлав; хаçат-журналсенче тĕл пулакан текстсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— ачасен тĕрлĕ хайлавсене итлесе ăнланас пултарулăхне малалла аталантарасси;

— илемлĕ хайлав хăйьевĕрлĕхне туйма, ăна ытти хайлавсенчен уйăрса илме вĕрентесси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Пирĕн Тăван çĕр-шыв — Чăваш Республики. Чăваш çĕр-шывĕ Атăл тăрăхĕнче вырнаçнă. Çак вырăнта мĕн авалтанах пирĕн мăн асаттесем пурăннă. Кашни халăхăн хăйĕн йăли-йĕрки, чĕлхи. Пирĕн тăван чĕлхе — чăваш чĕлхи. Вăл авалхи чĕлхесенчен пĕри. Пирĕн халăх ăна ĕмĕрсем хушши упранă, паянччен сыхласа хăварнă.

**2.** Л. Мартьянован «Чăвашла» сăввине итлени, сӳтсе явни.

— Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ? Итленĕçемĕн сирĕн кăмăл мĕнле улшăнса пычĕ?

**3.** Сăвва харпăр хăй тĕллĕн вулани, ушкăнпа тишкерни.

— Сăввăн пуçламăш йĕркисене аса илĕр. Мĕншĕн ăна çапла ят панă? Иккĕмĕш йĕрки те çав сыпăксенченех пуçланать. Автор мĕншĕн çапла тăвать? Ачасен шухăшне итленĕ хыççăн кĕнекери пĕтĕмлетӳсемпе паллашмалла.

**4.** Пĕтĕмлетни. Сăвва палăртуллă вулани.

— Сăвва мĕншĕн çапла ят панă? Автор мĕн палăртасшăн пулнă? Вăл хăйĕн шухăшне мĕнле туйăмпа каласа парать?

— Сирĕн шутăрпа сăвва мĕнлерех вуламалла?

— Кашни халăхăн хăйĕн тăван чĕлхине упрама вĕренмелле. Чĕлхе çухалсан, манăçа тухсан, халăх та пĕтет.

**5.** С. Тăваньялсен «Тăван чĕлхене ан манăр» хайлавне итлени, кĕнекери ыйтусене хуравлани.

Хайлава ачасем хăйсем тĕллĕн вулани.

— Ку текста илемлĕ хайлав теме пулать-и? Унта мĕнле те пулин пулăма, туйăма сăнлани пур-и?

Ку текст илемлĕ хайлав пулаймасть, унта сăнарлăх çук. Кун пек хайлавсене ытларах хаçат-журналсенче пичетлеççĕ. Вĕсене мĕнле те пулин шухăша çирĕплетес, мĕн çинчен те пулин шухăшлаттарас тĕллевпе çыраççĕ.

**6.** Пĕтĕмлетни.

— Тăван чĕлхе халăхшăн чи пысăк пуянлăх шутланать. Мĕншĕн çапла каланă?

# 7-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А.Трофимовăн «Асатте-асаннесен çырулăхĕ» хайлавĕ; ĕç тетраденчи ĕçсем (5 с.); чăваш тĕррипе илемлетнĕ ал тутрисем; ал шăллисем е «Чăваш тĕрри» мультимеди презентацийĕ.

**Урок теми:** Ăслăх хайлавĕ; унăн тытăмĕпе чĕлхи.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— тĕрлĕ жанрлă хайлавсен хăйьевĕрлĕхне курма, вĕсене уйăрса илме малалла вĕрентесси;

— ăслăх хайлавĕсене йышăнма, ăнланма пĕлнине аталантарасси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен чăваш тĕррипе капăрлатнă ал шăллисемпе ал тутрисен стенчĕпе паллаштарать  е «Чăваш тĕрри» презентаци кăтартать.

— Эсир халĕ сăнанă япаласем мĕнлерех? Вĕсене эсир мĕнле сăмахсемпе сăнланă пулăттăр? Япаласене мĕн капăрлатать? Çакăн пек тĕрĕсене эсир тата ăçта курнă?

**2.** А. Трофимовăн «Асатте-асаннесен çырулăхĕ» хайлавĕпе паллашни. Хайлава учитель сасăпа вулать е ачасене хăйсем тĕллĕн вулама сĕнет.

— Мĕн çинчен вуларăмăр? Авалхи чăвашсем мĕнле çырулăхпа усă курнă? «Руна çырулăхĕ» тенине мĕнле ăнланатăр?

**3.** Калава иккĕмĕш хут ачасем сасăпа вулани, сӳтсе явни.

— Пирĕн мăн асатте-асаннесем усă курнă авалхи çырулăх паянхи пекех пулнă-и? Мĕнпе уйрăлса тăнă вăл? Хăвăр шухăшăра хайлавра каланипе çирĕплетĕр.

— Авалхи çырулăх паллисем ăçта сыхланса юлнă тесе шутлаççĕ?

— Паллăсем ӳкерме пĕлекен ăстасене мĕнле чĕннĕ? Халĕ ăсчах тесе камсене калаççĕ?

**4.** Пĕтĕмлетни.

— Автор хайлава мĕнле тĕллевпе çырнă? Ăна вуласан эсир мĕн çĕнни пĕлтĕр? (Кĕнекери Мария Васильевна пĕтĕмлетĕвне вулаççĕ.)

— Авалхи çырулăх çинчен мĕнлерех каласа панă: сăнарласа е ăнлантарса? Хăш-пĕр сăмахсене ятарласа ăнлантарнисем пур-и? Тупăр.

— Аваллăха тĕпчени, тахçан пулса иртнине пĕлни кирлех-и? Мĕн тума? Хăвăр каланине хайлаврипе çирĕплетĕр. (Аваллăха тĕпчени пире халĕ пуррипе, халăх ĕмĕрсем хушши упранă мула хаклама вĕрентет. Халăхăн чи пысăк мулĕ — унăн чĕлхи, йăли-йĕрки, уявĕсем.)

**5.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлани.

**6.** Киле ĕç пани.

## 8-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери П. Хусанкайăн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăвви; П. Хусанкай сăн ÿкерчĕкĕ.

**Урок теми:** Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлав.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— сăвăласа çырнă илемлĕ хайлавсене тĕрĕс туйса йышăнма, вĕсен хăйьеверлĕхне туйма-курма вĕрентесси;

— сăвăласа çырнă хайлавра кăмăл-туйăм мĕнле аталанса пынине сăнама, çавна вуланă чухне палăртма вĕрентесси.

### Урок йĕрки

**1.** Хатĕрленÿ ĕçĕ. Вĕрентекен П. Хусанкайăн сăн ÿкерчĕкне кăтартать, вăл кам пулнине, мĕнпе чапа тухнине палăртать, унăн хайлавĕсене аса илме ыйтать.

**2.** П. Хусанкайăн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăввипе паллашни. Сăвва пĕрремĕш хут вĕрентекен палăртуллă вулать.

— Сăвва мĕнле кăмăлпа итлерĕр?

— Вăл мĕнле туйăмсем çуратрĕ?

**3.** Сăвва ачасем сасăпа вулани, учитель ертсе пынипе ушкăнпа тишкерни.

— Сăвă мĕн çинчен калать? Автор чăвашсем çинчен, чăваш чĕлхи çинчен çырать теме пулать-и?

— Поэт этемлĕхе, халăхсене мĕнпе танлаштарать? Тупса вулăр.

— «Ярăнса кăна ÿсмелĕх вырăн çитĕ вăрманта» тенипе автор мĕн каласшăн? Çакна вăл мĕнле кăмăлпа калать?

— Тăван чăваш халăх пурнăçĕ нушаллă пулни çинчен сăвăç мĕнле калать? Тупса вулăр. Мĕнле кăмăлпа калать çакна автор?

— Тăван халăха, тăван чĕлхене хисепе хуман чăвашсене сăвăç мĕнле хак парать? Мĕнле кăмăлпа? Тупса вулăр.

— Чăваш халăхĕн малашлăхĕ çинчен поэт мĕн калать? Мĕнле туйăмпа?

**4.** Сăвва палăртуллă вулама хатĕрленни.

Сăввăн кашни пайне мĕнле туйăмпа вуламаллине, сасса, хусканусене мĕнле улăштармаллине сӳтсе яваççĕ.

**5.** Пĕтĕмлетни.

— Автор сăвăра мĕн каласшăн пулнă? Сăввăн тĕп шухăшĕ мĕнле? Вăл хăш йĕркесенче палăрать? Çав йĕркесене мĕншĕн икĕ хутчен каланă?

**6.** Киле ĕç пани. Сăвва палăртуллă вулама вĕренмелле.

## 9-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери тупмалли юмахсем (25—27 с.); ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (6 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Тупмалли юмахсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— тупмалли юмахсен тытăмĕ, вĕсен йĕркеленĕвĕ çинчен пĕлнине аса илесси, пуянлатасси;

— тупмалли юмахсен тупсăмне ăнланма вĕрентесси;

— тупмалли юмах хайлама вĕрентесси.

### Урок йĕрки

**1.** Тупмалли юмахсене итлени, вĕсем тăрăх икĕ ӳкерчĕке (пĕри тупмалли юмахра каланине тӳррĕн, тепри вăлтса каланине шута илсе сăнлать) тишкерни (йĕкел тата асамат кĕперĕ çинчен).

— Эсир хальччен кун пек хайлавсем илтнĕ-и? Вĕсене мĕнле хайлавсем тенĕччĕ?

— Тупмалли юмахсенче япала çинчен мĕнле каланă? (Тупмалли юмахсенче япаласен тĕп паллисем çинчен вăлтса калаççĕ.)

**2.** Тупмалли юмахсен тупсăмне шутлани, тытăмне тишкерни. (Уйăх тата кунпа çĕр ылмашăнни çинчен калакан тупмалли юмахсем.)

— Тупмалли юмахсен тупсăмĕсем мĕнле? Пĕрремĕш тупмалли юмахра уйăхăн мĕнле палли çинчен вăлтса каланă? Уйăх хăçан çурла пек? Çăмха пек хăçан? Хăçан пытанать?

— Иккĕмĕш тупмалли юмахра кунпа çĕрĕн хăш паллисем çинчен вăлтса каланă? Шурă шупăрпа тесе мĕн çинчен каланă? Мĕншĕн çапла каланă? Çĕр çинчен мĕнле каланă? Мĕншĕн? Мĕншĕн пĕри тепринчен тарать тенĕ?

**3.** Ĕç тетраднĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

**4.** Кĕнекери ытти тупмалли юмахсене вулани, тупсăмĕсене тупни, япаласен мĕнле паллисем çинчен вăлтса каланисене тишкерни.

— Тупмалли юмахсене вулăр, тупсăмĕсене суйласа илĕр. Кашнинче япалан мĕнле палли çинчен вăлтса каланă? Пĕр-икĕ тупмалли юмах тăрăх ÿкерчĕк тăвăр.

**5.** Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлени.

а) Ӳкерчĕксене сăнани, унти япаласем çинчен тупмалли юмахсем хайлани: япаласен тĕп паллисем мĕнле тесе шутлатăр? Хăш палли çинчен вăлтса калани меллĕрех?

ă) Çак япаласем çинченех халăх хайланă тупмалли юмахсене аса илсе хăйсеннипе танлаштарни.

— Мĕнле япаласемпе пулăмсем çинчен вăлтса калама, тупмалли юмах хайлама меллĕрех?

б) Пушă тăваткала тупмалли юмах хайлас текен япалана сăнлакан ÿкерчĕк туни.

**6.** Пĕтĕмлетни. Кашни япалапа пулăм çинченех тенĕ пек тупмалли юмах хайлама пулать. Яланах япалан тĕп паллисем çинчен вăлтса калаççĕ. Час-часах пĕр япалана тепринпе танлаштараççĕ. Чĕрĕ мар япалана чĕрĕ пек туса та кăтартаççĕ.

## 10-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери пулмасла халапсем (28—30 с.); ĕç тетраднĕнчи ĕçсем (7—8 с.); ÿкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Пулмасла халапсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— пулмасла халапсемпе паллаштарасси, вĕсем авал мĕнле пулса кайнине ăнлантарасси;

— пулмасла халапсен хăйьевĕрлĕхне сăнаттарасси;

— çыравçăсем те халăх сăмахлăхĕнчи пекех пулмасла халапсем хайланине ăнлантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Нарт-нарт кăвакал» сăвва итлени.

— Аса илĕр, хальччен çакăн пек хайлавсем итленĕ-и эсир?

— Ку хайлавра малтанхи уроксенче паллашнă сăвăсемпе танлаштарсан мĕнле уйрăмлăх асăрхарăр?

**2.** «Нарт-нарт кăвакал» хайлава ачасем хăйсем тĕллĕн вулани.

— Халапра сăнланă ĕçсем чăннипех пулма пултараççĕ-и? Хăшĕсем пулма пултараймаççĕ тесе шутлатăр?

— Кун пек хайлавсене пулмасла халапсем теççĕ. Шутлăр, мĕншĕн çапла калаççĕ?

**3.** Пĕтĕмлетни. Пулмасла халап-такмаксем — пулмас сăнарсемлĕ сăвăсем. Такмакла пуплешӳре юриех пулмасла шутласа кăларнă пĕр сăнар тухать, ун çумне тепри, унтан тата тепри сыпăна-сыпăна пырать.

**4.** К. Чуковскин «Савăнăç» сăввине итлени.

— Ку сăвва вырăссен паллă çыравçи Корней Чуковский хайланă.

— Çак хайлава пулмасла халап теме пулать-и? Мĕншĕн? Унта пулма пултарайман мĕнле ĕçсем çинчен каланисене астуса юлтăр?

— Чылай чухне çыравçăсем те халăх сăмахлăхĕнчи евĕр хайлаççĕ. Ку сăвва та Корней Чуковский пулмасла халап евĕр хайланă.

**5.** «Савăнăç» хайлава ачасем хăйсем тĕллĕн вулани, тишкерни.

— Хайлавра мĕнле пулма пултарайман ĕçсем çинчен шӳтлесе пулнă пек çырса кăтартнă?

— Автор çак ĕçсене мĕнле кăмăл-туйăмпа сăнлать?

— Пулмасла халапа эсир мĕнле кăмăлпа вуларăр?

**6.** Ĕç тетраденчи ĕçсене пурнăçлани.

**7.** Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлени.

Ӳкерчĕксене сăнани. Унта мĕн ӳкерни çинчен каласа пани. Ӳнерçĕ ĕçсене мĕнле кăмăл-туйăмпа сăнлать? Ăнлантарăр.

— Ӳнерçĕ шӳтлет. Сăнăр: ӳкерчĕкре пурин пит-куçĕнче те кулă вылять, куçĕсем чеен йăлтăртатаççĕ.

— Ӳкерчĕксене мĕнле ят пама пулать? Пулмасла халапĕ мĕн çинчен пулĕ?

**8.** Киле ĕç пани. Пулмасла халапсене вуламалла. Хăйсен те çавăн евĕрлĕ пулмасла халап хайлама тăрăшмалла. Ӳкерчĕксен альбомĕнчи пушă тăваткала халапа сăнлакан ӳкерчĕк ӳкермелле.

# 11-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери вĕçленмен халап (30—31 с.); пĕр-пĕр вĕççĕр хайлав (В. Канюков «Ача-пăча сăмахлăхĕ»); ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (10 с.).

**Урок теми:** Хутлам е вĕççĕр такмаксем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— хутлам е вĕççĕр такмаксене аса илтересси, вĕсен хăйьевĕрлĕхне сăнаттарасси;

— вĕççĕр е хутлам такмаксен кĕске историне пĕлтересси;

— ачасенче çакнашкал хайлас кăмăл çуратасси;

— ачасен палăртуллă вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Авалхи чăвашсем ытларах мĕн ĕçлесе пурăнни, хĕрарăмсем, арçынсем мĕн ĕçлени çинчен.

**2.** Сăмах ĕçĕ.

*Чĕнтĕр, пушăт, пурçăн, акай, апай.*

**3.** Вĕççĕр халаппа пĕрремĕш хут паллашни (вĕрентекен вулать).

— Хальччен çакнашкал халап-такмак илтнĕ-и эсир? Халапра миçен такмакласçĕ? Пĕри теприн такмакне мĕнле тăсать?

**4.** Пĕтĕмлетни. Çакнашкал халапсенче такмаклаканĕсем сăнар çумне сăнар хушса сыпăнтарса пыраççĕ. Çавăнпа вĕсене сыпăнуллă сăвăсем теççĕ.

**5.** Халапа ачасем вулани, тишкерни.

Кĕнекери ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлани.

— Мĕнле шутлатăр, такмаклакансем камсем? Вĕсем мĕнле кăмăлпа такмакласçĕ? Халап вĕçленчĕ-и? Ăна тăсма пулать-и?

Халапра сăнар çумне сăнар вĕçĕмсĕр хушса пыма пулать. Çавăнпа çакнашкал халапсене в ĕ ç ç ĕ р  х а л а п с е м те теççĕ. Такмаклакан ачасем çине-çинех шӳтлĕ, кулăшла сăнарсем кĕртсе пыма тăрăшаççĕ.

**6.** Халапа рольпе вулани.

**7.** «Шăши ăçта?» (В. Канюков. «Ача-пăча сăмахлăхĕ». 79 с.) вĕççĕр халап итлени, ăна тăсма хăтланса пăхни.

**8.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**9.** Киле ĕç пани. 1) Кĕнекери вĕççĕр халапа палăртуллă вулама вĕренмелле. 2) Хăй ăссăн те вĕççĕр хайлав калăплама тăрăшмалла.

# 12-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери сурхури юрри (31—32 с.).

**Урок темиӗ:** Йӑла юррисем.

**Урок тӗллевӗсемпе задачисем:**

— ачасене йӑла юррисем ҫинчен ӑнлантарасси: вӗсем мӗнле пулса кайнӑ, вӗсене хӑҫан юрланӑ.

— сурхури юррисемпе паллаштарасси; вӗсен тытӑмне, мӗнле йӗркеленнине сӑнаттарасси.

— ачасен вулав пахалӑхӗсене (тӗрӗслӗхне, палӑртулӑхне) аталантарасси.

## Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи калаҫу.

— Кашни халӑх мӗн авалтанпах тӗрлӗ уяв ирттерет. Чӑвашсен уявӗсем, йӑла-йӗркисем ытларах ҫӗр ӗҫӗпе, хуҫалӑх ӗҫӗсемпе ҫыхӑннӑ.

Авалхи чӑвашсем ҫут ҫанталӑка чун-чӗреллӗ пуль тенӗ. Унран тырӑ-пулӑ тухӑҫлӑ ӳстӗрччӗ, выльӑх-чӗрлӗх ӑнӑҫлӑ ӗрчетӗрччӗ тесе ыйтнӑ, ятарлӑ йӑласем ирттернӗ. Ҫак йӑласене ирттерме чи юрӑхлисем ачасем шутланнӑ. Ачасем ирттерекен йӑла-йӗрке ҫут ҫанталӑка вӗсен ӳсӗмлӗх хӑватне пама пултарать, вӗсен сӑмахӗ, юрри асамлӑрах, ҫут ҫанталӑка ҫын майлӑ ҫаврӑма пултарать тесе шутланӑ.

**2.** «Сурхури юррине» итлени.

— Ку юрра ачасем юрлаҫҫӗ. Юрӑра мӗнле уява асӑнаҫҫӗ? Камсене йыхравлаҫҫӗ?

**3.** Сурхури уявӗ ҫинчен вулани, каласа пани.

**4.** «Сурхури юррине» ачасем вулани.

— Ачасем камран мӗн ыйтса юрлаҫҫӗ? Тупса вулӑр.

**5.** Юрра палӑртуллӑ вулама вӗренни, ушкӑнсене уйӑрса калани.

а) «Сурхури сӑввисене» ачасем мӗнле каланине вуласа пӗлни.

ӑ) Палӑртуллӑ вулама вӗренни.

— «Сурхури сӑввисене» уявсенче калаҫҫӗ терӗмӗр. Уявсенче кашнин кӑмӑлӗ мӗнлерех? Сӑввисене те мӗнле кӑмӑлпа каламалла? (Кун йышши сӑвва хаваслӑн, савӑнӑҫлӑн кӑшкӑра-кӑшкӑра каламалла.)

б) «Сурхури сӑввисене» ушкӑнсемпе калани.

**6.** Пӗтӗмлетни. Сурхури юррисен тӗп шухӑшӗ — хресченсене тулӑх пурнӑҫ, карта тулли выльӑх-чӗрлӗх, сак тулли ача-пӑча сунни.

# 13-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери «Çăварни юррисем»; Хумма Ç. «Çăварни чупни» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (9 с.); ÿкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Вăйă юррисем. Çăварни.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— çăварни юррисемпе паллаштарасси, вĕсен хăйьевĕрлĕхне, тытăмне сăнаттарасси;

— çăварни йăли-йĕркипе паллаштарасси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Çулталăкри кашни вăхăтăн хăйĕн уявĕ пур. Вăхăт çуркунне енне кайсан çăварни çитет. Ачапăчашăн çĕнĕ савăнăç килет.

**2.** «Çăварни юррисене» итлени.

— Кашни сăвви-юррине, сирĕн шутпа, камсем каланă?

**3.** Çăварни уявĕн йăли-йĕрки çинчен вулани (32 с.)

**4.** Çăварни юррисене ачасем вулани, тишкерни.

— Юрăсенче уявăн мĕнле йăли-йĕрки çинчен каланă?

— Ачасем уява мĕнле хутшăнаççĕ? (Кĕнекери материала вулани.)

**5.** Сăвăсене палăртуллă вулама вĕренни.

— Сăвăсене мĕнле кăмăлпа, мĕнле сасăпа вуламалла?

**6.** Пĕтĕмлетни. Çăварни — катаччи чупса, икерчĕ çисе савăнмалли уяв. Юррисем ку уявăн — катаччи çинчен, икерчĕ çинчен. Хаваслă, çĕкленÿллĕ такмаксем.

**7.** Хумма Ç. «Çăварни чупни» калавĕпе паллашни, тишкерни.

1) Калава ачасем вулани.

— Автор çăварнин хăш самантне сăнлать?

— Çанталăк мĕнле? *(Ăшă, хĕвеллĕ.)* Вăл çынсен кăмăлĕпе пĕр килет-и?

— Катаччи куракансене мĕнле сăнланă? Вĕсен савăнăçне мĕнле сăнарланă? Тупса вулăр.

— Çăварни чупакансене мĕнле сăнланă? Тупса вулăр.

— Мĕншĕн «лашисем мăнкăмăлланнă пек пулса пуçĕсене сулла-сулла пыраççĕ» тенĕ?

**8.** Пĕтĕмлетни. Каласа параканĕ сирĕн шутпа ача-и е çитĕннĕ çын-и? Вăл уяв çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать?

— Çыравçă уява, çынсене, çанталăка çĕкленÿллĕ кăмăлпа сăнарлать. Пире те, вулакансене, хăйпе пĕрле хаваслантарасшăн.

**9.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**10.** Киле ĕç пани. 1) Çăварни юррисене вуламалла. 2) Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене пурнăçламалла.

## 14-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери пуплешӳ сăввисем; Н. Ытарайăн «Чĕрĕп» сăвви.

**Урок теми:** Пуплешӳ сăввисем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— пуплешӳллĕ сăвă-юрăсемпе паллаштарасси, вĕсен тематикипе хăйьевĕрлĕхне палăртасси, тытăмне сăнаттарасси;

— çыравçăсем те пуплешӳ сăвви-юрри евĕрлĕ хайлавсем çырнине пĕлтерессси, вĕсене халăх сăмахлăх хайлавĕсене танлаштарса сăнаттарасси;

— ачасене хăйсене те пуплешӳ сăвви-юрри евĕрлĕ хайлавсем калăплама хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Хатĕрленӳ ĕçĕ. Ансат аса илӳ евĕр вăйă-тĕрĕслев («Кам пĕлет?») ирттерни. Вĕрентекен ачасене халăх сăмахлăхĕн хăш-пĕр тĕслĕхĕсене (чĕнӳ-йыхрав юрри, пулмасла халап, вăйă юрри) итлеттерет. Ачасен вĕсен жанрне палăртмалла.

**2.** «Аçта каян, куками?» пуплешӳ сăввипе паллаштарни. (Ачасем вĕрентекен вуланине итлеççĕ.)

— Камсем калаççĕ? Мăнукĕ мĕн ыйтать? Кукамăшĕ мĕнле хуравласа пырать?

Пĕтĕмлетӳ. Ку сăвăсене пуплешӳллĕ сăвăсем теççĕ. Вĕсене иккĕн, пĕр-пĕринпе ылмашса калаççĕ. Пĕри — ыйтаканни, тепри — хуравлаканни. Иккĕмĕшĕ, ыйтусене хăвăрттăн хуравлама тăрăшса, тĕрлĕ сăнар шутласа кăларать.

**3.** «Пук-пук, пукане, пукане!» сăвва вулани. Малтан ачасем хăйсем тĕллĕн вулаççĕ, унтан пĕрле вуласа тишкереççĕ.

— Камсем пуплешеççĕ? Сăнăр, калаçу мĕнле йĕркеленсе аталанать, сăвă епле сыпăнса пырать? Малтан мĕн çинчен, унтан вара мĕн çинчен ыйтаççĕ? Ыйтăвĕсемпе хуравĕсем татăклă-и е вĕсене сыпăнтарса пынă-и?

Пĕтĕмлетӳ. Кунашкал сăвăсем сыпăнуллă юрă мелĕпе йĕркеленеççĕ. Сăнар çумне сăнар хушăнса пырать. Вĕсемпе чи кĕçĕн çулхисене йăпатнă чухне усă кураççĕ,

аслăраххисем хăйсем те калаçаççĕ: е пук-пуканепе, е шăлтăр-шăлтăр урапапа, е тата кушак туспа.

**4.** Сăвва рольпе вуласа выляни.

**5.** Н. Ытарайăн «Чĕрĕп» сăввипе паллаштарни. (Пуплешӳ сăввисене çыравçăсем те хайланине калани.)

а) Сăвва итлени.

— Сăвăра мĕн çинчен каланă? Çыравçă чĕрĕп çинчен мĕнле кăмăлпа калать?

ă) Сăвва сасăпа вуласа тишкерни.

— Ку сăвва пуплешӳ сăвви евĕрлĕ теме пулать-и? Ăнлантарăр.

— Камсем пуплеççĕ? Мĕн çинчен? Пĕри тепринчен мĕн ыйтса пĕлет?

— Çак сăвва сыпăнуллă сăвă теме пулать-и? Ыйтăвĕсемпе хуравĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса пынă-и?

б) Сăвва рольпе вуласа выляни.

в) Кĕнекери ӳкерчĕке сăнаса ачасене хăйсене ӳкерчĕк тутарни.

**6.** Пĕтĕмлетни.

## 15-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери «Кĕт-кĕтесле» сăвă; пĕр-икĕ ача-пăча вăййи (В. Канюков «Ача-пăча сăмахлăхĕ» 143—151 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Чăвашсен ача-пăча вăййисем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— чăвашсен ача-пăча вăййисемпе паллаштарасси, хăйсем пĕлекен вăййăсене аса илтересси, ачасем мĕнле вылянине сăнаттарасси;

— шутлав сăввисене аса илесси, ачасене хăйсене те шутлав сăввисем ăслама хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу.

— Эсир выляма юрататăр-и? Час-часах вылятăр-и? Мĕнле вăййăсем вылятăр?

Ача-пăча вăййисем сĕм авал ĕçпе çыхăннă кулленхи йăласенчен пуçланса кайнă. Авалхи этем çут çанталăк вăйĕсемпе кĕрешме тесе, ĕçе-хĕле çăмăллатма тесе, тĕрлĕрен ăрăмлă йăласем шухăшласа кăларнă. Асамлă

сăмахсем каласа, кĕвĕлесе, ташласа тĕрлĕ хускану туса йăласем ирттернĕ. Каярах нумай йăла пăрахăçа тухнă, вăййисем вара юлнă. Вăхăт иртнĕçемĕн кивĕ вăйăсем улшăнса манăçа тухса пынă, çĕннисем çуралнă. Çапах та чăваш ачисен кашни вăййи хресчен пурнăçĕпе, унăн куллен-хи йăли-йĕркипе çыхăннă.

**2.** «Кĕт-кĕтесле» вăйăпа паллашни.

а) Вăййа ачасем хăйсем тĕллĕн вулаççĕ.

ă) Кĕтес улăштарма хушмалли такмака пăхмасăр калама вĕренни.

б) Хăйсем пĕлекен вăйăсене аса илни.

**3.** В. Канюковăн «Ача-пăча сăмахлăхĕ» кĕнекинчи пĕрикĕ вăйăпа паллашни.

**4.** Вăйă умĕн калакан шутлав сăввисене аса илни.

— Халăх вăййисем çирĕп йĕркеллĕ. Тĕрĕслĕх тытса пымалли мелсем те пулнă. Пĕри — шăпа яни. Шăпа ямалли мелĕсем те тĕрлĕ. Эсир мĕнлисене пĕлетĕр? (Укçа пăрахмалла, шăрпăк е улăм пĕрчи туртмалла, туя ывăтмалла т.ыт.)

— Чи анлă сарăлнă мел — сăвă-сăмах каласа шăпа ярасси. Вĕсене шăпа е шутлав сăввисем теççĕ.

— 1-мĕш класра эсир мĕнле шăпа-шутлав сăввисемпе паллашнăччĕ? Хăвăр пĕлнисене аса илĕр.

**5.** Ачасене кăмăла кайнă вăййа выляса кăтартни.

**6.** Пĕтĕмлетни.

**7.** Киле ĕç пани. Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене пурнăçламалла.

## 16-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери «Асамат кĕперĕ» халап; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (10—11 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Улăп халапĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— улăп халапĕсем тăван халăхăн аваллăхĕ çинчен ытларах пĕлме пулăшнине кăтартасси;

— халап жанрĕпе малалла паллаштарасси; хальччен паллашнă улăп халапĕсене аса илесси;

— халап чĕлхин хăйьевĕрлĕхне сăнаттарасси;

— тăван халăха хисеплеме хăнăхтарасси.

## Урок йĕрки

**1.** Хатĕрленӳ ĕçĕ. «Улăпсем» халапа (38—39 с.) учитель каласа панине итлени.

— Аса илтĕр-и, Улăпсем камсем вĕсем? Пĕрремĕш класра улăпсем çинчен мĕн вуласа пĕлнĕччĕ?

**2.** Улăпсен ӳкерчĕкне сăмахпа калăплани.

— Улăпсем мĕнлескерсем вĕсем: кӳлепипе, сăн-сăпачĕпе, кăмăлĕпе? Сăнласа парăр.

**3.** «Асамат кĕперĕ» халапа итлени.

— Халап кам çинчен?

— Улăп-паттăр мĕн ĕçлесе пурăннă?

**4.** Халапа пайăн-пайăн вуласа тишкерни.

— Улăпăн пурнăçĕ мĕнле пулнă?

— Унăн пурнăçĕ лăпкă, тулăх пулнине халапра мĕнле кăтартнă? (Авал япаласен шутне пӳрне çинче те, патак çине карт-йĕр туртса та палăртнă.)

— Пĕррехинче Улăп мĕнле инкеке лекнĕ? Çав инкеке халапра мĕнле сăнланă? Тупса вулăр. Эсир çав йĕркесене мĕнле туйăмпа вуларăр? (Тимукпа Верук хăйсен туйăмĕсене мĕнле палăртнипе паллашаççĕ.)

— Улăпа кам мĕнле пулăшать?

— Инкек нумая тăсăлнине, выльăхсене çăласси те час пулманнине халапра мĕнле палăртнă?

**5.** Халапри сăнарсене сăнлани.

— Халапра Улăпа тата камсене асăннă? Вĕсем — халапри сăнарсем.

— Тĕп сăнарĕ хăшĕ? Улăпа (унăн хăватне) сăнлакан вырăнсене тупса вулăр. Хăтланăшĕсене кура ун çинчен мĕн калана пулăттăр?

— Асамат тимĕрçĕ çинчен халапра мĕн каланă? Тупса вулăр. Эсир ăна мĕнле сăнлана пулăттăр?

— Улăп амăшĕ çинчен мĕн вуларăр?

**6.** Пĕтĕмлетни.

— Халап ячĕ мĕнле? Ăна мĕншĕн çапла ят панă-ши? Асамат кĕперĕ мĕн вăл? (Асамлă кĕпер. Вăл — инкекрен çăлăнмалли çул.)

— Халапра сăнланă ĕçсем ăçта пулса иртнĕ тенĕ? Эсир хальччен ку вырăнсем çинчен илтнĕ-и?

— Арамаçи тăвĕсем кăнтăрта вырнаçнă. Пирĕн мăн асаттесем Вăтам Атăл çине çав тăрăхсенчен куçса килнĕ. Чăвашсем — Улăп йăхĕнчен.

**7.** Ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӗҫсене туни. Урокра ӳкерчӗксене сӑнаҫҫӗ, тишкереҫҫӗ, хӑйсен кӑмӑл-туйӑмне палӑртаҫҫӗ.

Сӑрласа илемлетесси киле панӑ ӗҫ пулма пултарать.

**8.** Ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсене туни. (Пӗрисене урокра, теприсене килте пурнӑҫлама сӗнме пулать.)

## 17-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери «Ҫӑткӑн упа ҫурисем» юмах; ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсем (14 с.).

**Урок теми:** Чӗр чунсем ҫинчен калакан юмахсем.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— юмах жанрӗ ҫинчен пӗлнине аса илсе ҫирӗплетесси;

— юмахсем тӗрлӗрен пулнине пӗлтересси, чӗр чунсем ҫинчен калакан юмахсемпе паллаштарасси, унти сӑнарсене сӑнаттарасси;

— юмах чӗлхине сӑнаттарасси, ун илемӗпе киленме хӑнӑхтарасси;

— хайлаври ӗҫсен аталанӑвне сӑнама, хайлав пайӗсене палӑртма вӗрентесси.

### Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи калаҫу. Малтан ачасем пӗрремӗш класра вуланӑ юмахсене аса илеҫҫӗ. Унтан «Хӑшӗ мӗнле юмахран» вӑйӑ выляӑ май унти сӑнарсене аса илеҫҫӗ.

**2.** «Ҫӑткӑн упа ҫурисем» юмаха пӗтӗмӗшле итлени.

— Ку — венгр халӑх юмахӗ. Юмах мӗн-мӗн ҫинчен? Унта мӗнле чӗр чунсене асӑннӑ?

— Кунта тӗп сӑнарсем — чӗр чунсем. Ҫакӑн пек юмахсене чӗр чунсем ҫинчен калакан юмахсем теҫҫӗ. Чӗр чунсем юмахра ҫынсем пек калаҫаҫҫӗ, хӑтланаҫҫӗ.

**3.** Юмаха ачасем пайӑн-пайӑн вулани, ушкӑнпа тишкерни.

— Сӑнӑр: юмах миҫе пайран тӑрать?

— Упа ҫурисем ӑҫта тухса кайнӑ? Амӑшӗ вӗсене мӗн сунса ӑсатать?

— Вӗсем, выҫса ҫитнӗскерсем, мӗн тупнӑ? Сыр тупни вӗсене мӗнле нушана кӗртсе ӳкерет?

— Тилӗ сыра мӗнлерех пайлать?

— Юмах мӗнле вӗҫленет?

**4.** Юмахри сӑнарсене тишкерни.

— Тӗп сӑнарсем хӑшӗсем? Юмахра вӗсене мӗнле хак панӑ? Тупса вулӑр. Упа ҫурисем мӗншӗн сыр татӑкне нимпле те пайлаймаҫҫӗ? Тилӗ сыр пайланӑ чухне вӗсем хӑйсене мӗнле тытаҫҫӗ? Вӗсем мӗн пирки шар кураҫҫӗ?

— Юмахра тилле мӗнле тенӗ? Тупса вулӑр. Вӑл сыр татӑкне пайланӑ чухне хӑйне мӗнле тытать? Упа ҫурисемпе мӗнлерех калаҫать?

**5.** Пӗтӗмлетни.

— Юмах ятне «Ҫӑткӑн упа ҫурисем» тенӗ. Вӗсем чӑннипех те ҫӑткӑн-ши?

— Юмах мӗн ҫинчен? Унӑн тӗп шухӑшӗ мӗнле?

**6.** Сӑнарсене сӑмах вӗҫҫӗн калӑплани.

**7.** Ӗҫ тетрадӗнчи 1—4-мӗш ӗҫсене пурнӑҫлани.

**8.** Киле ӗҫ пани. Ӗҫ тетрадӗнчи 5, 6-мӗш ӗҫсене тумалла.

## 18-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери «Шиклӗ шӑши» юмах; ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӗҫсем.

**Урок теми:** Чӗр чунсем ҫинчен калакан автор юмахӗсем.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— ҫыравҫӑсем те чӗр чунсем ҫинчен калакан юмахсене хайланине ӑнлантарасси, ҫавнашкал юмах тӗслӗхне тишкересси;

— юмахри сӑнарсене палӑртма, вӗсене хӑтланӑшӗсене кура пахалама вӗрентесси;

— хайлав чӗлхине сӑнама, сӑнарлӑх хатӗрӗсене тупма вӗрентесси.

### Урок йӗрки

**1.** Хатӗрленӳ ӗҫӗ. Вӗрентекен ҫыравҫӑсем тӗрлӗ юмах хайлани ҫинчен асӑнать. Ачасем хӑйсем хӑш ҫыравҫӑн мӗнле юмахне астуса юлнине ыйтса пӗлет. Унтан тупмалли юмах тупсӑмне тупма сӗнет.

**2.** «Шиклӗ шӑши» юмаха пӗтӗмӗшле итлени. Вӗрентекен вуласа парать.

— Юмахра кам е мӗн ҫинчен каланӑ? Ку мӗнле юмах? Юмаха итленӗҫемӗн сирӗн кӑмӑл мӗнле улшӑнса пычӗ?

**3.** Ачасем юмаха пайăн-пайăн вулани, ушкăнпа тишкерни.

— Юмахăн пĕрремĕш пайĕнче мĕн çинчен каланă? Чăх чĕпписем шăшие мĕнле йышăннă? Тупса вулăр. Шăшийĕ вĕсене мĕнле кӳрентернĕ?

— Юмахра Шăши чĕпĕ ури çине мĕнлерех пуснă тата пусасшăн тенĕ? Тупса вулăр. Автор çак сăмахсемпе мĕнле тамашана кăтартать?

— Мĕнле шутлатăр: Шăши Арăслан ури çине юриех е асăрхамасăр пуснă? Хăвăр каланине юмахри йĕркесемпе çирĕплетĕр.

— Юмахăн иккĕмĕш пайĕнче мĕн çинчен каланă? Шăши мĕншĕн каялла таврăнать? Вăл Арăслан урине хытах ыраттарнă-ши? Юмах мĕнле вĕçленĕт?

**4.** Юмахри сăнарсене тишкерни.

— Юмахри сăнарсене асăнса тухăр. Хăшĕ тĕп сăнар?

— Шăши мĕнлескер? Унăн кăмăлĕ хăш самантра ытларах палăрать? Вăл Чĕпĕпе мĕнлерех калаçать? Ăна мĕнле чĕнет? Тупса вулăр. Арăсланпа епле калаçать, ăна мĕнле чĕнет? Мĕншĕн? Юмахри асăннă вырăнсене мĕнле туйăмпа вуларăр?

**5.** Юмахри сăнарсене сăмахпа каласа калăплани.

— Ӳнерçĕ пулнă пулсан эсир Шăшипе Арăслана мĕнлерех ӳкернĕ пулăттăр, каласа парăр.

**6.** Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене пурнăçлани.

**7.** Пĕтĕмлетни.

— Çыравçă юмаха «Шиклĕ шăши» ят панă. Мĕншĕн-ши?

**8.** Киле ĕç пани. «Шиклĕ шăши» юмах содержанине каласа пама хатĕрленмелле.

## 19-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери «Кинеми, мăнукĕ тата чăпар чăх» юмах; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (12—13 с.).

**Урок теми:** Йăла юмахĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— йăла юмахĕсемпе паллаштарасси, вĕсен хăйьевĕрлĕхне сăнаттарасси;

— япаласемпе пулăмсене танлаштарса сăнарласа сăнламалли мелсене сăнаттарасси;

— туслăхпа тăванлăх туйăмĕсене аталантарасси.

## Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи каласу. Учитель юмахсене тӗрлӗ ушкӑнсене уйӑрни ҫинчен пӗтӗмӗшле каласа парать.

**2.** «Кинеми, мӑнукӗ тата чӑпар чӑх» юмаха итлени. (Вӗрентекен вуласа-каласа парать.)

— Юмахра кам тата мӗн ҫинчен каланӑ? Кунта сӑнланине кулленхи ӗҫсем тени тӗрӗсех-ши? Вӗсем ҫинчен мӗнле каласа панӑ?

— Ку юмахра кулленхи ӗҫсем ҫинчен юптарса, шӳтлесе каласа панӑ. Ку юмах — йӑла юмахӗ.

**3.** Ачасем юмаха пайӑн-пайӑн вуласа ушкӑнпа тишкерни.

— Кинеми, мӑнукӗ тата чӑпар чӑх мӗнле пурӑннӑ? Вӗсем туслӑ пурӑнни ҫинчен мӗнле каланӑ?

— Пӗррехинче вӗсем ӑҫта каяҫҫӗ?

— Вӗсемпе мӗнле пӑтӑрмах пулса иртет?

**4.** Юмахӑн пуплев уйрӑмлӑхӗсене, япаласемпе пулӑмсене сӑнламалли мелсене сӑнани.

— Шыва кайнӑ чухне кашни витри мӗнле сасӑ кӑларнӑ, шывӗ мӗнлерех сасӑпа тумланӑ?

— Шывран таврӑннӑ чухне вара мӗн пулнӑ?

— Мӗншӗн кашни витрипе кӗвенти тӗрлӗрен сасӑ кӑларҫҫӗ, шывӗ те тӗрлӗ сасӑпа тумлать?

— Кашни сӑнар епле утнипе ӳкнине мӗнле сӑмахсемпе ҫырса кӑтартнӑ?

Пӗтӗмлетӳ. Кашни япали хуҫине кура тӗрлӗ. Кашни япалин сассине тӗрлӗрен евӗрлесе кӑтартнӑ. Утса пырать — йӑпӑртатса пырать — вӗтӗртетсе пырать; йӑванса кайрӗ — тирӗнчӗ — лаплатрӗ. Кусем — ҫывӑх пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем. Вӗсем кашни сӑнар пӗр ӗҫех тӗрлӗрен тунине витӗмлӗрех, сӑнарлӑрах кӑтартма пулӑшаҫҫӗ.

**5.** Рольпе вулани. Малтан хӑш роле мӗнле сасӑпа вуламаллине сӳтсе явмалла.

**6.** Кӗнекери ӳкерчӗксене сӑнаса сӑнарсене сӑнлани.

**7.** Киле ӗҫ пани. Юмаха тепӗр хут вуласа ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсене пурнӑҫламалла.

## 20-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери А. Толстойӑн «Пуртӑ» юмахӗ (69—70 с.); ӗҫ тетраденчи ӗҫсем (18 с.); ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӗҫсем; А. Толстой сӑн ӳкерчӗкӗ.

**Урок теми:** Автор ҫырнӑ йӑла юмахӗ.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— йӑла юмахӗсемпе малалла паллаштарасси, вӗсене ӑнланса йышӑнма вӗрентесси, сӑнаса тишкересси;

— ҫыравҫӑсем те йӑла юмахӗсем хайланине кӑтартасси;

— илемлӗ хайлаври сӑнарлӑх мелӗсене сӑнаттарасси.

### Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи калаҫу. Вӗрентекен А.Толстой сӑн ӳкерчӗкне кӑтартать, вӑл вырӑссен паллӑ ҫыравҫи пулнине, ачасем валли чылай калав, юмах ҫырнине пӗлтерет. (Кӗске презентаци хатӗрлеме пулать.)

**2.** А. Толстойӑн «Пуртӑ» юмахне итлени. (Вӗрентекен вулать.)

— Ку юмах малтанхи уроксенче паллашнӑ хӑш юмах евӗрлӗ? Ку юмахра кулленхи ӗҫсем ҫинчен мӗнле юптарса калanӑ: шӳтлесе е питлесе?

**3.** Юмаха ачасем хӑйсем тӗллӗн вуланӑ хыҫҫӑн тишкерни.

— Юмах мӗнле пуҫланать?

— Пуртӑ вутта кайсан мӗн хӑтланать?

— Ӑна ҫамрӑк хурӑншӑн мӗн тавӑрать?

— Юмах мӗнпе вӗҫленет?

**4.** Юмахри сӑнарсене палӑртни, тишкерни. (Тишкерӗве кӗнекери ыйтусем тӑрӑх йӗркелеме пулать.)

**5.** Ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӗҫсене пурнӑҫлани.

— Ӳкерчӗкре юмахри хӑш саманта сӑнланӑ? Эсир ун ҫинчен мӗнле кӑмӑл-туйӑмпа итлерӗр, вуларӑр? Ӳкерчӗкре кам-кам сӑнарланнӑ? Эсир хӑвӑр ӳнерҫӗ пулнӑ пулсан кашнинех мӗнлерех ӳкернӗ пулӑттӑр: ӳкерчӗкри пекех е урӑхларах? Каласа парӑр.

— Ҫаврашкасенче мӗн-мӗн ӳкернӗ? Вӗсем мӗнле сӑнарсем? Тӑваткалсене мӗн-мӗн ӳкермелле? (Ӳкерессе тата сӑрласса киле ӗҫ пама пулать.)

**6.** Юмаха рольпе вулани.

Малтан хӑш сӑнарӗ мӗнлерех пулнине аса илеҫҫӗ, кашнин сӑмахӗсене мӗнлерех вуламаллине сӳтсе яваҫҫӗ.

**7.** Пӗтӗмлетни.

— Ку юмах мӗн ҫинчен?

**8.** Киле ӗҫ пани. Юмаха харпӑр хӑй тӗллӗн вуласа ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсене пурнӑҫламалла, ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӳкерчӗке сӑрламалла.

## 21-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери «Сарӑ аист» асамлӑ юмах; ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсем (16 с.); ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӗҫсем.

**Урок теми:** Асамлӑ юмах.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— асамлӑ юмахпа паллаштарасси, ӑна ӑнланса йышӑнма вӗрентесси;

— асамлӑ юмах жанрӗн хӑйьевӗрлӗхне палӑртасси;

— хайлавӑн тӗп шухӑшне ӑнланма, палӑртма малалла вӗрентсе пырасси.

### Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи калаҫу. Ун вырӑнне чӑваш халӑх юмахӗсенче тӗл пулакан ятарлӑ кӳртӗм ҫинчен каласа пама пулать. Вӑл ачасене асамлӑ юмахри сӑнарсемпе пулӑмсене ӑса хывмашкӑн хатӗрлеме пулӑшӗ. Тӗслӗхрен: «Ҫитмӗл те ҫичӗ тинӗс леш енче пур пӗр утрав. Ҫав утрав ҫинче пур пӗр ылтӑн пӳрт. Ҫав пӳртре пурӑнать пӗр старик: пичӗ пӑхӑр, сухалӗ чике тӑршшӗ, мӑйӑхӗ мӑк тӑршшӗ, чӗлхи — чӗр кӗмӗл. Ҫав старик ярса парать пире юмахсем. Ларӑр, итлӗр ҫав юмахсене» (В. Канюков «Ача-пӑча сӑмахлӑхӗ»).

**2.** «Сарӑ аист» юмаха ачасене пӗрремӗш хут вуласа пани.

— Юмахра кам-кам ҫинчен каланӑ? Асӑнса тухма тӑрӑшӑр. Кам вӑл студент? Юмахра вӑл мӗн ятлӑ? Унӑн ячӗ мӗншӗн эпир хӑнӑхман ят?

Пӗтӗмлетӳ. Ку китай халӑх юмахӗ. Кашни халӑх хӑйӗн юмах-халапӗсенче хӑйӗн йӑли-йӗркине сӑнлать. Ячӗсене те хӑйсенни пекех парать.

**3.** Юмаха ачасем пайӑн-пайӑн вуласа ушкӑнпа тишкерни.

— Ми ятлӑ студента хӗрхенсе чайнӑй хуҫи мӗн тӑвать? Ми хуҫана мӗнлерех тав тӑвать? Вӑл мӗн ҫинчен асӑрхат-

тарать? Тупса вулăр. Чайнăй хуçи мĕн пирки сăмахне тытайман? Тупса вулăр. Аист ĕç çыннисем умĕнче мĕнле ташланă? Пуçлăх умĕнче вара? Тупса вулăр. Мĕнле шутлатăр: мĕншĕн? Юмах мĕнпе вĕçленет? Ми мĕншĕн нимĕн чĕнмесĕр аиста илсе тухса каять?

**4.** Юмаха ачасем хăйсем тĕллĕн вулани, унăн жанрне палăртни.

— Юмахра мĕнле асамлă ĕçсем пулса иртеççĕ? Мĕнле асамлă япаласем çинчен асăннă? Вĕсем тĕп сăнара мĕнле пулăшаççĕ?

Пĕтĕмлетӳ. Юмахра асамлă ĕçсем пулса иртеççĕ пулсан, асамлă япаласемпе усă кураççĕ пулсан ăна асамлă юмах теççĕ. «Сарă аист» — асамлă юмах.

**5.** Ĕç тетрадĕнчи 1—3-мĕш ĕçсене туни.

**6.** Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлени. (Ачасем ӳкерчĕке сăнаççĕ, юмахри хăш самантна сăнланине аса илеççĕ, хăйсем çав самант çинчен мĕнле кăмăлпа итленине палăртаççĕ, пушă тăваткала мĕн ӳкермеллине сӳтсе яваççĕ.)

**7.** Киле ĕç пани. «Сарă аист» юмаха харпăр хăй тĕллĕн вуласа ĕç тетрадĕнчи 4—5 ĕçсене пурнăçламалла, ӳкерчĕксен альбомĕнчи ӳкерчĕке сăрăсемпе илемлетмелле, асамлă япаласене ӳкермелле.

## 22-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери «Ухмах Иван» юмах.
**Урок теми:** Асамлă юмах паллисем.
**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— асамлă юмах паллисемпе паллаштарасси;

— хайлава тимлĕ вулама, мĕн вуланине асра хăварма, содержанине каласа пама хăнăхтарасси;

— сăпайлăхпа сапăрлăх туйăмĕсене аталантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Юмахсен хăйне майлă паллисем пур. Сăмахран, унта пулма пултарайман ĕçсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Халĕ «Ухмах Иван» юмаха вуласа тухар. (Учитель вулама пуçлать, кайран ачасем вулаççĕ.)

**2.** Содержанипе ĕçлени. (Тимлĕ вулавçă-и эпир?)

— Карчăкпа старикĕн миçе ывăл пулнă? *(Виççĕ.)*

— Пĕррехинче вĕсем ăçта кайма тухаççĕ? *(Пĕр пуян патне ĕçлеме.)*

— Çул çинче мĕн кураççĕ? *(Вăрăм туя. Ун тавра пыл хурчĕсем вĕçеççĕ.)*

— Кăткăсемпе мĕнле калаçу пулса иртет? *(Вĕсем йăва туса пама ыйтаççĕ. Тăвансем пирĕн вăхăт çук теççĕ.)*

— Пуян патĕнче çамрăксем мĕн тума кĕрĕшеççĕ? *(Çурт тума).*

— Иван мĕн тума кĕрĕшет? *(Лаша пăхма, тислĕк тасатма.)*

— Çурта Ивана мĕнсем туса параççĕ? *(Пыл хурчĕсем.)*

— Мĕнсем авăн çапса параççĕ? *(Кăткăсем.)*

**3.** Кĕнекери ыйтусемпе ĕçлени.

**4.** Пĕтĕмлетни. Çынсем мĕн ĕмĕртен ырри усаллине çĕнтерессе шанса пурăннă. Пурнăçра тĕрĕслĕх çĕнтерессе ĕненнĕ. Асамлă юмахсенче ырри усаллине çĕнтерет, япăххи юмах вĕçĕнче хур курать. Çакă пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма хавхалантарать. Эпир ун пек юмахсене юрататпăр. Халĕ вуласа тухнă юмахра та Ивана ухмах тесе хисепе хумаççĕ, ăна хур кăтартма тăрăшаççĕ. Анчах юлашкинчен Иванăн пурнăçĕ ăнса каять. Эпируншăн чунтан савăнатпăр.

— Юмахсенче час-часах ухмах Ивана асăрхатпăр. Аслă пиччĕшĕсем сĕмсĕр, кĕçĕннине хĕсĕрлеме пăхаççĕ. Ку вара кăмăлĕпе ырă, чунĕпе таса. Ырă чун-чĕреллĕ çыншăн лайăх пурнăç пуласса юмахçăсем питĕ шаннă. Пирĕн те шанас килет.

— Асăрхарăр-и: юмахсенче «тет» сăмахпа çине-çинех усă кураççĕ. Ку сăмахпа юмахçă хăй каласа кăтартакан ĕçсене такамран илтнине палăртать. Çапла майпа ĕçсем пулмасан та пултарнине, вĕсене ĕненмесен те юранине чухлатпăр. Пĕр сăмахпа каласан, юмах вăл юмах.

— Час-часах юмахсем пĕр карчăкпа старик пурăнни çинчен каланипе пуçланаççĕ. Ку юмах çапла вĕçленет: «Ун утарĕнче эпĕ те пултăм. Пыл çие-çие савăнтăм». Ытти юмахсем çапларах вĕçленеççĕ: «Çапла улталанă чухăн Тимуш пуянсене»; «Çавăнтан вара тарçи пуйса кайнă, хуçи пĕтнĕ тет»; «Юмах юплĕ, аври кукăр»; «Чăн сăмахран вăйли ним те çук» т.ыт.те.

**5.** Киле ĕç пани. Юмах содержанине туллин каласа пама хатĕрленмелле.

## 23-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Карайăн «Çырлана кайсан» сăвăлла юмахĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (17 с.); ÿкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем; Н. Карай сăн ÿкерчĕкĕ.

**Урок теми:** Сăвăласа çырнă юмахсем. Автор юмахĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— Н. Карай çыравçăпа, унăн «Çырлана кайсан» хайлавĕпе паллаштарасси;

— юмах жанрĕпе çырнă автор хайлавĕсене сăнасси, вĕсен хăйне евĕрлĕх уйрăмлăхĕсене палăртасси;

— хайлаври сăнарлăх мелĕсене тупса сăнасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Пĕрремĕш класрах илемлĕ хайлавсене икĕ мелпе çырма май пулнине асăннăччĕ: прозăпа тата сăвăласа. Эпир малтанхи уроксенче мĕнле мелпе хайланă юмахсемпе паллашрăмăр? Паян вара сăвăласа çырнă юмах вулăпăр. Ку юмаха Н. Карай хайланă. (Вĕрентекен ун сăн ÿкерчĕкне кăтартать, çыравçă çинчен кĕскен каласа парать.)

**2.** Н. Карайăн «Çырлана кайсан» хайлавне итлени. Хайлава юмах терĕмĕр. Калăр: кунта çырса кăтартнă ĕçсем шăпах çакăн пек пулма пултарнă-и?

**3.** Юмаха пайăн-пайăн вулани, тишкерни.

— Сантăр уçланкăра мĕншĕн макăрать? Вăл хытă хăранине мĕнле палăртнă? Тупса вулăр.

— Сантăра кам пулăшать? Мĕнле? Йĕркипе каласа парăр.

— Юмах мĕнпе вĕçленет?

**4.** Сăнарсене палăртса тишкерни.

— Юмахри тĕп сăнарсене калăр.

— Сантăр миçесенчи ача? Вăл мĕнлерехскер? Çакă хайлаври хăш йĕркесенчен курăнать? Чылай чухне тилле юмахсенче мĕнлерех кăтартаççĕ? Ку юмахра тилĕ мĕнлерех? Çакна хайлаври хăш йĕркесем çирĕплетеççĕ? Автор юмахри ĕçсем çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать?

**5.** Юмахри хăш-пĕр вырăнсене рольпе вулани.

— Юмахра тилĕ сăмахĕсене тупăр. Тилĕ ачапа мĕнле кăмăлпа, мĕнле сасăпа калаçать? Ун сăмахĕсене палăртуллă вулăр.

**6.** Ÿкерчĕксем тăрăх юмаха пайсене уйăрни, юмахри ĕçсене йĕркипе аса илсе калани.

**7.** Ӳкерчӗксен альбомӗпе ӗҫлени.

Ачасем юмахри ӗҫсем ҫинчен автор мӗнле кӑмӑл-туйӑмпа каланине, хӑйсем мӗнле кӑмӑл-туйӑмпа итлени-вуланине палӑртаҫҫӗ. Ӳкерчӗксене сӑнаҫҫӗ, унта юмахӑн хӑш сыпӑкне сӑнланине, хӑшне сиктерсе хӑварнине, юмаха асра тытса пушӑ вырӑнта хӑш саманта сӑнлакан ӳкерчӗк пулмаллине сӳтсе яваҫҫӗ. Ӳкересси, сӑрлассси киле панӑ ӗҫ пулма пултарать.

**8.** Пӗтӗмлетни.

— Юмахра мӗн ҫинчен каланӑ?

**9.** Киле ӗҫ пани. Юмаха вуламалла. Ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсене пурнӑҫламалла. Ӗҫсене мӗнле пурнӑҫламаллине сӳтсе явмалла, словарь ӗҫӗ ирттермелле.

## 24-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери В. Ямашӑн «Кӗр ирӗ» сӑвви; М. Трубинан «Кӗр ҫитрӗ» калавӗ; ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсем (19 с.).

**Урок теми:** Хайлав теми, тӗп шухӑшӗ. Сӑвӑлла тата прозӑлла хайлавсенчи сӑнарлӑх мелӗсем.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— сӑвӑлла тата прозӑлла илемлӗ хайлавсен хӑйевӗрлӗхне сӑнасси;

— илемлӗ хайлавӑн теми, тӗп шухӑшӗ ӑнлавсене ӑнлантарасси;

— сӑвӑлла тата прозӑлла хайлавсенчи сӑнарлӑх мелӗсене сӑнасси, танлаштарасси.

### Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи калаҫу. Ылтӑн кӗркуннене сӑнлакан пӗр-пӗр ӳкерчӗке сӑнаттарни, калаҫу йӗркелени, пӗчӗк калав калӑплаттарни.

**2.** В. Ямашӑн «Кӗр ирӗ» сӑввине итлени.

— Сӑвӑ мӗнле туйӑмсем ҫуратрӗ?

— Сӑвӑра кӗрхи ҫут ҫанталӑкӑн хӑш тапхӑрне сӑнланӑ?

**3.** Сӑвва ачасем вулани, ушкӑнпа тишкерни.

— Сӑвӑра кӗр пуҫламӑшне мӗнле сӑнланӑ? Мӗншӗн пуян, ҫутӑ тенӗ? *(Пуян, ҫутӑ* — эпитетсем. Ку вӑл — пулӑмсене илемлӗ сӑнламалли ятарлӑ мел.)

— Сӑвӑра урӑх эпитетсем пур-и? Тупса вулӑр.

— Кĕр пуçламăшĕн мĕнле паллисене асăннă? Кашни паллине мĕнле сăнланă?

**4.** Хайлава хăйсем тĕллĕн вулани, унăн темине, тĕп шухăшне палăртни.

— Сăвва мĕнле ят панă? Кунта сăмах мĕн çинчен пырать? Автор кĕркуннен хăш тапхăрне сăнланă? Апла пулсан сăвă ячĕ вырăнлă-и?

Пĕтĕмлетӳ. (Кĕнекен 73 с.)

**5.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлани.

**6.** М. Трубинан «Кĕр ирĕ» калавне ачасем хăйсем тĕллĕн вулани.

— Калава мĕн çинчен çырнă? Кĕрхи ĕçсем çинчен йĕркипе çырса кайнă е кĕрхи сăнсене ӳкерсе сăнласа панă?

— Ку мĕнле хайлав: сăнлав, калав е уйлав?

**7.** Калава пайăн-пайăн вуласа тишкерни.

— Калавăн кашни пайĕнче мĕн çинчен каланă?

**8.** Калаври сăнарлăх мелĕсене сăнани. Унта кĕркуннен мĕнле паллисене кăтартнă? Вĕсене мĕнле сăнланă? Кĕрхи çулçăсене мĕнпе танлаштарнă? Тупса вулăр.

Пĕтĕмлетӳ. Илемлĕ хайлавсенче час-часах пĕр-пĕр япалана е пулăма теприпе танлаштарса сăнлаççĕ. Ку меле танлаштару теççĕ.

**9.** Киле ĕç пани. «Кĕр çитрĕ» калавăн пĕр пайĕн содержанине каласа пама хатĕрленмелле.

## 25-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Сладковăн «Ылтăн çумăр» тата Г. Харламповăн «Эсир пакша курнă-и?» калавĕсем; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (20—22 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Ылтăн кĕркунне. Калуллă тата сăнлавлă калавсем. Сăвăласа çырнă калавсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— калуллă тата сăнлавлă калавсене танлаштарса сăнасси;

— çут çанталăк пулăмне сăнлакан мелсене сăнасси;

— прозăпа çырнă илемлĕ хайлавсем те сăвăласа çырни евĕр кĕвĕленме пултарнине асăрхасси;

— хайлаври сăнарлăх мелĕсене сăнасси.

## Урок йĕрки

**1.** Хатĕрленӳ ĕçĕ.

Умĕнхи калаçура ылтăн кĕркуннехи вăрман ӳкерчĕкне сăнанипе, кĕрхи вăрман мĕнле улшăннине кăтартнипе çыхăнтарма пулать.

**2.** Н. Сладковăн «Ылтăн çумăр» калавне итлени.

— Калава сăнлав теме пулать-и? Кунта мĕнле пулăма сăнланă? Ку хăçан пулать? Хайлав ячĕ «Ылтăн çумăр». Сăмах чăннипех те ылтăн çумăр çинчен-ши?

**3.** Калава ачасем виçĕ пая уйăрса вулани, тишкерни.

— Ылтăн кĕр кунĕсенче йывăçсем мĕнле улшăнса пынă? Тупса вулăр.

— «Пиççе çитрĕç, йывăрланчĕç» тенине мĕнле ăнланатăр?

— Вăрманта ылтăн çумăр мĕнле пуçланнă? Калав тăрăх ылтăн çумăр мĕнле вăйланса пынине сăнаса пырăр. (Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.)

**4.** Калава тишкернине пĕтĕмлетни.

— Автор çулçăсем тăкăннине мĕнле кăмăлпа çырса кăтартнă? Вуланăçемĕн сирĕн мĕнле кăмăл çуралчĕ?

Ĕç тетрадĕнчи 1, 2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**5.** Г. Харлампьевăн «Эсир пакша курнă-и?» калавне итлени. (Çакăн умĕн кĕркунне вăрманти чĕр чунсен пурнăçĕ мĕнле улшăнни çинчен кĕске калаçу ирттермелле.)

— Ку хайлав юмах е калав? Тен, сăвă? Мĕншĕн çапла шутлатăр? Сăнăр, йĕркесем мĕнле кĕвĕленсе пыраççĕ?

Пĕтĕмлетӳ. (Кĕнекере панă пĕтĕмлетӳпе паллашни.)

**6.** Калава ачасем хăйсем тĕллĕн вулани, ушкăнпа тишкерни. (Тишкерĕве кĕнекери ыйтусем тăрăх йĕркелеме пулать.)

**7.** Калаври сăнарсене сăнлани, калава рольпе вулани.

— Унта мĕн çинчен каланă?

— Калаври сăнарсене каласа тухăр. Пакшана мĕнлерех сăнланă? Эсир тата мĕн каланă пулăттăр?

— Сирĕн шутпа пакша çурисенчен кашни мĕнлерех калаçать?

**8.** Пĕтĕмлетни.

— Калав мĕн çинчен?

— Автор калаври ĕçсем çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать? (Ачасем мĕн шутланине калаттарнă хыççăн ĕç тетрадĕнчи 2-мĕш ĕçе пурнăçламалла.)

— Калава вуланăçемĕн сирĕн мĕнле туйăм çуралчĕ?

**9.** Киле ĕç пани. «Эсир пакша курнă-и?» калава хăйсем тĕллĕн вуласа, тишкерсе ĕç тетрадĕнчи 3—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла. Н. Сладковăн «Ылтăн çумăр» калавне вуласа ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçе пурнăçламалла.

## 26-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери С. Сарпайăн «Хура кĕркунне» калавĕпе В. Аптраманăн «Кĕркунне» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (22—23 с.).

**Урок теми:** Хура кĕркунне. Çут çанталăк пулăмĕсене сăнлакан сăвăласа тата прозăпа çырнă илемлĕ хайлавсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— пĕр пулăмах сăвăласа тата прозăпа сăнласа кăтартма май пулнине сăнаттарасси;

— сăвăласа тата прозăпа çырнă илемлĕ хайлавсен хăйьевĕрлĕхне курма вĕрентсе пырасси;

— сăвăлла тата прозăлла илемлĕ хайлавсенчи сăнарлăх мелĕсене сăнасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Хура кĕркуннене сăнлакан ӳкерчĕк тăрăх çут çанталăкра мĕнле улшăнусем пулса иртнине уçса пани.

**2.** Ачасем «Хура кĕркунне» калавпа хăйсем тĕллĕн паллашни.

— Калавра кĕрĕн хăш тапхăрне сăнланă? Ку тапхăра мĕншĕн хура кĕркунне теççĕ?

**3.** Калава пайăн-пайăн сасăпа вуласа тишкерни.

— Калавра хура кĕркуннен мĕнле сăнлăхĕсене сăнланă?

— Çанталăка калавра мĕнле сăнланă?

— Автор вăрманти йывăççене мĕнле сăнлать? Палан çырлисене мĕнпе танлаштарать?

— Уйри ыраш калчи çинчен мĕн каланă? Купăста пуçĕсене мĕнле сăнланă? Тупса вулăр.

Пĕтĕмлетӳ.

— Мĕнле шутлатăр, автора кĕрхи çак тапхăр килĕшет-и? Вăл хура кĕркуннене мĕнле кăмăлпа сăнлать? Калава вуланă чухне сирĕн мĕнле кăмăл-туйăм çуралчĕ?

**4.** В. Аптраманăн «Кĕркунне» сăввине итлени.

— Хайлавра çулталăкăн хăш вăхăтне сăнланă? Кĕркуннен хăш самантне çырса кăтартнă?

Пĕтĕмлетӳ. Ку хайлавра, «Хура кĕркунне» калаври пекех, хура кĕре сăнланă. Кунта вара сăвăласа çырнă. Çапла пĕр пулăм çинчен тĕрлĕрен майпа çырма пулать.

**5.** Сăвва ачасем вулани, пĕрле тишкерни. (Тишкерĕве кĕнекери 1—7-мĕш ыйтусем тăрăх йĕркелеме пулать. Пĕтĕмлетĕвĕпе те кĕнекерипех усă курма май пур.)

**6.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени (4—5-мĕш ĕçсем).

**7.** Пĕтĕмлетни.

— Автор хура кĕркуннене мĕнле кăмăлпа сăнлать? Сăвă мĕнле туйăмсем çуратать? Хăш йĕркесене вуласан уйрăмах тунсăх пусать?

**8.** Киле ĕç пани. «Кĕркунне» сăвва палăртуллă вулама вĕренмелле. Ĕç тетрадĕнчи 1—3-мĕш ĕçсене пурнăçламалла. «Кĕркунне» калава вуламалла, план тăрăх пайсене уйăрмалла.

## 27-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери М. Илпекĕн «Тăрнасем» калавĕ; К. Ивановăн «Кĕркунне» сăвви; ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем; кайăксене сăнлакан слайдсем.

**Урок теми:** Калуллă калавсенчи ĕç аталанăвĕ. Сăнлавлă хайлавсенчи сăнарлăх мелĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— калуллă илемлĕ хайлавсенче ĕçсем мĕнле аталанса пынине, хайлава мĕнле пуçласа янине, вĕçленине сăнасси;

— илемлĕ хайлавсенчи сăнарлăх мелĕсене асăрхасси;

— çут çанталăкри илемлĕ пулăмсене асăрхама хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Хатĕрленӳ ĕçĕ.

а) Хамăр тăрăхри кайăксен ӳкерчĕкĕсене сăнани.

ă) Вĕсене ушкăнлани: кĕркунне кăнтăра вĕçсе каяканнисем, хĕл каçма юлаканнисем.

**2.** Ачасем М. Илпекĕн «Тăрнасем» калавĕпе хăйсем тĕллĕн паллашни.

— Хĕр ачапа ашшĕ мĕн сăнанă?

**3.** «Тăрнасем» калава сасăпа вуласа тишкерни.

— Тăрнасем ăҫта вĕҫнĕ?

— Тăрнасем карталанса вĕҫнине автор мĕнле сăнланă? Тупса вулăр.

— Кайăксем карталанса вĕҫнине автор мĕнле ăнлантарать?

**4.** Калава рольпе вулани.

— Ашшĕпе хĕрĕ мĕнлерех калаҫаҫҫĕ? Асли кĕҫĕннине мĕнле кăмăлпа ăнлантарать?

**5.** К. Ивановăн «Кĕркунне» сăввине итлени.

— Сăвă мĕнле туйăм ҫуратрĕ? Унта кĕркуннен хăш тапхăрне сăнланă?

**6.** Сăвва вуласа тишкерни.

— Сăвăра хура кĕркуннен мĕнле паллисене кăтартнă? Вĕсене мĕнле кăтартса панă?

— Ҫанталăка мĕнле сăнланă?

— «Вĕҫен кайăк сассинчен хуйхă кĕрет чĕрене» тени мĕне палăртать?

— Кĕркунне вĕҫен кайăк сасси мĕншĕн савăнтармасть?

— Кĕрхи йывăҫсене мĕнле сăнланă?

— Сăвăҫă кĕркуннен ҫак тапхăрне мĕнле кăмăлпа сăнлать?

**7.** Сăвăри сăнарлăх мелĕсене сăнани. (Сăнава кĕнекере сĕннĕ йĕркепе ирттерме пулать.)

**8.** Пĕтĕмлетни. Ҫут ҫанталăкри кашни вăхăтăн хăйĕн илемĕ, илĕртӳлĕхĕ пур. Ҫыравҫăсем ҫакна сăнласа кăтартаҫҫĕ, пирĕн кăмăл-туйăма хускатаҫҫĕ.

**9.** Киле ĕҫ пани: «Тăрнасем» калава вуласа ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕҫсене пурнăҫламалла.

## 28-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери С. Аксаковăн «Хĕл ларас умĕн» калавĕ; ĕҫ тетрадĕнчи ĕҫсем (23—24 с.).

**Урок теми:** Илемлĕ хайлав теми, тĕп шухăшĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— сăнлавлă илемлĕ хайлавсене йышăнас хăнăхусене аталантарасси, ҫыравҫă пулăмсене мĕнле кăмăл-туйăмпа сăнланине курма вĕрентесси;

— хайлавăн темипе тĕп шухăшне уҫăмлама вĕрентесси;

— сăнлавлă калаври сăнарлăх мелĕсене сăнаттарасси.

### Урок йĕрки

**1**. Умĕнхи калаçу. Вĕрентекен хĕл ларас умĕн çанталăк мĕнле улшăнса пыни çинчен пĕтĕмĕшле каласа парать.

**2.** С. Аксаковăн «Хĕл ларас умĕн» калавне итлени.

— Калавра кĕрĕн хăш самантне сăнланă?

**3.** Ачасем калава вулани, ушкăнпа тишкерни.

— Калавра хура кĕрĕн хăш паллисене сăнланă? Пĕлĕте мĕнле сăнланă? Ӳнерçĕ пулас пулсан эсир хура кĕре мĕнлерех сăнланă пулăттăр?

— Тавралăх, сад-пахча улшăннине мĕнле сăнланă?

— Вăрман тĕсĕ мĕнле улшăннă? Калавра çакна мĕнле кăтарнă? Мĕнле мелсемпе усă курнă?

— Сывлăша, вăрманти сасăсене мĕнле сăнланă?

**4.** План тăрăх текста пайсене уйăрни. (Кĕнекери планпа усă курмалла.)

**5.** Калав пирки пĕтĕмлетӳ туни. (Пĕтĕмлетĕве ĕç тетраденчи 1, 2-мĕш ĕçсемпе усă курса йĕркелеме пулать.)

**6.** Вуланă калавпа усă курса кĕркунне вĕçĕнче тăван тавралăхра пулса иртнĕ улшăнусене сăнлани.

**7.** Киле ĕç пани. «Хĕл ларас умĕн» калава вуласа ĕç тетраденчи 3—5-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

## 29-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери П. Хусанкайăн «Шкул ачи» сăвви; С. Ивановăн «Сапăрлăх çинчен» калавĕ.

**Урок теми:** П. Хусанкай «Шкул ачи». С. Иванов «Сапăрлăх çинчен».

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— сăвăласа çырнă пысăк калăплă хайлав — поэма сыпăкĕпе паллаштарасси;

— сăвăлла хайлавсенчи туйăма туйса илме хăнăхтарасси;

— сăвăри сăнарсене палăртма, çыравçă хăй те хайлавра сăнар выранĕнче пулма пултарнине сăнаттарасси;

— сăвăласа тата прозăпа çырнă хайлавсенчи сăмахлăх мелĕсене сăнасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Учитель П. Хусанкай сăн ӳкерчĕкне кăтартать, вăл мĕнпе паллă пулнине, унăн мĕнле сăввисене вуланине аса илме ыйтать. Унтан П. Хусанкайăн тепĕр хайлавĕпе паллашасси çинчен пĕлтерет.

— Ку сăвă — чăваш халăх поэчĕ çырнă «Тăван çĕр-шыв» поэма сыпăкĕ. Поэма — сăвăласа çырнă пысăк хайлав.

**2.** «Шкул ачи» сăвва итлени. (Учитель вуласа парать.)

— Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ, ăна мĕнле кăмăлпа итлерĕр?

**3.** Сăвва ачасем вулани, содержанине, сăнарлăх мелĕсене тишкерни.

— Сăвăра кам çинчен каланă? Ачана мĕн сăнать? Ирхине йăмра ачана мĕн хушать? Каç пулсан йăмра мĕн пĕлесшĕн? Тупса вулăр. Сăвă сăнарлăхне ÿстерме йăмрана мĕнле сăнланă? (Кĕнекере Тимукпа Верук каланисене сÿтсе яваççĕ.)

**4.** Сăвва вулани, сăнарсене палăртни, сăнлани.

— Сăвăра ачапа кам калаçать?

— Ачапа сăвăçă калаçать. Ăна та сăнар тесе йышăнмалла. Вăл та хăй шухăшне, кăмăл-туйăмне палăртать. Ку сăвăра автор ачана мĕн сунса калаçать? Вăл ача çинчен мĕн шутлать?

**5.** Умĕнхи калаçу. В.Маяковскин «Лайăх тени мĕн тени, япăх тени мĕн тени» хайлав сыпăкĕсене вуланипе пуçлама пулать.

Ывăл,
чĕпĕ хăраххи
ашшĕне тĕпчерĕ:
— Мĕн пулать вăл лайăххи,
япăххи мĕскер вăл?

**6.** С.Ивановăн «Сапăрлăх çинчен» калавĕпе ачасем хăйсем тĕллĕн вуласа паллашни.

— Ĕç-пуç çинчен каласа параканĕ кам?

**7.** Калава сасăпа вуласа тишкерни.

— Ачасем мĕн пирки тавлашнă?

— Вĕсем ватă çын çинчен мĕн калаçаççĕ?

— Пĕр-пĕрне мĕн калаççĕ? Тупса вулăр.

— Ку ачасем хăйсем сапăр-ши? Ăнлантарăр.

**8.** Рольпе вулани.

— Ачасем пĕр-пĕринпе мĕнлерех калаçаççĕ?

**9.** Пĕтĕмлетни. Калава автор мĕншĕн «Сапăрлăх çинчен» тесе ят панă? Вăл ку ĕç çинчен мĕнлерех çырса кăтартать: шÿтлесе, сивлесе е тăрăхласа?

**10.** Киле ĕç пани. «Шкул ачи» сăвва палăртуллă вулама вĕренсе килмелле. Вариант: «Сапăрлăх çинчен» калав содержанине каласа пама хатĕрленсе килмелле.

# 30-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А. Кăлканăн «Чăрсăр автансем» тата И. Шухшин «Сылтăм алăпа сулахай алă» юптарăвĕсем.

**Урок теми:** Сăвăлла тата прозăлла юптару.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— тĕрлĕ формăпа (сăвăласа, прозăлла) çырнă хайлавсене йышăнма, ăнланма малалла вĕрентсе пырасси;

— «юптару» ăнлавпа паллаштарасси;

— юптару жанрĕнчи йĕркепе çырнă хайлавсен хăйьевĕрлĕхне сăнаттарасси;

— юптарусен тĕп шухăшне уçăмлатма вĕрентсе пырасси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Учитель ачасене Н. Карай çырнă «Автан» сăвă çаврăмне вуласа (каласа) парать:

Кăкăр урлă шўлкемеллĕ,
Çырла тĕслĕ тўпеттейлĕ,
Кăлтăрмач пек шур хўрелллĕ,
Çĕр чавма — çинçе чĕрнеллĕ.

— Аса илтĕр-и, ачасем, 1-мĕш класра мĕнле кайăк çинчен вуланăччĕ çак йĕркесене. Паян та ик автан çинчен сăвăлла хайлав вулăпăр.

**2.** А. Кăлканăн «Чăрсăр автансем» хайлавне итлени. (Учитель вуласа парать.)

— Хайлав мĕн çинчен? Сăвă мĕнле пуçланать?

**3.** Сăвва ачасем вулани, ушкăнпа тишкерни.

— Автансем мĕн пирки çапăçма пуçланă? Тупса вулăр. Автансем мĕнлескерсем? Сăнласа парăр. Çакă вĕсен мĕнле хăтланăшĕсенче курăнать? Вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле хирĕçеççĕ? Автор çакна мĕнле палăртнă?

— Автансем тупнă пĕрчĕ кама лекнĕ?

**4.** Хайлава палăртуллă вулама вĕренни.

**5.** Пĕтĕмлетни. Ку юптару мĕн çинчен? Автор ĕç çинчен шахвăртса е юптарса калать? (Кĕнекери пĕтĕмлетўпе паллашни.)

**6.** И. Шухшин «Сылтăм алăпа сулахай алă» юптарăвĕпе харпăр хăй тĕллĕн вуласа паллашни.

— Ку хайлав мĕнле йышши? Сирĕн шутпа ăна мĕншĕн юптару тенĕ? Ăна хăвăр вуланă юптарусемпе танлаштарăр. (Ачасем кĕнекери пĕтĕмлетĕве вулаççĕ.)

**7.** Юптарӑва пайӑн-пайӑн вуласа тишкерни.

— Сылтӑм алӑ мӗн пирки мӑнаҫланнӑ?

— Вӑл сулахай алла мӗн каласа кӳрентернӗ?

— Вӑл унпа мӗнлерех калаҫнӑ? Ҫакна автор мӗнле палӑртать?

— Кайран мӗн пулса тухнӑ? Алӑсем пӗр-пӗринчен сивӗннине автор мӗнле каланӑ?

**8.** Пӗтӗмлетни.

— Юптару мӗнле вӗҫленет? Ҫак йӗркесемпе автор мӗн каласшӑн пулнӑ? Юптару мӗн ҫинчен?

Кӗнекери Шухши мучи сӗнекен ваттисен сӑмахӗсене тишкерни.

**9.** Киле ӗҫ пани. 1) «Чӑрсӑр автансем» юптарӑва вуламалла, кӑсӑклӑ самаnta сӑнлакан ӳкерчӗк тумалла. 2) «Сылтӑм алӑпа сулахай алӑ» юптарӑва вуламалла, пайсене ят памалла.

## 31-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери В. Осееван «Алюшпа Кӗтерук» калавӗ; ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӗҫсем.

**Урок теми:** Калаври ӗҫсен аталанӑвӗ. Калаври сӑнарсем.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— илемлӗ хайлава туйӑмлӑ йышӑнма, ӑнланма, палӑртуллӑ вулама вӗрентесси;

— калаври ӗҫсен аталанӑвне йӗрлеме, ҫивӗч самаnta палӑртма вӗрентесси;

— хайлаври тӗп сӑнарсене палӑртасси, вӗсен хӑтланӑшӗсене сӑнасси.

### Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи калаҫу. Учитель В. Осеева ҫыравҫӑ ҫинчен кӗскен каласа парать.

**2.** В. Осееван «Алюшпа Кӗтерук» калавне итлени. (Учитель вуласа парать.)

— Калавра камсем ҫинчен каланӑ? Алюшпа Кӗтерук пӗр-пӗрне мӗнле тӑван лекеҫҫӗ?

**3.** Калава ачасем хӑйсем тӗллӗн вулани, пӗрле тишкерсе ӗҫсен аталанӑвне йӗрлени.

— Калав мӗнле пуҫланать? Малалла ӗҫсем мӗнле аталанса пыраҫҫӗ?

— Аппăшĕнчен тарса Алюш мĕн тăвать? Тупса вулăр.

— Сасартăк мĕн пулса иртет?

— Калавра чи çивĕч самант хăшĕ? Тупса вулăр. Мĕншĕн ăна чи çивĕч самант тесе палăртнă?

— Ĕç мĕнпе вĕçленет? Вулăр.

Пĕтĕмлетӳ. (Кĕнекери Мария Васильевна пĕтĕмлетĕвĕпе паллашни.)

**4.** Калава рольпе палăртуллă вулама вĕренни.

— Калава вуланăçемĕн сирĕн кăмăлăр мĕнле улшăнса пычĕ? Хăш вырăнта ытларах пăшăрхантăр? Мĕншĕн? Çак вырăна хăвăр пăшăрханнинe палăртса вулама тăрăшăр. Хăрана самантсем пулчĕç-и? Тупăр, хăранине палăртса вуласа пăхăр. Хăш вырăнта ăшă туйăм çуралчĕ? Ку сыпăка мĕнле вуламалла? (Юлашкинчен калава пĕтĕмĕшле палăртуллă вулаççĕ.)

**5.** Тĕп сăнарсене палăртни, вĕсен хăтланăшĕсене сăнани-тишкерни.

— Хайлаври тĕп сăнарсем камсем?

— Кĕтерук мĕншĕн питĕ тарăхнă? Вăл мĕнле хĕрача, ăна çиллес теме пулать-и? Вăл мĕншĕн тавăрасси çинчен манса кайнă? Малтан çине-çинех Кĕтерук шăллĕне мĕнле калать тенĕ? (Кăшкăрса, кăшкăрчĕ.) Кайран вăл хăйне шăллĕпе мĕнле тытать? Тупса вулăр.

— Сăнăр, Алюш хăтланăшĕсем мĕнле улшăнса пыраççĕ? (Витлесе илчĕ, кулса ячĕ, хăравçăллăн пăхса ларать, пуçĕ усăнчĕ, пĕчĕкленнĕн туйăнчĕ, макăрса ячĕ, аппăшĕ çумне тĕршĕнчĕ.)

— Мĕнле шутлатăр, Алюш ыратнăран макăрнă-ши? Вăл мĕнлерех ача?

**6.** Пĕтĕмлетни. Сирĕн кăмăла хăш самант ытларах хускатрĕ? Эсир ӳнерçĕ пулнă пулсан хăш саманта сăнлакан ӳкерчĕк тунă пулăттăр?

— Калава автор мĕншĕн çапла ят панă-ши?

**7.** Киле ĕç пани. Калава вуласа ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене пурнăçламалла. Унти ӳкерчĕксем тăрăх каласа пама хатĕрленмелле.

## 32-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери К. Чуковскин «Лапӑрчӑк» тата Н. Симуновӑн «Пулӑра» сӑввисем; ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӗҫсем.

**Урок теми:** Шӳтлӗ сӑвӑсем.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— шӳтлӗ хайлавсене туйӑмлӑ йышӑнма, ӑнланма малалла вӗрентесси;

— шӳте туйма-ӑнланма хӑнӑхтарасси, шӳтлӗ хайлавсен хӑйьевӗрлӗхне сӑнаттарасси;

— ҫут ҫанталӑка сӑнама хӑнӑхтарасси.

### Урок йӗрки

**1.** Хатӗрленӳ ӗҫӗ.

Пӗрремӗш класра паллашнӑ шӳтсене аса илни. (Ачасем хӑйсем асӑмлама йывӑрланса тӑраҫҫӗ пулсан вӗрентекен каласа парать.)

— Ку шӳтсем халӑхра сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳреҫҫӗ тенӗччӗ. Вӗсен авторӗ те халӑх шутланать. Ҫыравҫӑсем те шӳтлеме юратаҫҫӗ, шӳтлӗ сӑвӑ-калав хайлаҫҫӗ.

**2.** К. Чуковскин «Лапӑрчӑк» сӑввине итлени.

— Мӗнле туйӑмпа итлерӗр?

— Хӗр ача мӗн ӗҫпе аппаланать? Вӑл миҫе ҫулсенче-ши?

**3.** Сӑвва ачасем вулани, тишкерни. (Тишкерӗве кӗнекери ыйтусем тӑрӑх йӗркелеме пулать. Унтан Тимукпа Верук каланине сӳтсе яваҫҫӗ.)

**4.** Сӑвва палӑртуллӑ вулама вӗренни.

— Автор хӗр ача ҫинчен мӗнле каласа парать? Ку хайлава шӳт теме пулать-и? Эсир хайлавӑн кашни уйрӑм сыпӑкне мӗнлерех вуламалла тесе шутлатӑр?

**5.** Н. Симуновӑн «Пулӑра» сӑввине итлени. (Вулас умӗн чӑваш ҫыравҫисем те шӳтлӑ сӑвӑ-калав хайлама ӑста пулни ҫинчен каласа хӑварсан аван.)

— Сӑвӑ килӗшрӗ-и? Ӑна мӗнле кӑмӑлпа вуларӑр?

**6.** Сӑвва палӑртуллӑ вулама вӗренни.

— Сӑвӑри ӗҫсем ҫинчен каласа паракан кам? Вӑл мӗнлерех кӑмӑлпа каласа парать? Мӗншӗн ҫапла шутлатӑр?

— Ачасем кушака питӗ тарӑхнӑ-ши? Ҫакӑ сӑвӑри хӑш йӗркесенче уҫҫӑн курӑнать? Тупса вулӑр. Кушакне автор мӗнле калать? («Кушак тусӑм» тет.)

— Сирĕн шутпа сăвăри хăш сыпăка мĕнле вуламалла? Ăнлантарăр. (Юлашкинчен сăвва пĕтĕмĕшле палăртуллă вулаççĕ.)

**7.** Сăвва сăнлакан ӳкерчĕке сăнани, калаçни, çыхăнуллă каласа пама вĕренни.

**8.** Пĕтĕмлетни.

— Сирĕн шутпа çыравçă сăвăра шӳтлесе мĕн каласшăн? Сăвă ячĕ сире килĕшет-и? Эсир хăвăр мĕнле ят панă пулăттăр?

**9.** Киле ĕç пани. К. Чуковскин «Лапăрчăк» сăввине вуласа ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене пурнăçламалла. Н. Симуновăн «Пулăра» сăввине вуласа кĕнекере палăртнă ĕçе тумалла.

## 33-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери О. Савандееван «Микула пичче кучченеçĕ» калавĕ; ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Калаври ĕçсен аталанăвĕ. Калавăн тĕп шухăшĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— пысăкрах калăпăшлă илемлĕ хайлавсене йышăнма вĕрентсе пырасси;

— калаври ĕçсен аталанăвне сăнаттарасси, чи çивĕч саманта палăртма малалла вĕрентесси;

— калавăн тĕп шухăшне ăнланма, палăртма вĕрентесси.

### Урок йĕрки

**1.** Хатĕрленӳ ĕçĕ.

— Ку хайлав пысăкрах калăпăшлă. Ăна урокра пĕтĕмĕшле вулама вăхăт нумай каять. Çавăнпа калава пĕрремĕш хут ачасене килте хăйсем тĕллĕн вулама сĕнмелле. Урок умĕн вулани-вуламаннине, мĕн асра юлнине тĕрĕслеме кĕскен калаçса илмелле.

— Камсем çинчен вуларăр? Сирĕн шутпа хĕр ачасем миçесенче? Вĕсене мĕншĕн Микула мучисен пахчинчи пан улмисем питĕ илĕртнĕ?

**2.** Калава пайăн-пайăн вуласа тишкерни.

1-мĕш пай:

— Ĕç хăçан пулса иртет? Çулла ачасем вăхăта мĕнле

ирттереççĕ? Пĕррехинче Праски мĕнле сĕнӳ парать? Вăл çакна мĕнлерех калать? Тупса вулăр. Валя ăна хирĕçлет-и е тӳрех унпа килĕшет-и? Вăл иккĕленсе тăрать тесе калама пулать-и? Калавра каланипе çирĕплетĕр. Праски ăна ӳкĕтлет е хистет? Калавра çакна мĕнле палăртнă?

2-мĕш пай:

— Микула мучи хăш самантра пырса тухать? Валя тӳрех мĕн шутласа илет? Микула мучи вара мĕн тăвать? Тупса вулăр. Вăл хĕр ачасене епле ăсатса ярать? Хĕр ачасене мĕншĕн пит намăс пулнă? Калаври чи çивĕч самант хăшĕ тесе шутлатăр? Мĕншĕн?

**3.** Калаври сăнарсене сăнлани.

— Калаври сăнарсене каласа тухăр. Тĕп сăнарĕсем хăшĕсем? Кашни хĕр ача калав пуçламăшĕнче, чи çивĕч самантра, вĕçĕнче хăйне мĕнле тытать? Çавна кура эсир вĕсем çинчен мĕн каланă пулăттăр?

— Микула мучи мĕн тери вата? Унăн хăш хăтланăшĕнчен çакă уççăн курăнать?

— Автор хĕр ачасене, Микула мучине мĕнле кăмăлпа сăнарлать?

**4.** «Ӳкерчĕксен альбомĕпе» ĕçлени. Ӳкерчĕкре калаври хăш саманта сăнлани, тĕп сăнарсем çинчен хăйсем çак самантра мĕнле кăмăлпа вулани çинчен каластармалла. Ӳкересси-сăрлассипе киле панă ĕç пулма пултарать.

**5.** Пĕтĕмлетни, калавăн тĕп шухăшне уçăмлатни.

— Эсир калава мĕнле кăмăлпа вуларăр? Мĕнле самантсем пулчĕç: пăшăрханни, кăмăлсăрланни, савăнни, аванмарланни?

— Калаври тĕп шухăша хăш предложенире палăртнă?

— Калав ячĕ мĕнле? Сăмах мĕнле кучченеç çинчен пырать?

**6.** Киле ĕç пани. Калава вуласа план тăрăх пайсене уйăрмалла. План тăрăх калав содержанине каласа пама хатĕрленмелле.

## 34-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А. Бартон «Вăт епле вăл пулăшать» тата Е. Афанасьевăн «Кенттипе Мишша» сăввисем; ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Сăвăласа çырнă шӳтлĕ хайлавсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— сăвăласа çырнă шÿтлĕ хайлавсене йышăнма, чи çивĕч самантра палăртма хăнăхтарса пырасси;

— шÿте ăнланма, вăлтса каланине ăнкарма-ăнланма вĕрентсе пырасси;

— сăвăласа çырнă шÿтлĕ хайлавсене палăртуллă вулама хăнăхтарасси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Ачасем аслисене мĕнле пулăшни çинчен калаççан аван.

— Эсир халĕ самай çитĕннĕ ĕнтĕ. Килте аслисене пулăшатăр пулĕ? Мĕн-мĕн туса пулăшатăр? Ĕçĕ пур чухне те ăнăçать-и? Мĕншĕн? Халĕ вырăссен паллă ача-пăча çыравçи хайланă сăвва итлетпĕр. (Агния Барто çинчен кĕскен каласа пани.)

**2.** «Вăт епле вăл пулăшать» хайлава итлени.

— Кам çинчен каланă? Мĕнле кăмăлпа итлерĕр?

**3.** Сăвва ачасем хăйсем тĕллĕн вулани, пĕрле тишкерни.

— Таня кун каçипе мĕншĕн питĕ ывăннă? Унăн ĕçĕсем çинчен каланине тупса вулăр.

**4.** Пĕтĕмлетни, палăртуллă вулани.

— Калав ячĕ мĕнле? Мĕншĕн «пулăшать» çеç темен, «вăт епле вăл пулăшать» тенĕ?

— Автор хĕр ача çинчен мĕнлерех каласа парать: шÿтлесе е питлесе? Тимукпа Верук мĕн шутлаççĕ?

— Ку сăвва шÿтлĕ теме пулать-и? Ăна мĕнлерех вуламалла?

**5.** «Ÿкерчĕксен альбомĕпе» ĕçлени. Ачасем сăвва хăйсем мĕнле кăмăлпа йышăннине, Таньăн «ĕçĕсене» асăмласа мĕнле ÿкерчĕксем тумаллине палăртаççĕ. Сăнарсене мĕнлерех сăнласа ÿкермеллине сÿтсе яваççĕ. (Ÿкересси-сăрлассси киле панă ĕç пулать.)

**6.** Е. Афанасьевăн «Кенттипе Мишша» хайлавне итлени.

— Чăваш çыравçисем те шÿтле хайлавсем çырма ăста. Вĕсенчен пĕри Егор Афанасьев. (Сăвăç çинчен кĕскен калани.)

— Хайлав мĕнле туйăмсем çуратрĕ? Сирĕн шутпа Кенттипе Мишша миçе çулсенчи ачасем?

**7.** Сăвва ачасем хăйсем тĕллĕн вулани, ушкăнпа тишкерни.

— Кенттипе Мишша мĕн шут тытнă? Вĕсем хӳме сăрлама мĕнлерех хатĕрленнĕ? Тупса вулăр. Ачасем мĕнле кăмăлпа ĕçлеççĕ? Пĕр-пĕринпе килĕштереççĕ-и? Çавна автор мĕнле палăртнă? Тупса вулăр. Ĕçĕ мĕнле пулса пырать? Ăнăçать-и? Тупса вулăр. Аслисем ачасен ĕçне мĕнлерех йышăнаççĕ? Тупса вулăр.

**8.** Сăвва сасăпа вулани, ĕçсен аталанăвне сăнани, ӳкерчĕксен альбомĕнчи хăш-пĕр ĕçсене пурнăçлани. Ĕçсен йĕркине, чи çивĕч самантне палăртаççĕ. Ӳкерчĕксен альбомĕнче хăш самантсем сăнланманнине, пушă вырăна мĕнле ӳкерчĕксем тумаллине сӳтсе яваççĕ.

**9.** Сăвва палăртуллă вулани, тишкерни.

— Кенттипе Мишшан хăтланăшне ашкăнни, пуçтахланни теме пулать-и? Мĕншĕн? Автор вĕсем çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать? Эсир мĕнле кăмăлпа итлерĕр?

**10.** Пĕтĕмлетни.

— Сăвă мĕнле йĕркесемпе вĕçленет? Вĕсем авторăн е ачасен сăмахĕсем? Вĕсене мĕнлерех кăмăлпа каланă: кӳренсе, сивлесе, тĕлĕнсе, шӳтлесе? Ачасем аслисене хытах кӳреннĕ-ши?

**11.** Киле ĕç пани. Хайлавсене вуламалла, ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене тумалла.

## 35-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕр:** кĕнекери В. Осееван «Кăвак çулçăсем» калавĕ.

**Урок теми:** Хайлаври тĕп сăнарсем. Хайлавăн тĕп шухăшĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— ачасене хайлаври ĕçсен аталанăвне йĕрлесе пыма, çивĕч саманта палăртма вĕрентесси;

— хайлаври тĕп сăнарсене сăнлаттарасси;

— калавăн тĕп шухăшне ăнланма, палăртма вĕрентсе пырасси;

— илемлĕ хайлавсене палăртуллă вулас пултарулăха аталантарасси;

— туслăх туйăмĕсене упрама хăнăхтарасси.

### Урок йěрки

**1.** Умěнхи калаçу. Вырăс çыравçи В. Осеева çинчен каланине аса илěр. Унăн мěнле хайлавěсемпе паллашнăччě эпир? В. Осеева ытларах кам çинчен çырать?

**2.** В. Осееван «Кăвак çулçăсем» хайлавěпе ачасем хăйсем тěллěн паллашни.

— Камсем çинчен вуларăр? Хěр ачисем сирěн шутпа миçе çулсенчисем? Вěсен мěн тумалла пулнă?

**3.** Калава сасăпа вуласа тишкерни.

— Ленăн ÿкерчěкěнчи çулçăсем мěншěн кăвак пулнă?

— Катя кăранташне тÿрех панă-и? Вăл мěнле сăлтавсем тупнă? Тупса вулăр.

**4.** Сăнарсене тишкерни, палăртуллă вулани.

— Сăнăр, Лена Вальăна мěнле ÿкěтлет? Автор çакна мěнле каланă? Катя Ленăпа мěнле кăмăлпа калаçать? Çакна калавра мěнлерех кăтартнă?

— Катя кăранташне мěншěн тÿрех паман? Лена кăранташа кайран мěншěн илмен? (Ачасем хăйсен шухăшне пěлтереççě, Верукпа Тимук каланине сÿтсе яваççě, асламăшěн сăмахне ăнланма тăрăшаççě.)

**5.** Калаври çивěч саманта палăртни, пěтěмлетни, калавăн тěп шухăшне палăртни.

— Сирěн шутпа калавра чи çивěч самант хăшě? Тупса вулăр. Мěншěн çапла шутлатăр?

— Калавăн юлашки йěркисене вулăр. Çакна эсир мěнле ăнланатăр?

— Автор мěн каласшăн пулнă?

**6.** Киле ěç пани. Калава палăртуллă вулама, унăн содержанине каласа пама вěренмелле.

## 36-мěш урок

**Урокра кирлě хатěрсем:** кěнекери И. Яковлевăн «Эпě сехет çěмěрни» калавě; сехет çинчен вăлтса каланă тупмалли юмахсем; И. Яковлев сăн ÿкерчěкě.

**Урок теми:** Калавăн тěп шухăшě.

**Урок тěллевěпе задачисем:**

— тупмалли юмахсен тытăмне аса илесси, тупсăмěсене тупма хăнăхтарасси;

— калавсене йышăнасси-ăнланасси, вěсен тěп шухăшне уçăмлатма вěрентесси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу.

а) Ачасем И.Я. Яковлев сăн ӳкерчĕкне сăнаççĕ, ун çинчен пĕрремĕш класра мĕн вĕреннине аса илеççĕ. Вĕрентекен Иван Яковлевич учитель те, çыравçă та пулни, ачасем валли калавсем çырни, вырăсларан чăвашла куçарни çинчен каласа парать.

ă) Тупмалли юмахсен тупсăмне шырани (117 с.). (Тупмалли юмахĕсене вĕрентекен туптарать.)

**2.** И. Яковлевăн «Эпĕ сехет çĕмĕрни» калавĕпе паллашни. (Калава ачасем хăйсем тĕллĕн вулаççĕ.)

— Калавра кам çинчен калană?

— Ванюк ашшĕ мĕнле ăстаçă пулнă?

**3.** Калава сасăпа вулани, тишкерни.

— Ванюка аслисем мĕн çинчен асăрхаттарнă? Вĕсем хытарса каланине калавра мĕнле палăртнă? Тупса вулăр. («...Вĕсен çумне тĕкĕнме те хушмастчĕç...»)

— Ванюк мĕн пирки аслисен сăмахĕнчен иртнĕ? Ачан питĕ сехет юсаса пăхас килни çинчен калавра мĕнле калană? Ванюкăн ĕçĕ ăннă-и? Мĕншĕн? Ĕç мĕнле вĕçленет?

**4.** Калава вулани, пĕтĕмлетни.

— Ашшĕ ачана мĕнле ăс панă? Вăл хытах çилленнĕши? Калаври йĕркесемпе çирĕплетĕр.

— Каласа паракан кам? Вăл мĕнле кăмăлпа каласа парать?

— Çыравçă калаври ĕçсене мĕнле кăмăлпа сăнлать? Эсир хăвăр мĕнле кăмăлпа вуларăр? Ачана питĕ сивлерĕр-и е уншăн пăшăрхантăр-и?

— Калавăн тĕп шухăшĕ мĕнле? Ваттисем каланисенчен хăшĕ калавăн тĕп шухăшĕпе тӳр килет?

**5.** Киле ĕç пани. Калава тепĕр хут вуласа тухмалла, содержанине каласа пама хатĕрленмелле.

## 37-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Ивановăн «Мухтанчăк Çерçи»; ĕç тетраденчи ĕçсем (27—28 с.).

**Урок теми:** Чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— чĕр чунсем çинчен калакан юмахсемпе малалла паллашасси, вĕсен хăйьевĕрлĕхне сăнаттарасси;

— юмах жанрĕпе çырнă хайлавсене туйăмпа йышăнма, ăнланма хăнăхтарасси;
— юмах тытăмне, чĕлхине сăнаттарасси; хайлав планне йĕркелеме вĕрентесси;
— ăнланса, палăртуллă вулас ăслайсене аталантарасси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Çерçи çинчен калакан тупмалли юмах тупсăмне шырани.

— Паян эпир çерçи çинчен вулăпăр.

**2.** «Мухтанчăк Çерçи» юмахпа паллашни. (Вĕрентекен вуласа парать.)

— Хайлав мĕнсем çинчен? Çерçисене мĕнле ят панă? Мĕншĕн?

— Ку хайлав калав е юмах? (Ĕç тетрадĕнчи 1—2-мĕш ĕçсене пурнăçлани.)

**3.** Юмаха ачасем хăйсем тĕллĕн вулани, тишкерни.

а) Ĕç тетрадĕнчи 3-мĕш ĕçе пурнăçлани.

ă) Юмах пирки калаçни.

— Çерçи мĕнлерех пурăннă? Çавна кура хăйне епле тыткаланă? Вăл ытти çерçисемпе мĕнлерех калаçать? Тупса вулăр. Пĕррехинче вăл мĕнле инкеке лекет? Инкекре вăл хăйне мĕнле тыткалать? Юлташĕсем ăна мĕнле канаш панă? Çерçи мĕншĕн нимĕн тума та пĕлмен?

**4.** Юмах планне йĕркелени, ăна пайсене уйăрни. (Йĕркелемелли планĕ 119-мĕш страницăра.)

**5.** Сăнарсене сăнлани, пĕтĕмлетни.

а) Ĕç тетрадĕнчи 4—5-мĕш ĕçсене пурнăçлани. Вуланăçемĕн сирĕн кăмăл мĕнле улшăнса пычĕ? Эсир Çерçи çинчен мĕн шутлани улшăнчĕ-и? Юмах «Мухтанчăк Çерçи» ятлă. Ку ят вырăнлă-и?

ă) Ваттисен сăмахĕсене вулани, сӳтсе явни (119 с.).

— Мариç кинеми асăннă ваттисен сăмахĕ юмахăн тĕп шухăшне палăртать-и? Эсир тата çакăн евĕр ваттисен сăмахĕсене пĕлетĕр-и? Аса илсе калăр.

**6.** Киле ĕç пани. Юмах содержанине план тăрăх аса илсе каласа пама хатĕрленмелле.

## 38-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери И. Шухшин «Куршанак çыпăçрĕ» калавĕпе В. Тимаковăн «Пыл хурчĕ» сăвви; ÿкерчĕксен альбоменчи ĕçсем.

**Урок теми:** Илемлĕ хайлаври сăнарлăх мелĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— сăвăласа тата прозăпа çырнă илемлĕ хайлавсене туйма-йышăнма малалла вĕрентсе пырасси;

— илемлĕ хайлаври сăнарлăх мелĕсене сăнаттарасси, ытарлă каланисене курма, ăнланма вĕрентесси;

— ĕçе юратма хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Ачасен çуллахи ĕçĕсене, вăййи-куллине сăнлакан ÿкерчĕксем тăрăх калаçни. Урок тĕллевĕсемпе паллаштарни.

**2.** И. Шухшин «Куршанак çыпăçрĕ» калавĕпе паллашни.

а) Калава ачасем хăйсем тĕллĕн вулани.

ă) Ыйтусене хуравлани.

— Камсем çинчен каланă? Çемье мĕн ĕçре?

б) Калава вуласа тишкерни.

— Пĕчĕк Микуль мĕнлерех ĕçлет? Вăл пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçленине мĕнле кăтартнă? Тупса вулăр. Ача мĕншĕн ывăнсан та каласшăн мар?

— Амăшĕ Микуле мĕнле куршанак çыпăçни çинчен калать? Ача сăмах мĕн çинчен пынине ăнланчĕ-и?

Пĕтĕмлетÿ. Куршанак çыпăçрĕ тесе ытарлă каланă. Вăл ĕç çумне çыпçăнчĕ, ыттисемпе пĕрле, тан ĕçлеме пуçларĕ тенине пĕлтерет. Çакăн пек калани пуплеве сăнарлăрах, илемлĕрех тăвать.

в) Пĕтĕмлетни.

— Калава та «Куршанак çыпăçрĕ» тесе ят панă. Çапла автор мĕн палăртасшăн? Калав мĕн çинчен?

— Автор ача çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать? Эсир хăвăр мĕнле туйăмпа вуларăр? Сирĕн мĕнле кăмăл çуралчĕ?

**3.** Ÿкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене пурнăçлани.

— Ÿкерчĕксене сăнăр. Унта калаври хăш самантсене сăнланă? Аса илсе каласа парăр. Эсир çак самантсене мĕнле кăмăлпа вуларăр? Палăртăр.

— Ку калавра тĕп сăнарĕ кам? Микуль мĕнлерех ача? Ытти сăнарсене аса илĕр. Пушă тăваткалсене хăш сăнарсене ӳкернĕ? Вĕсене мĕнлерех сăнланă? (Ӳкерессисăрлассипи килти ĕç пулать.)

**4.** В. Тимаковăн «Пыл хурчĕ» сăввипе паллашни.

а) Сăвва учитель вуласа пани.

— Сăвăра «Вĕлле хурт — ылтăн хурт» тенĕ. Мĕншĕн çапла каланă-ши? Ылтăн хурт тени пуплеве сăнарлăрах тăвать.

ă) Сăвва ачасем вулани, тишкерни (кĕнекери ыйтусем тăрăх).

**5.** Пĕтĕмлетни.

— Паян вуланă сăвă-калав сирĕнте мĕнле туйăм çуратрĕ?

**6.** Киле ĕç пани. 1) Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене пурнăçламалла. 2) Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

## 39-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери И. Яковлевăн «Кулачă» юмахĕ; И. Яковлев сăн ӳкерчĕкĕ.

**Урок теми:** «Кулач» — йăла юмахĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— йăла юмахĕсене, вĕсен хăйьевĕрлĕхĕсене аса илесси;

— йăла юмахĕсене вуласа ăнланас пултарулăхпа ăслайсене аталантарасси;

— юмахăн тĕп шухăшне уçăмлама хăнăхтарасси;

— юмах чĕлхине, унти сăнарлăх мелĕсене сăнаттарасси;

— ĕçе хисеплеме хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. И. Яковлев çинчен аса илсе пĕтĕмлетни. Учитель унăн «Ача-пăча калавĕсем» кĕнекине кăтартать. Унти пĕр юмахне вулама сĕнет.

**2.** «Кулачă» хайлавпа паллашни. (Ачасем сасăпа вулаççĕ.)

— Хайлав килĕшрĕ-и сире? Кам çинчен вуларăр?

**3.** Юмаха ачасем хăйсем тĕллĕн кĕнекере вулани, тишкерни.

— Сăнăр, ку хайлава юмах тенĕ. Çырса кăтартни чăн пурнăçра пулма пултарать-и? Çакăн йышши юмахсене мĕнле юмахсем тенĕччĕ? (Малалла тишкерӳ кĕнекери 1—3-мĕш ыйтусем тăрăх йĕркеленет.)

**4.** Юмахри сăнарсене палăртни, сăнлани.

— Юмахри сăнарсене асăнса тухăр. Ача ашшĕ çинчен мĕн калăр? Ăнлантарăр. Ачи тата мĕнлескер? Çакă ăçтан курăнать?

**5.** Пĕтĕмлетни. Юмахăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать? (Иван Яковлевич хăйĕн ача-пăча калавĕсенче тĕп шухăшне ялан тенĕ пекех юлашки йĕркесенче палăртма тăрăшнă.)

**6.** Юмах тăрăх ăславлă ĕçсем йĕркелени.

— Эсир ӳнерçĕ пулнă пулсан юмахăн хăш самантне сăнланă пулăттăр? Хăвăр ӳкерес тенине сăмахпа сăнласа парăр.

**7.** Киле ĕç пани. Юмах тăрăх ӳкерчĕксем тумалла, вĕсене сăрламалла.

## 40-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери К. Ивановăн «Нарспи» поэмин сыпăкĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (26 с.); К. Иванов сăн ӳкерчĕкĕ.

**Урок теми:** Пысăк калăпăшлă сăвăлла хайлав (поэма) сыпăкĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— пысăк калăпăшлă сăвăлла хайлав (поэма) сыпăкĕпе паллаштарасси; малашне çак хайлава пĕтĕмĕшле вулас кăмăла хускатасси;

— сăвăласа çырнă хайлавсене туйăмпа йышăнас пултарулăха аталантарасси;

— сăвăласа çырнă илемлĕ хайлав кĕвĕлĕхне туйма вĕрентесси;

— хайлаври сăнарлăх хатĕрĕсене сăнаттарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Учитель К. Ивановăн сăн ӳкерчĕкне кăтартать, вăл мĕнпе паллă пулнине калать, унăн 1-мĕш класра вуланă сăввисене аса илме ыйтать. (К. Иванов — чăваш литературин классикĕ. Вăл тĕнче литературин историне «Нарспи» поэмипе кĕрсе юлнă. Ку поэмăра Нарспи ятлă ĕçчен те чипер чăваш хĕрĕ хăй телейĕшĕн çирĕп тăнине çырса кăтартнă.)

**2.** Поэмăн «Сарă хĕр» сыпăкне итлени. (Вĕрентекен вуласа парать.)

— Сăвă мĕнле туйăмсем çуратрĕ?

— Поэмăн çак сыпăкĕнче кам çинчен каланă? Нарспи çинчен мĕнле кăмăлпа итлерĕр?

Ачасем сăвă сыпăкне хăйсем тĕллĕн вулани.

**3.** Сăмах ĕçĕ.

— Хальччен илтмен, ăнланман сăмахсем тĕл пулчĕç-и? *Ăса, хултăрчă, çĕрĕ* сăмахсем тĕл пулакан йĕркесене тупса вулăр, ӳкерчĕксене сăнăр. Ку япаласем мĕн тума кирлĕ?

**4.** Сăвва ачасем сасăпа вулани, содержанине ăса хывни, чĕлхине тишкерни. (Кĕнекери ыйтусем тата Верукпа Тимук пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх.)

— Константин Иванов çав тери илемлĕ, сăнарлă çырать, тĕрлĕрен сăнарлăх мелĕсемпе усă курать. Эсир сăвăра тата мĕнле сăнарлăх мелĕсене асăрхарăр? Çав йĕркесене тупса вулăр. *(Çĕвви шăрçа пек пулать* — танлаштару; *юрла-юрла* — сăмаха икĕ хут калани; ***вылянтарать ăсине, çипне тиет çĕррине*** — предложенири сăмахсен йĕркине улăштарни.)

**5.** Пĕтĕмлетни.

— Автор Нарспи çинчен мĕнле каласа парать? (Ĕç тетрадĕнчи 5-мĕш ĕçе пурнăçлани.)

**6.** Киле ĕç пани. Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле. Ĕç тетрадĕнчи 1—4-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

## 41-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Ивановăн «Пахча хуралçи» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (25 с.).

**Урок теми:** Калаври ĕçсен аталанăвĕ. Чи çивĕч самант. Калав планĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— пысăкрах калăпăшлă хайлавсене вуласа ăнланас пултарулăха малалла аталантарасси;

— калаври ĕçсен аталанăвне сăнаттарасси, чи çивĕч самарта палăртма вĕрентсе пырасси;

— калав планне йĕркелеме, план тăрăх содержанине уçса пама вĕрентесси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу.

— Çулла пахчара мĕнле ĕçсем ĕçлеççĕ? Эсир, ачасем, хăш ĕçсене хутшăнатăр?

— Халĕ чăваш çыравçи Николай Иванов хайланă калава вулăпăр. Ячĕ унăн — «Пахча хуралçи». Мĕнле шутлатăр, калавра мĕн çинчен çырса кăтартнă-ши?

**2.** Калава пĕтĕмĕшле итлени. (Калав калăпăшĕпе самай пысăк. Ачасене вулаттарас пулсан, вăхăт нумай каять. Çавăнпа вĕрентекенĕн вулас пулать.)

— Ашшĕпе амăшĕ Микулая мĕн шанса хăварнă? Микулай пахчана мĕнле сыхланă? Мĕн-мĕн тунине каласа парăр.

— Аслисем киле таврăнсан пахчара мĕн курнă?

**3.** Калава ачасем пайăн-пайăн вулани, ушкăнпа тишкерни, калаври ĕçсен аталанăвне сăнаса пыни.

— Калав мĕнле пуçланать? 1-мĕш пайра мĕн çинчен каланă? Ача хăйне пахча шанса хăварнине мĕнле кăмăлпа йышăннă? Вăл мĕншĕн питĕ савăннă? Çакна калавра мĕнле палăртнă? Тупса вулăр.

— 2-мĕш пайра мĕн çинчен каланă? Ача пахчана тăрăшса сыхланине мĕнле сăнласа панă? (Ир-ирех пахчана тухса ларатăп. Чăх-чĕпсем ура та ярса пусаймаççĕ, пикенсех хăвалама тытăнатăп. Тимлĕ сыхларăм.)

— 3-мĕш пайра мĕн çинчен каланă? Ашшĕ Микулая питĕ çилленнĕ-ши? Верукпа Микулай мĕн шутлаççĕ? Эсир мĕн шутлатăр?

— Ашшĕ мĕн пирки пăшăрханать? Калав мĕнле вĕçленет? Юлашки пайĕнче мĕн каланă?

— Сирĕн шутпа калавăн чи çивĕч саманчĕ хăшĕ?

**4.** Текстпа килĕшӳллĕ план йĕркелени (129 с.).

**5.** Пĕтĕмлетни. Ĕç тетрадĕнчи 1, 3-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

— Автор калаври ĕçсем çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать? Вăл калав ятне «Пахча хуралçи» тесе кăштах шӳтлĕн, тĕксе каланă. Сирĕн шутпа калавăн тĕп шухăшĕ мĕнле?

**6.** Асра юлнă саманта сăнласа калани. Ӳнерçĕ пулнă пулсан эсир калаври хăш саманта сăнлакан ӳкерчĕк тунă пулăттăр? Ăна сăмахпа сăнласа парăр.

**7.** Киле ĕç пани. Калава вуласа ĕç тетрадĕнчи 2, 4—6-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

# 42-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А. Кăлканăн «Кĕтӳç» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (26—27 с.).

**Урок теми:** Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлав кĕвĕлĕхĕ, сăнарлăхĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— сăвăласа çырнă хайлавсене туйăмпа йышăнас ăсталăха аталантарасси;

— сăвăлла хайлав кĕвĕлĕхне илтме-туйма хăнăхтарса пырасси;

— сăввăн чĕлхине, сăнарлăх мелĕсене сăнаттарасси;

— чĕр чунсене хĕрхенме, юратма вĕрентесси.

## Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу.

— Эпир ялта пурăнатпăр. Ял халăхĕ мĕн ĕçлесе пурăнать? Кашни ĕç хăçан ăнса пырать, савăнтарать, чуна çĕклет? *(Пĕтĕм кăмăлтан ĕçлесен.)*

**2.** А. Кăлканăн «Кĕтӳç» сăввине итлени. (Сăвва учитель вулать.)

— Сăвва итленĕ май сирĕн мĕнле кăмăл-туйăм çуралчĕ?

**3.** Сăвва ачасем хăйсем тĕллĕн вулани, тишкерни, словарь ĕçĕ *(каланча, Шетмĕ, тапăр).* Сăвăра кам çинчен каланă?

— Мучи ăçта кĕтӳ кĕтет? Çав вырăна мĕнле сăмахсемпе сăнланă? Вĕсене мĕнле каламалла? Тупса вулăр.

— Мĕкĕте кĕтӳçе пăрусем мĕншĕн юратаççĕ? Вăл пăрусемпе еплерех калаçать? Пăрăвĕсене хăйсене мĕнле сăнарланă? Çав йĕркесене мĕнле туйăмпа вуламалла? Тупса вулăр.

— Мучи сăмахĕсене мĕнле вуламалла?

**4.** Сăвва палăртуллă вулани.

**5.** Пĕтĕмлетни.

— Сăвăра мучие мĕнле сăнланă?

— Автор мучи çинчен мĕнле кăмăлпа каласа парать?

**6.** Ĕç тетрадĕнчи 1, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлани.

**7.** Сăвă тăрăх ăславлă ĕçсем йĕркелени.

— Сире сăвăра кама сăнарлани ытларах килĕшрĕ? Ӳнерçĕ пулнă пулсан мĕнле ӳкерчĕк тунă пулăттăр? Çавна сăмахпа сăнласа парăр.

**8.** Киле ĕç пани. 1) Сăвва палăртуллă вулама вĕренмелле. 2) Ĕç тетрадĕнчи 2—4-мĕш ĕçсене пурнăçламалла.

# 43-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери П. Яккусен ҫырни «Кӑткӑ Арӑсланӗ» калав; А. Кӑлканӑн «Кӗтӳҫ» сӑвви; ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсем (28—29 с.).

**Урок теми:** Калавҫӑ кӑмӑлӗ хайлавра палӑрни. Автор тата калавҫӑ.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— вулав пахалӑхне (палӑртулӑх, уҫӑмлӑх, хӑвӑртлӑх) ӳстересси;

— хайлавра автор кӑмӑлӗ палӑрнине туйма хӑнӑхтарасси;

— ҫут ҫанталӑка юратма, унӑн илемӗпе киленме хавхалантарасси.

## Урок йӗрки

**1.** А. Кӑлканӑн «Кӗтӳҫ» сӑввипе ӗҫлени.

**2.** Калавҫӑ кӑмӑлне хайлав текстӗнче шырани.

— Кӗтӳҫ сӑмаха илтсен пирӗн ума мӗнле сӑнар тухса тӑрать? *(Вӑл шлепкепе, плащ тӑхӑннӑ. Унӑн аллинче туя тата пушӑ.)*

— Туйипе пушши мӗн тума кирлӗ? *(Выльӑхсене хӑвалама, хӑмсарма, ҫаптарса илме.)*

— «Мӗкӗтен аллинче пушӑ мар, пӗчӗкҫӗ шӑхлич кӑна» тет автор. Пӑрусем «ачаш, ҫепӗҫ». Ҫавӑнпа та ӗнтӗ мучи вӗсене пушӑпа хӑратмасть. Вӗсене вӑл мӗнле мелпе пухать? *(Шӑхлич каласа.)*

— Кашни хайлаврах автора мӗн хумхантарнине куратпӑр. Ку сӑвӑра автора кӗтӳ кӗтме шӑхличпе те май пурри тӗлӗнтернӗ. Вӑл ҫакӑншӑн чӗререн савӑнса хайлать те хӑй сӑввине. Кӗтӳҫсем усал ҫынсем мар. Выльӑха юратаҫҫӗ. Мӗкӗте хӑй пӑрӑвӗсемпе ҫынсемпе калаҫнӑ пек калаҫать.

Пӗтӗмлетӳ. Кашни автор пурнӑҫра вӑл е ку ӗҫе, пулӑма сӑнать, ун ҫинчен е тарӑхса, е савӑнса, е пӑшӑрханса ҫырса кӑтартать. Эпир вулатпӑр та автора мӗн хумхантарнине туйса илетпӗр, автор шухӑшӗпе килӗшетпӗр. Пурнӑҫа ҫыравҫӑ куҫӗпе тинкерсе малтан курманнине, асӑрхаманнине куратпӑр, асӑрхатпӑр. Ҫапла майпа ҫыравҫӑ вулавҫӑпа калаҫать, лайӑхрах, ырӑрах пулма вӗрентет.

**3.** «Кӑткӑ Арӑсланӗ» калава вулани. (Пӗрремӗш абзаца учитель сасӑпа вулать. Ытти абзацсене ачасем ӑсра вулаҫҫӗ.)

**4.** Вак-тӗвексене палӑртни. («Тимлӗ вулавҫӑ-и эпир?»)

— Калавҫӑ ашшӗ мӗнпе ӗҫлет? *(Тракторпа.)*

— Пĕррехинче вĕсем мĕнле ĕç тунă? *(Пахча алăкĕ тунă.)*
— Кумаляк малтан Арăслана курнă-и? *(Курман.)*

**5.** Кĕнекери ыйтусем тăрăх хайлава тишкерни (132 с.).

**6.** Пĕтĕмлетни. Ку хайлавра автор хурт-кăпшанкăсен пурнăçне этем пурнăçĕнчи пахалăхсемпе танлаштарса çырса кăтартать. Автор пуплевĕнчен çакă палăрать: Вăл — 5—6 çулсенчи ача. Хурт-кăпшанкăсен пурнăçне хăй ăсĕн шайĕнче курать. Хăй шухăшласа кăларнă тĕнчере усалли лайăххине, ыррине пусахласшăн пулни ăна пăшăрхантарать.

**7.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрадĕнчи «Петĕр Яккусен. Кăткă Арăсланĕ» рубрикăри ĕçсене тумалла.

## 44-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А. Алкан «Юр çунă», Н. Шелепин «Юр», А. Алкан «Çĕнĕ çул юрри» сăввисем; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (30—31 с.).

**Урок теми:** Çут çанталăк пулăмĕсене сăмахпа ӳкерни. Сăнлав тумалли хатĕрсемпе мелсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**
— çут çанталăк пулăмĕсене сăмахпа ӳкернине сăнаттарасси;
— чĕлхен илемлĕхпе сăнарлăх мелĕсене чухлас ăслайсене калăпласси;
— çут çанталăк илемне асăрхама, унпа киленме хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Юр çунă» сăвва сасăпа вулани. (Малтан учитель вулать, иккĕмĕш хутĕнче — ачасем.)

**2.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**3.** «Юр» сăвва сасăпа вулани. (Малтан учитель вулать, иккĕмĕш хутĕнче — ачасем.)

**4.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**5.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туни.

**6.** «Çĕнĕ çул юрри» сăвва сасăпа вулани. (Малтан учитель вулать, иккĕмĕш хутĕнче — ачасем.)

**7.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**8.** Пĕтĕмлетни. Çут çанталăкри кашни вăхăт, кашни пулăм илемлĕ. Эпир час-часах çак илеме асăрхамастпăр. Кашни кун куç умĕнче пулнăран хăнăхса çитетпĕр те нимрен те

тĕлĕнместпĕр. Çыравçăсем вара ыттисем курманнине курма пултараççĕ. Хăйсем мĕнрен тĕлĕннине хут çине çырса хураççĕ те пире вулама сĕнеççĕ. Эпир вулатпăр та тĕлĕнетпĕр: мĕнле асăрхаман-ха çакна, тетпĕр. Куçпа курнине сăрăпа та ўкерсе кăтартма пулать, сăмахпа та. Сăрăпа ўкерекене ўнерçĕ теççĕ. Сăмахпа ўкерекенсем — çыравçăсем.

**9.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туса пĕтермелле. Сăвăсенчен пĕрне пăхмасăр калама вĕренмелле.

## 45-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Матвеевăн «Раштав уйăхĕ» калавĕ; «Декабрь уйăхĕ» слайдсем.

**Урок теми:** Ансат ăслăлăх хайлавĕн уйрăмлăхĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— ансат ăслăлăх хайлавĕсен уйрăмлăхĕсемпе паллаштарасси;

— вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене аталантарасси;

— çут çанталăкри илеме асăрхама, унпа киленме хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Раштав уйăхĕ» хайлава вулани. (1-мĕш абзаца учитель сасăпа вулать. Малалла ачасем ăсра вулаççĕ.)

**2.** Вак-тĕвексене палăртни. («Тимлĕ вулавçă-и эсир?»)

— Текстра хăш уйăх çинчен сăмах пырать? *(Раштав е декабрь çинчен.)*

— Шăшие мĕн сыхласа çўренĕ? *(Тилĕ.)*

— Сăсар мĕнсене хăваланă? *(Пакшасене.)*

— Сырăшсем патне хăш кайăксем пуçтарăнаççĕ? *(Чакаксем, чанасем, ула кураксем.)*

— Мĕншĕн пăр касса вак тумалла? *(Шыва уçăлтарма.)*

— Хăш кун çулталăкра чи кĕски? *(Раштавăн 22-мĕшĕ.)*

**3.** Хайлава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Ачасем хайлав содержанине план ыйтăвĕсем тăрăх пĕрерĕн каласа пани.

**5.** Пĕтĕмлетни. Ансат ăслăлăх хайлавĕсенче илемлĕхпе сăнарлăх мелĕсемпе тата хатĕрĕсемпе усă курни сахал. Тĕп тĕллев сăнарласа мар, ăнлантарса парасси. Ăслăлăх текстчĕсен тытăмĕ çакăн пек: тĕп шухăша палăртни; ăна çирĕплетекен тĕслĕхсене асăнни, пĕтĕмлетў туни. Ăслăлăх

тексчĕн чи ансат тĕслĕхĕ: *Эпĕ хамăн аннене питĕ юрататăп* (тезис). *Манăн анне чи хитри* (1-мĕш аргумент). *Унпа ялти кашни çын хисеплесе калаçать* (2-мĕш аргумент). *Ăна ĕçчен, вăр-вар хĕрарăм тесе сума сăваççĕ* (3-мĕш аргумент). *Çавăнпа эпĕ хамăн аннене юрататăп* (пĕтĕмлетӳ). «Раштав уйăхĕ» текстра тезиса асăнман, пĕтĕмлетӳ туман (вĕсене чухлама çеç пултаратпăр), аргументсене кăна асăнса тухнă.

**6.** Киле ĕç пани. Текст содержанине каласа пама хатĕрленмелле.

## 46-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А. Пушкинăн «Хĕллехи каç» сăвви; Хумма Ç. «Хĕллехи вăрман» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (32—33 с.); «Хĕл пейзажĕсем» слайдсем е видеосюжет.

**Урок теми:** Сăмахлă ӳкерчĕксем туни. Сăнарлăх мелĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— сăмахлă ӳкерчĕклĕ сăвăсемпе паллаштарасси;

— сăвва палăртуллă вулас ăслайсемпе хăнăхусене тарăнлатасси;

— тимлĕхе çивĕчлетесси, çут çанталăка юратма, çут çанталăкри илеме курма хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Хĕллехи каç» сăвва сасăпа вулани. (Малтан учитель вулать, унтан ачасем учителе евĕрлесе палăртуллă вулаççĕ.)

**2.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе усă курса тишкерни.

**3.** Пĕтĕмлетни. Куçпа курнине çеç мар, хăлхапа илтнине те ӳкерсе кăтартма пулать. А. Пушкин çил-тăвăл вăхăтĕнче илтĕнекен сасăсене выç кашкăр уланипе, ача макăрнипе танлаштарать.

**4.** «Хĕллехи вăрман» сăвва сасăпа вулани. (Малтан учитель вулать, унтан ачасем учителе евĕрлесе палăртуллă вулаççĕ.)

**5.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**6.** Пĕтĕмлетни. Поэт хĕллехи вăрмана асран кайми ӳкерсе-сăнласа парать. Хальччен илтмен сăмахсемпе те усă курмасть вăл, халăх чĕлхинчи ахаль сăмахсемпех хăй мĕн асăрхани çинчен хитре ӳкерчĕксем тăвать. Çап-çара йывăççем шавламасăр ларни, пас тытнă туратсем мăннăн

курăнни, кĕртсем тăрăх тилĕ чупнин палли, йĕлтĕр йĕрĕ, пуç çине юр чăмакки ÿккелени, çăка тăрри çилпе лăстăртатса силленни ĕмĕрлĕхе асра юлать.

**7.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлани.

**8.** Киле ĕç пани. Сăвăсенчен пĕрне пăхмасăр калама вĕренмелле. Вариант: Кукаçи-кукамипе е асанне-асаттепе хĕллехи каçсене мĕнле ирттерни çинчен каласа пама хатĕрленмелле. Вариант: Сăмахпа каласа «Хĕллехи вăрман» ÿкерчĕк тумалла.

## 47-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Г. Лучăн «Кукăр сăмса» калавĕ; «Пирĕн пата хĕл каçма вĕçсе килекен кайăксем» слайдсем е видеосюжет.

**Урок теми:** Калаври ĕç аталанăвĕ. Калавçă кăмăлĕ паллăрни.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— калава пĕлтерĕш тăрăх пайсене уйăрас хăнăхусене аталантарасси;

— калаври ĕç аталанăвне палăртма вĕрентесси;

— вулав хăнăхăвĕсене тарăнлатасси;

— çут çанталăк вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарасси, ăна юратма хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Кукăр сăмса» калавăн 1-мĕш пайне сасăпа вулани. (Пĕри вулать, ыттисем кĕнеке тăрăх йĕрлеççĕ.)

**2.** Вак-тĕвексене палăртни. («Тимлĕ вулавçă-и эсир?»)

— Утма мĕншĕн çăмăл мар? *(Юр тарăн пулнăран.)*

— Мучи мĕн ятлă? *(Çтаппан ятлă.)*

— Ĕç мĕнле вăрманта пулса иртет: чăрăшлăхра е вĕтлĕхре? *(Чăрăшлăхра.)*

— Çакна ăçтан пĕлтĕмĕр? *(Яштака йывăççене асăннă.)*

**3.** Калавăн 2-мĕш пайне сасăпа вулани. (Пĕри вуланни, ыттисем кĕнеке тăрăх йĕрлеççĕ.)

**4.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Çтаппан мĕн ĕçри çын: утарçă, сунарçă е..? *(Вăл вăрман хуралçи.)*

— Кукăр сăмса йăви хăш йывăç çинче пулнă? *(Чăрăш çинче.)*

— Йăва миçе метр çÿллĕшĕнче? *(Виçĕ метр.)*

— Йăвара пурĕ миçе чĕпĕ пулнă? *(Виççĕ.)*
— Йăвана мĕнлерех тунă? *(Çинçе туратран çирĕплетсе.)*

**5.** Калава кĕнекери ыйтусем тăрăх тишкерни.

**6.** Пĕтĕмлетни. Ĕç аталанăвĕсĕр калав пулмасть: пуçламăшĕ, аталанса пыни, чи çивĕч самант, ĕç вĕçленĕвĕ. Ку калавра мучипе ача вăрман тăрăх пыни ĕç пуçламăшĕ пулать; кайăк чĕппине тĕл пулни — ĕç аталанни; чи çивĕч самант — кукăр сăмса чĕппине хăй йăвине яни; кайăксем савăннипе ĕç вĕçленет.

**7.** Киле ĕç пани. Калав содержанине каласа пама хатĕрленмелле.

## 48-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Сладковăн «Хĕл каçни» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (33—34 с.); «Пирĕн патра хĕл каçакан кайăксем» слайдсем.

**Урок теми:** Автор юмахĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— кайăксен пурнăçĕ çинчен литература юмахĕ хайланин уйрăмлăхĕсене сăнаттарасси;
— шухăш вĕçевне аталантарасси;
— вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене çивĕчлетесси;
— çут çанталăкри тĕлĕнтермĕшсене асăрхама, çут çанталăка юратма хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Хĕл каçни» юмаха ăсра вулани.

**2.** Вак-тăвексене палăртни. («Тимлĕ вулавçă-и эсир?»)
— Шăрăх çĕр-шывсем тесе хăшĕсене асăннă? *(Инди, Африка, Кăнтăр Америка.)*
— Хăш кайăксем хĕл каçма çурçĕртен пирĕн пата килеççĕ? *(Шурă тăмана, уйăп, тĕпеклĕ шăхăрчăк, шурă çерçи, шурă вăрман чăххи.)*
— Тăманашăн чи тутли мĕн? *(Пилеш.)*
— Хăва кăчкине хăш кайăк юрататъ? *(Вăрман чăххи.)*
— Шурă тăмана мĕн юрататъ? *(Шăшисемпе мулкачсене.)*

**3.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлани.

**5.** Пĕтĕмлетни. «Кукăр сăмса» хайлавра кукăр сăмса хĕлле чĕпĕ кăларнине пĕлтĕмĕр. Ватти çамрăккине кайăксен

пурнăçĕнчи çак вăрттăнлăхпа паллаштарать. Пирĕн патра чакак çулла та, хĕлле те пурăнать. Шурă тăмана, уйăп, тĕпеклĕ шăхăрчăк тата вăрман чăххи вара хĕл каçма пирĕн пата çурçĕртен вĕçсе килеççĕ. Кашни мĕнле тăранса пурăннине, мĕне-мĕне юратнине тĕпчесе пĕлет те автор юмах ăслать. Ăслăлăх тексчĕсене вулама йывăртарах. Илемлĕ хайлав çăмăллăн вуланать.

**6.** Киле ĕç пани. Хăвăр пĕлекен пĕр-пĕр кайăк мĕнле хĕл каçни çинчен каласа пама хатĕрленмелле.

## 49-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери В. Эктелĕн «Юр пике» сăвви; ÿкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** В. Эктелĕн «Юр пике» сăвви. Çут çанталăк илемĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— ÿкерчĕкпе сăвва танлаштарса пĕрпеклĕхсемпе уйрăмлăхсене асăрхама хăнăхтарасси;

— вулав пахалăхне малалла аталантарасси;

— çут çанталăкри илеме асăрхама, унпа киленме хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Сăвăпа паллашни. (Малтан учитель сасăпа вуласа парать, ачасем кĕнеке тăрăх йĕрлеççĕ. Кайран ачасем ăсра вулаççĕ. Унтан — черетленсе, сасăпа.)

**2.** Вак-тĕвексене сăнани. («Тимлĕ вулавçă-и эсир?»)

— Ачасем Юр пикене мĕнрен тăваççĕ? *(Тин çеç çунă юртан.)*

— Вĕсем куç вырăнне мĕн лартаççĕ? *(Хура кăмрăк.)*

— Юр пике ачасене мĕн ăнлантарать? *(Çуркунне çывхарчĕ тет.)*

**3.** Ÿкерчĕксен альбомĕнчи тата учебникри ÿкерчĕксене сăнани.

— Хăш ÿкерчĕкре хĕвел тухичченхи, хăшĕнче хĕвел тухнă хыççăнхи саманта сăнланă? Хăшĕнче Юр пике хаваслă? Хăшĕнче тунсăхлă?

**4.** Ÿкерчĕксен альбомĕнчи ÿкерчĕксене сăрласа илемлетни, çĕнни ÿкерсе хуни.

**5.** Сăвва учебникри ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**6.** Пĕтĕмлетни. Ку — шӳтлĕ, кăмăла çĕклекен сăвă. Юр пикене хĕвел ирĕлтерет пулин те чĕрене тунсăх пусмасть. Эпир пĕлетпĕр: кăçал Юр пике ирĕлсе каять пулин те тепĕр хĕл татах юр кĕлетке туса лартма пулать.

**7.** Киле ĕç пани. Ӳкерчĕке сăнаса ун тăрăх калав ăсламалла. Каласа пама хатĕрленмелле.

## 50-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери В. Давыдов-Анатрин «Юратнă анне» сăвви; Б. Даниловăн «Хăш вăхăтра çывăрать-ши анне?» калавĕ.

**Урок теми:** Тĕнчере чи хакли — ман юратнă анне. Сăмахлă ӳкерчĕк.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— хайлав планĕ тăвас ăслайсене малалла аталантарасси;

— вулав пахалăхне малалла çивĕчлетесси;

— тăванлăх туйăмĕсене хаклама, çывăх çынсене юратма, вĕсене хисеплеме хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Юратнă анне» сăвăпа паллашни. (Малтан учитель сасăпа вуласа парать. Кайран ачасем черетленсе палăртуллă вулама вĕренеççĕ.)

**2.** Сăвва учебникри ыйтусем тăрăх тишкерни.

**3.** «Ман юратнă аннеçĕм» сăмахлă ӳкерчĕк туни, ун çинчен каласа пани.

**4.** «Хăш вăхăтра çывăрать-ши анне?» калава вулани.

**5.** Калава учебникри ыйтусем тăрăх тишкерни.

**6.** Калава ыйтусем тăрăх виçĕ пая уйăрни.

**7.** Пĕтĕмлетни. Кирек камшăн та тĕнчере чи пахи, чи хакли — унăн амăшĕ. Анне пулсан тĕнче те пуянрах, хĕвел те ăшăрах. Анне пурри — питĕ пысăк пуянлăх.

**8.** Киле ĕç пани. «Эпĕ аннене пулăшни» калав ăслани, каласа пама хатĕрленни.

## 51-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери В. Сухомлинскин «Ан кӳренсем, атте!» калавĕ; ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Кулăш тумалли мелсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— кулăш мелĕсемпе паллаштарасси;

— вулав палăртулăхне аталантарасси;

— ашшĕ-амăшне хисеплеме хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Ан кӳренсем, атте!» калава вулани.

**2.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Кӳршĕ Витя мĕнпе палăрнă? *(Задачăсем лайăх шутлать.)*

— Марийкăпа Наташа мĕнпе паллă? *(Вĕсем аван ӳкереççĕ.)*

— Степан мĕн ăсти? *(Йывăçран шăпчăк касма ăста.)*

— Петрик мĕн тунă? *(Пăрăх тăрăх çурт тăррине хăпарса карнис хĕррине туса тухнă.)*

— Миколка пирки мĕн каланă? *(Ним те каламан.)*

— Миколка ашшĕне мĕнпе тĕлĕнтерме шутлать? *(Чи пысăк йывăç çине улăхма шутлать.)*

**3.** Калава учебникри ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Пĕтĕмлетни. Миколка айван ача. Вăл чи пысăк йывăç çине улăхса ашшĕне тĕлĕнтересшĕн. Айванскер, вăл унашкал тĕлĕнтерме шутлани вырăнсăр пулнине чухламасть. Ырă, лайăх ĕçсемпе тĕлĕнтермелле. Ача çакна ăнланмасăр айванланни калава кулăш сĕмĕ хушать. Айван ача йывăç тăррине улăхса кайса тĕлĕнтерме шутлани кулăшла. Чăннипе автор Миколкăна юрататать, унран ăшшăн кулать.

**5.** Калава рольпе вулани.

**6.** Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлени; контурлă ӳкерчĕксене сăрласа илемлетни; пушă тăваткалсене ӳкерчĕксем туни.

**7.** Киле ĕç пани. Калава палăртуллă вулама вĕренмелле.

## 52-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери В. Сухомлинскин «Амăшĕ мĕншĕн макăрнă?» калав; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (35—36 с.).

**Урок теми:** Текстра каламан автор шухăш-кăмăлĕ палăрни.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**
— текстра автор тӳррĕн каламан шухăша кăтартасси;
— тимлĕ вулав ăслайĕсене аталантарасси;
— тăванлăх туйăмĕсене тарăнлатма хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Хайлавра нумай чухне сăмахпа каламасăрах ăнланмалли шухăшсем пытанаççĕ. Вĕсем — автор мĕн каласшăн пулни. В. Сухомлинский калавĕсенче унашкал самантсене хайлав вĕçнелле шырамалла.

**2.** «Амăшĕ мĕншĕн макăрнă?» калава ăсра вулани.

**3.** Калава учебникри ыйтусем тăрăх тишкерни.

**4.** Пĕтĕмлетни. Амăшĕ ывăлне салтака ăсатса янă чухне макăрать. Алиса вăл мĕншĕн макăрнине ăнланать. Микола салтакран таврăнсан та амăшĕ макăрать. Алиса вăл мĕншĕн макăрнине ăнланмасть.

Автор ку калавра хăй шухăшне йĕркесем хыçне пытарнă. Вăл мĕн каласшăн пулнă-ши? (Этем савăннă чухне те, хурланнă чухне те макăрать. Хурлăх куççулĕ йӳçĕ. Савăнăç куççулĕ пылак. Туйăм вăйлă palăрнă чухне куççуле тытса чарма çук.)

**5.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçламалла.

## 53-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Калина Малинан «Тумла» сăвви; Н. Матвеевăн «Пуш уйăхĕнче» калавĕ.

**Урок теми:** Сăвă. Сăнлавлă калав.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**
— хайлав планне тăвас ăслайсене аталантарасси;
— вулав палăртулăхĕпе уçăмлăхне вăйлатасси;
— çут çанталăк илемне туйма хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Тумла» сăвăпа паллашни. (Малтанах учитель вуласа парать. Кайран ачасем черетленсе сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**3.** Пĕтĕмлетни. Сăвăра автор çут çанталăкри е пурнăçри пĕр-пĕр пулăма çырса кăтартать те хăйĕн туйăмĕсемпе шухăшне палăртса хăварать. Сăвă çаврăмне строфа теççĕ. Сăнлавлă тата уйлавлă калавра та çут çанталăкри е пурнăçри

пулӑмсене ҫырса кӑтартаҫҫӗ. Ку калавра уйлавлӑ калав паллисем те, сӑнлавлӑ хайлав паллисем те пур. Анчах кунта тӗп вырӑнта ытлашши ӳстермесӗр, тӗп-тӗрӗс ҫырса кӑтартасси.

**4.** «Пуш уйӑхӗнче» калава ӑшра вулани.

**5.** Вак-тӗвексене палӑртни.

— Чакак сасси мӗнлерех? *(Хӗллехинчен уҫӑмлӑрах та хаваслӑрах.)*

— Пулӑсем мӗн тӑваҫҫӗ? *(Тарӑн авӑрсенчен тухса ӑшӑхрах вырӑнсене хӑпарма тытӑнаҫҫӗ.)*

— Мӗнле чӗр чунсем кивӗ ҫӑмне тӑкаҫҫӗ?

— Ирӗлнӗ юр шывӗ мӗнрен усӑллӑ? *(Ку шыва ӗҫсен чӑх ҫӑмарта тума тытӑнать. Пӳлӗм чечекӗсене юр шывӗпе шӑварсан чечек хӑвӑртрах ҫурӑлать.)*

**6.** Калава кӗнекери ыйтусем тӑрӑх тишкерни.

**7.** Калав содержанине пайсем тӑрӑх каласа пани.

**8.** Киле ӗҫ пани. «Тумла» сӑвва пӑхмасӑр калама вӗренмелле.

## 54-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери «Ҫуркунне ҫитрӗ» калав; К. Ивановӑн «Нарспи» поэмин «Ҫуркунне ҫитсен» сыпӑкӗ; ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсем (37—38 с.); ӳкерчӗксен альбомӗнчи ӗҫсем.

**Урок теми:** Публицистика хайлавӗ. Пайрӑмсем (детальсем).

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— публицистика жанрӗпе паллаштарасси;

— вулав хӑвӑртлӑхӗпе палӑртулӑхне аталантарасси;

— ҫут ҫанталӑка юратма хӑнӑхтарасси.

### Урок йӗрки

**1.** «Ҫуркунне ҫитрӗ» калава ӑсра вулани.

**2.** Кӗнекери ыйтусем тӑрӑх калава тишкерни.

**3.** Пӗтӗмлетни. Кунашкал хайлавра автор хӑйӗн шухӑшкӑмӑлне пӗр пытармасӑр, уҫҫӑн та хӗрӳллӗн каласа парать.

**4.** «Ҫуркунне ҫитсен» сӑвва вулани. (Малтан учитель, кайран ачасем — сасӑпа.)

**5.** Сӑвва кӗнекери ыйтусемпе ӗҫсем тӑрӑх тишкерни.

**6.** Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени.

**7.** Киле ĕç пани. 1) «Çуркунне çитсен» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле. 2) Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туса пĕтермелле.

## 55-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Шелепин «Пăр каять» сăвви; Н. Сладковăн «Упа йĕнни» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (38 с.).

**Урок теми:** Хĕвел пăхать, юр каять. Кĕçех çулла пуçланать. Хайлав тата ӳнерçĕ ӳкерчĕкĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— рифма çинчен пĕлнине малалла аталантарасси;

— тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр вулас хăнăхусене çирĕплетесси;

— вуланă текст тăрăх ыйтусене хуравлама, текста ансаттăн тишкерме хăнăхтарасси;

— çут çанталăка юратма, унăн илемне савма хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Пăр каять» сăвăпа паллашни. (Учитель сасăпа вуласа панине ачасем кĕнеке тăрăх йĕрлеççĕ. Унтан хăйсем сасăпа вулаççĕ.)

**2.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**3.** Кĕнекери ӳкерчĕке сăнани.

— Ӳкерчĕкре çулталăкăн хăш вăхăтне сăнланă? *(Çуркунне. Пăр кайнă вăхăт.)*

— Эсир пăр кайнине курнă-и? Тавралăхра мĕн илтĕнетчĕ? ***(Тавралăх пăр катрамĕсем пĕр-пĕрин çумне сĕртĕнсе, пĕр-пĕрин çумне пырса капланса, хаярланса юхакан шыв сассипе тулса ларнăччĕ.)***

— Халĕ ӳкерчĕке сăнар. Чи малтанах ӳкерчĕкри сăнарсене ят парар. *(Тĕслĕх: ӳкерчĕкре— Маринепе Сентти тата Петĕр.)*

— Вĕсем мĕнрен хăраса ӳкнĕ? ***(Пăр çине Улайкка анчăк лекнĕ те ним тума аптраса ларать. Çыран хĕрне тухма пултараймасть.)***

— Мĕнле шутлатăр: мĕн пирки лекнĕ вăл пăр катăкĕ çине? (Ачасен хуравĕ.)

— Малалла мĕн пулнă-ши? ***(Тĕслĕх: Петĕр пакур тупса пырать те Улайкка ларса пыракан пăр катăкне çаклатса***

*илсе çыран хĕрне туртса кăларать. Улайккана çăлнăшăн ачасем питĕ савăнаççĕ.)*

**4.** Ӳкерчĕкпе усă курса «Улайккана çăлни» калав ăслани, каласа пани.

**5.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**6.** Пĕтĕмлетни. Рифма — сăвă йĕркисенче сасăсене тата сыпăксене темиçе хут калани, вĕсем пĕр пек янăраса вĕçленни. Сăвă рифмăсăр пулмасть.

**7.** «Упа йĕнни» калава вулани.

**8.** Хайлава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**9.** Киле ĕç пани. «Улайккана çăлни» калав ăсласа çырмалла.

## 56-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А. Николаевăн «Çурхи сасă» калавĕ; М. Козловăн «Çур çеçкисем» калавĕ.

**Урок теми:** Çуркунне. Çут çанталăка сăнани.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— шухăшпа тĕллеве кура текста хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр вулама хăнăхтарасси;

— кулленхи пурнăçри илеме асăрхас, çут çанталăка сăнаса пĕтĕмлетӳсем тăвас ăслайсене аталантарасси;

— çут çанталăка юратма хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи сăмах. Паян тата тепĕр икĕ хайлавпа паллашатпăр: А. Николаевăн «Çурхи сасă» тата М. Козловăн «Çур çеçкисем» калавĕсемпе. Ячĕсенченех пĕлме пулать-и калавсене мĕн çинчен çырнине? *(Çурхи сасăсем çинчен тата çур çеçкисем çинчен.)*

— Çуркунне мĕнле сасă илтĕнме пултарать-ши? *(Тумла юхнă сасă, кайăксем юрланă сасă.)*

— Çур çеçкисем тесе мĕне каланă-ши? *(Çеçпĕл çеçкисене.)*

— Халĕ хамăрăн шухăш тĕрĕс е тĕрĕс мар пулнине калавсене вуласа палăртар.

**2.** «Çурхи сасă» калавпа паллашни. (Учитель сасăпа вуласа парать. Унтан ачасем палăртуллă вулаççĕ.)

**3.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** «Çур çеçкисем» калава ăсра вулани.

**5.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Çеçпĕле урăхла мĕнле курăк теççĕ? Мĕншĕн? *(Ӳпке курăкĕ. Вăл ӳпке чирĕнчен сипленме пулăшать.)*

— Çеçпĕлпе мĕнле усă кураççĕ? *(Салат тăваççĕ, чĕрĕлле те, яшкана ярса та çиеççĕ.)*

**6.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕççем тăрăх тишкерни.

**7.** Çакăн евĕрлĕ хайлавсенчен пĕрне аса илни, унăн содержанине каласа пани. (Тĕслĕх: «Пуш уйăхĕнче». 157—158 с.)

## 57-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Мартыновăн «Çуркунне» сăвви; А. Игнатьевăн «Пĕрремĕш аслати» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕççем (39—40 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕççем.

**Урок теми:** Сăвăри сăмахсен йĕрки. Танлаштару.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— текста ыйтусем тăрăх тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене аталантарасси;

— вуланă чух сывлăша тĕрĕс çавăрса ярас хăнăхусене çирĕплетесси;

— çут çанталăкри тĕлĕнтермĕшсене курса савăнма, киленме хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Çуркунне» сăвва вулани. (Малтанах учитель палăртуллă вуласа парать. Унтан ачасем учителе евĕрлесе вулаççĕ.)

**2.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕççем тăрăх тишкерни.

**3.** Пĕтĕмлетни. Сăвă кĕвĕллĕрех, янăравлăрах пултăр тесе сăвăçсем яланхи сăмах йĕркине улăштараççĕ. «Хирулăх иртенпех тăрин илемлĕ юррипе янрать» теме пулатчĕ. Сăвăра урăхларах çырнă. «Канма пĕлмен пыл хурчĕсем улмуççи çинче сĕрлеççĕ» темеллеччĕ яланхи йĕркепе. Поэт урăхларах çырать. «Ача-пăча тăмран тетте çуртсем сăрт çамкинче тăвать» тесе калас вырăнне те сăвăç сăмах йĕркине улăштарать. «Хĕвел хăй хĕлхемне ялсем çине те улăха сапать» теесси вырăнне те, «Вăрман тумне симĕслетет, тавралăха кĕрнек кӳрет» вырăнне те сăвăç сăмах йĕркине урăхла йĕркелет.

**4.** «Пĕрремĕш аслати» калава ăсра вулани.

**5.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕççем тăрăх тишкерни.

**6.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**7.** Киле ĕç пани. Ӳкерчĕксен альбомĕнчи тата ĕç тетрадĕнчи ĕçсене тумалла.

## 58-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери М. Пришвинăн «Тискер кайăксем» калавĕ; М. Волкован «Пăши пăрушĕ» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (41 с.).

**Урок теми:** Хайлав ячĕ, содержанийĕ тата тĕп шухăшĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— хайлав ăшлăхĕпе тулашĕ пĕр-пĕринпе çыхăнса тănине ăнлантарасси;

— сăмахсене, сасăсене тĕрĕс каласа вулас ăслайсене аталантарасси;

— чĕр чун тĕнчине юратма хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Хайлав ячĕ, содержанийĕ тата тĕп шухăшĕ пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. «Тискер кайăксем» калав ятĕнчен унта мĕн çинчен çырнине пĕлме пулать-и?

**2.** «Тискер кайăксем» калава сасăпа вулани.

**3.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

— Калавăн тĕп шухăшĕ хăш йĕркесенче палăрать? (Усал, хаяр çынсене «тискер кайăк пекех» тени пач тĕрĕс мар. Ку тискер кайăксемшĕн — кӳренмелли сăмах.)

**4.** «Пăши пăрушĕ» сăвва сасăпа вулани. (Малтан — учитель, кайран — ачасем вулаççĕ.)

**5.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

— Сăвăра шухăш-кăмăлпа туйăм-сунăм палăрать. Ку сăвă ачашлăхпа хĕрхенӳ туйăмĕ çуратать.

**6.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçлани.

— Чĕр чунсен пепкисене çапла чĕнеççĕ: кушак çури, тилĕ çури, тигр çури, кайăк чĕппи, пăши пăрушĕ, тиха, пăрушка.

**7.** Киле ĕç пани. «Пăши пăрушĕ» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

## 59-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери Г.Лучӑн «Ай, пакша!» калавӗ; ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсем (42 с.); пакша тата сӑсар ӳкерчӗкӗсем (слайдсем).

**Урок теми:** Хайлаври самантсем.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— хайлавра ҫырса кӑтартнӑ ӗҫӗн саманчӗсене чухлас хӑнӑхусене малалла ҫивӗчлетесси;

— сасса тӗрӗс улӑштарса вулас ӑслайсене аталантарасси, вулав тимлӗхне тарӑнлатасси;

— чӗр чун тӗнчине юратма хӑнӑхтарасси.

### Урок йӗрки

**1.** «Ай, пакша!» калава вулани.

**2.** Вак-тӗвексене палӑртни. («Тимлӗ вулавҫӑ-и эпир?»)

— Калавҫӑ мӗн чухлӗ кӑмпа пухнӑ? *(Ҫур карҫинкка.)*

— Вӑл ӑҫта ӳсет? *(Юман тункати ҫинче.)*

— Тӑсмакраххи мӗнле чӗр чун пулнӑ? *(Сӑсар.)*

**3.** Калава кӗнекери ыйтусемпе ӗҫсем тӑрӑх тишкерни.

**4.** Калава пайсене уйӑрни, тишкерни.

— Калавӑн кашни пайӗнче мӗн ҫинчен каланӑ? *(1) Калавҫӑ кӑнтӑрлаччен ҫӳресе те ҫур карҫинкка кӑмпа ҫеҫ тупни, унщӑн кӑмӑлсӑрланни ҫинчен. 2) Йывӑҫ тӑрринчен ун ҫине пакша сикни ҫинчен. 3) Пакша тӑшманӗ сӑсар ӑна сыхласах тӑни ҫинчен. 4) Пакша йывӑҫсем ҫине хӑпарса кайни ҫинчен.)*

**5.** Калав планне йӗркелесси. *(1) Ӑнӑҫсӑр кун. 2) Пакша хӳтӗлекене шырать. 3) Сӑсар — пакша тӑшманӗ. 4) Пакша каллех ирӗкре.)*

**6.** Ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсене туни.

— Хайлавӑн тӗп шухӑшне пӗлтерекен сӑмахсене палӑртни.

**7.** Йӗркеленӗ план тӑрӑх калав содержанине виҫҫӗмӗш сӑпатран каласа пани.

**8.** Киле ӗҫ пани. «Ай, пакша!» текстӑн кӗске изложенине ҫырса килмелле.

## 60-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Хв. Уярăн «Пурăш» калавĕ; А. Хумăн «Кăткăсем» сăвви; Р. Сарпин «Улай» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (42 с.).

**Урок теми:** Хайлав теми тата ячĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— хайлав темипе ячĕ çинчен каласа парасси;
— сасăллă тата ăсри вулав ăслайĕсене аталантарасси;
— текста тишкерсе пахалас хăнăхусене çирĕплетесси;
— чĕр чун тĕнчине хисеплеме вĕрентесси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Хайлав теми тата унăн ячĕ пĕр пĕлтерĕшлĕ мар. Паян «Пурăш» калава, «Кăткăсем» тата «Улай» сăвăсене вулатпăр. Ячĕсене пăхса ку хайлавсенче мĕн çинчен çырнине пĕлме пулать-и? (Пĕрремĕшĕнче пурăш çинчен, иккĕмĕшпе виççĕмĕшĕнче кăткăсем тата Улай ятлă йытă çинчен.)

— Тĕрĕс. Хайлавсен теми мĕнле? *(Чĕр чунсем — пирĕн туссем.)*

— Çакна ăçтан пĕлтĕмĕр? *(Хайлавсене çакăн пек ят панă.)*

**2.** «Пурăш» калава ăсра вулани.

**3.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Пурăша йытă çĕнтерме пултарать-и? *(Пурăша сайра йытă кăна çĕнтерме пултарать.)*

— Пурăш чăркăш чĕр чун-и? *(Пурăш, хăй вăйлă пулин те, чăркăш чĕр чун мар.)*

— Пурăш мĕнпе тăранса пурăнать? *(Ӳсен-тăран тымарĕпе, хурт-кăпшанкăпа, шăшисемпе тата шапасемпе.)*

— Пурăш кăнтăрлахи е çĕрлехи чĕр чун? *(Çĕрлехи.)*

**4.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**5.** «Кăткăсем» сăвва сасăпа вулани.

**6.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**7.** «Улай» сăвва сасăпа вулани.

**8.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**9.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене пурнăçламалла.

# 61-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Г.Лучăн «Чĕкеçсем мĕншĕн сивĕннĕ?» калавĕ; ĕç тетраденчи ĕçсем (43—44 с.).

**Урок теми:** Г.Луч. «Чĕкеçсем мĕншĕн сивĕннĕ?» Калав тата сăнлав.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— текста тишкерсе пахалас ăслайсене малалла аталантарасси;

— вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене тарăнлатасси;

— чĕр чунсене хӳтĕлеме, вĕсене пулăшма хăнăхтарасси.

## Урок йĕрки

**1.** Калавăн 1-мĕш пайне сасăпа вулани.

**2.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Петĕр миçере? *(Саккăрта.)*

— Петĕр сарайне мĕнсем иленнĕ? *(Чĕкеçсем.)*

— Чăх çăмарти илме хăпарсан ача мĕн асăрхать? *(Чĕкеç йăвине асăрхать.)*

— Вăл кун çинчен кама каласа парать? *(Ванюк тантăшне.)*

**3.** Вуланин содержанине каласа пани.

**4.** Калавăн 2-мĕш пайне вулани.

**5.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Ачасем чĕкеç йăвине мĕн хурса параççĕ? *(Тĕксем.)*

— Тепĕр кунне Петĕр мĕнрен тĕлĕнет? *(Йăвара чĕкеç çуккинчен.)*

— Ванюк мĕн каласа лăплантарать? *(Ыран вĕçсе килĕ тесе.)*

— Кайăксем таврăннă-и? Мĕншĕн таврăнман? *(Вĕсем хăйсем йăвине кам та пулсан пырса тĕкĕнсен сивĕнеççĕ.)*

Пĕтĕмлетӳ. Ачасем лайăх тăвас тесех кайăксене пулăшма шутлаççĕ. Анчах та ырри вырăнне усалли пулса тухать. Пурнăçра час-часах çапла пулкалать. Ун пек ан пултăр тесен, асăрханмалла.

**6.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**7.** Ĕç тетрадĕнчи 1—3-мĕш ĕçсене туни.

**8.** Киле ĕç пани. Ĕç тетрадĕнчи 4—6-мĕш ĕçсене тумалла. Вуласа тухнă калав содержанине каласа пама хатĕрленмелле.

# 62-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Г. Харлампьевăн «Юрă ăстисем» калавĕ; М. Стельмахăн «Текерлĕк» сăвви; ĕç тетраденчи ĕçсем (44—45 с.).

**Урок теми:** Кашни кайăк юрра ăста. Сăнлав мелĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— текста тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене тарăнлатасси;

— хăвăртлăха, янăравлăха, сасă хулăнăш-çинçĕшне, кĕвĕлĕхне кирлĕ пек улăштарса вулас хăнăхусене аталантарасси;

— чĕр чунсене хӳтĕлеме хăнăхтарасси.

## Урок йĕрки

**1.** «Юрă ăстисем» калава ăсра вулани.

**2.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Сăр шывĕ тавраш̆енче çуркунне мĕн калама çук илемлĕ? *(Улăхсем, уй-хирсем, вăрмансем.)*

— Хăш кайăк «параппан çапать»? *(Ула такка.)*

— Хăш кайăк юрлани флейтăпа шăхăртнинчен кая мар? *(Сар кайăк юрлани.)*

— Мĕнсем «сĕрме купăс калаççĕ»? *(Нăрăсем, шăрчăксем.)*

— Хăш кайăк пур майлă та юрлама пултарать? *(Шăнкăрч.)*

— Чĕкеç мĕн каласа юрлать? *(Пĕчĕкçеççĕ питлĕ-куçлă эреветлĕ теветлĕ тесе.)*

— Хăш кайăка çут çанталăкăн чаплă юрăçи теççĕ? *(Шăпчăка.)*

**3.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Пĕтĕмлетни. Çыравçăсем хăйсем калас тенине уçăмлăрах, сăнарлăрах, ăнланмалла пултăр тесе тепĕр япалапа е пулăмпа танлаштараççĕ.

**5.** «Текерлĕк» сăвва вулани. (Малтан учитель сасăпа вуласа парать. Кайран ачасем ăна евĕрлесе вулаççĕ.)

**6.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**7.** «Г. Харлампьев. Юрă ăстисем» рубрикăри ĕçсене пурнăçлани.

**8.** Киле ĕç пани. «Текерлĕк» сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

## 63-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери М. Пришвинăн «Çăмăлттай» калавӗ; ӗç тетраденчи ӗçсем (45—46 с.); ӳкерчӗксен альбоменчи ӗçсем.

**Урок теми:** М. Пришвин «Çăмăлттай». Темăпа тӗп шухăш.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— вуланине каласа парас хăнăхусене тарăнлатасси;

— ыйтусем тăрăх вуланă калава тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене аталантарасси;

— чӗр чунсене хӳтӗлеме хăнăхтарасси.

### Урок йӗрки

**1.** «Çăмăлттай» калава вулани.

**2.** Вак-тăвексене палăртни.

— Вьюшка мӗнлерех йытă? *(Хăлхисем чанк тăраççӗ, хӳри ункă пек, шăлӗсем çивӗч, шап-шурă.)*

— Вьюшкăна миçе шăмă панă? *(Икӗ шăмă.)*

— Пӗр шăммине мӗнсем вăрласа тараççӗ? *(Чакаксем.)*

— Иккӗмӗш шăммине хăшӗ вăрласшăн? *(Çăмăлттай чакак.)*

— Йытă ăна вăрлаттарать-и? *(Чакакӗ хăй кӗçех йытă çăварне çакланмасть.)*

**3.** Калава кӗнекери ыйтусемпе ӗçсем тăрăх тишкерни.

— Калав «Çăмăлттай» ятлă. Çăмăлттай вăл чакак. Калав вара — Вьюшка ятлă йытă хăйне улталаттарманни çинчен. Тата мӗнле ят пама пулать ку калава? («Ăслă йытă Вьюшка», «Вьюшка хăйне улталама памасть».

**4.** Ӗç тетраденчи ӗçсене пурнăçлани.

**5.** «Çăмăлттай» калав содержанине каласа пани.

**6.** Киле ӗç пани. Ӳкерчӗксен альбоменчи ӗçсене пурнăçламалла.

## 64-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери К. Чуковскин «Чăх чӗппи» калавӗ; ӗç тетраденчи ӗçсем (46 с.); ӳкерчӗксен альбоменчи ӗçсем.

**Урок теми:** К. Чуковский. «Чăх чӗппи». Калав. Сăнлав. План.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— калавçă кăмăлне асăрхас хăнăхусене аталантарасси;

— вулав уçăмлăхĕпе сăнарлăхне тарăнрах ăнланма пулăшасси;

— айванраххисене хӳтĕлеме, сапăр кăмăллă пулма хăнăхтарасси.

## Урок йĕрки

**1.** «Чăх чĕппи» калава вулани.

**2.** Вак-тăвексене палăртни.

— Чăх чĕппи мĕнлескер пулнă? *(Пĕчĕкçĕ.)*

— Вăл хăйне мĕнле тесе шутланă? *(Пысăк тесе.)*

— Унăн амăшĕ мĕн ятлă? *(Чăпарук.)*

— Вăл мĕн тĕслĕ пулнă? *(Чăпар тĕслĕ.)*

— Чăх чĕппи мĕн пирки шыв кӳлленчĕкне лекнĕ? *(Такăннипе.)*

— Шапа мĕн тесе кулать? *(Автана çитеймĕн тесе.)*

— Айван чăх чĕппинчен кулни килĕшӳллĕ-и?

**3.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туни.

**5.** Калав содержанине каласа пани.

**6.** Киле ĕç пани. Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене тумалла.

# 65-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери П. Эреветĕн «Сар автан» сăвви; В. Сухомлинскин «Мăр-мăр кушак мĕнрен тĕлĕннĕ» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (47 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Юратнă чĕр чунсем. Танлаштару. Темăпа тĕп шухăш.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— текста тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене малалла атлантарасси;

— вулав пахалăхĕсене тарăнлатасси. Вуланин содержанине каласа парас ăслайсене çивĕчлетесси;

— чĕр чунсене хисеплеме хăнăхтарасси.

## Урок йĕрки

**1.** «Сар автан» сăвва сасăпа вулани.

**2.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**3.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туни.

**4.** «Мăр-мăр кушак мĕнрен тĕлĕннĕ» калава вулани.

**5.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Мăр-мăр кушак аçи çамрăк-и е ватă? *(Ватă.)*

— Вăл мĕнле çывăрать?

— Чăх чĕппи мĕн шырать? *(Амăшне.)*

— Вăл мĕн çумне пырса выртать? *(Мăр-мăр çумне.)*

— Кушак мĕнрен тĕлĕнет? *(Чăх чĕппи ытла хăюллă пулнăран.)*

**6.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

— Калава мĕн çинчен çырнă? *(Мăр-мăрпа чăх чĕппи çинчен.)*

— Автор мĕн каласшăн пулнă? Ăна мĕн тĕлĕнтернĕ? *(Чăн пурнăçра кушак чăх чĕппин тăшманĕ пулмалла пек. Автора тăшманла чĕр чунсем пĕр-пĕринпе килĕштерни тĕлĕнтернĕ.)*

**7.** Киле ĕç пани. Ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсене пурнăçламалла.

## 66-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Г. Харлампьевăн «Çырла пиçсен» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (48 с.).

**Урок теми:** Г. Харлампьев «Çырла пиçсен». Калав планĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— калав планне тăвас ăслайсемпе хăнăхусене малалла аталантарасси;

— илемлĕ те палăртуллă, сăмахсене чăмламасăр вулас ăслайсене тарăнлатасси;

— çут çанталăк паллисене сăнама хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Этем çĕр çинче пĕччен пурăнмасть. Килте пурăнакан чĕр чунсемшĕн те, ирĕкре пурăнаканнисемшĕн те, хурт-кăпшанкăшăн та, тĕрлĕ ӳсен-тăраншăн та хĕвел пĕр пекех çутатать. Пирĕн пурин те пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалла. Ирĕкре этемшĕн хăрушă пулма, хăйсене хӳтĕлесе çын çине тапăнма пултараççĕ. Ирĕкре пурăнакан чĕр чунсемпе пĕччен чухне тĕл пуласран асăрханмалла.

**2.** «Çырла пиçсен» калава вулани.

**3.** Вулав тимлĕхне тĕрĕслени.

— Автор Палюк мучи патĕнче утарта мĕн чухлĕ пурăннă? *(Пĕр уйăх ытла.)*

— Вăл кашни кун мĕн пуçтарнă? *(Хурăн çырли, хăмла çырли.)*

— Палюк мучи арăмĕ мĕн ятлă? *(Настаç кинеми.)*

— Вĕсем мĕнпе апатланнă? *(Сĕтпе çырла хутăштарса çинĕ.)*

— Палюк мучи çырлана мĕнле савăт илсе кайнă? *(Пысăк витре, пĕр чĕрес.)*

— Уçланкăра çырла пулнă-и? *(Пĕрре те çук.)*

— Çырлана кам татса кайнă? *(Упа.)*

**4.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**5.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туни.

**6.** Киле ĕç пани. Калав содержанине кĕскен каласа пама хатĕрленмелле.

## 67-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Б. Заходерăн «Мулкач çури» юмахĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (48—49 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Б. Заходер. «Мулкач çури». Калав. Юмах.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— хайлава тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене малалла аталантарасси;

— вулав пахалăхне çивĕчлетесси;

— туслăхпа юлташлăх туйăмĕсене тарăнлатасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Мулкач çури» калава вулани.

**2.** Вулав тимлĕхне тĕрĕслени.

— Мулкач çури ăçта пурăннă? *(Вăрман уçланкинче.)*

— Йыт пулли ăçта пурăннă? *(Кӳлĕре.)*

— Вĕсем пĕр-пĕрне мĕнле саламлаççĕ? *(Йыт пулли хӳрине пăлтăртаттарать, мулкач тяппипе таплаттарать.)*

— Пĕр-пĕринпе тĕл пулсан кашни мĕн çинчен калаçать? *(Мулкач — кишĕр çинчен, йыт пулли хăмăш çинчен.)*

— Хăшĕ айванрах: мулкач çури е йыт пулли? Мĕншĕн çапла шутлатăр?

**3.** Юмаха кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Кĕнекери ӳкерчĕке сăнани.

— Ӳкерчĕкре туссем хушшинчи калаçăвăн хăш самантне сăнланă? *(Пурте çавăн пек: ӳсеççĕ те пач урăхланаççĕ. Хуртран лĕпĕш е вăрăм туна пулать, вăлчаран — пулă. Йыт пуллинчен вара, паллах — шапа.)*

**5.** Ĕç тетраденчи ĕçсене туни.

**6.** Киле ĕç пани. Ӳкерчĕксен альбоменчи ĕçсене тумалла (контурлă ӳкерчĕксене сăрласа илемлетни, пушă тăваткала ӳкерчĕк туни).

## 68-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Матвеевăн «Пĕр йăхри йывăçсем» калавĕ; ĕç тетраденчи ĕçсем (50 с.).

**Урок теми:** Н. Матвеев. «Пĕр йăхри йывăçсем». Калав. Сăнлав.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— илемлĕ литература хайлавĕпе ăслăх хайлавĕсене пĕрпĕринчен уйăрас ăслайсене малалла аталантарасси;

— вулав хăвăртлăхĕпе палăртулăхне çивĕчлетесси;

— ӳсен-тăран тĕнчине сыхлама, упрама хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Калава вулани.

**2.** Тимлĕ вуланине тĕрĕслени.

— Йăмра, хăва, çӳçе сулçисем мĕнлерех? *(Вĕсем пĕр евĕрлех.)*

— Ку йывăçсем мĕнпе уйрăлса тăраççĕ? *(Пĕвĕ-сийĕпе.)*

— Йăмра вулли мĕн хулăнăш? *(Икĕ метра çитет.)*

— Хăвапа çӳçе мĕнле йывăçсем? *(Вĕсем лутра тĕмĕсем.)*

— Йăмрана чăвашсем ăçта лартса ӳстернĕ? *(Урам икĕ енне.)*

— Хăвапа çӳçе ăçта ӳсеççĕ? *(Шыв хĕрринче.)*

— Хăвапа çӳçе ӳсекен вырăнсенче юхан шыв мĕнле? *(Юхан шыв типмест, таса, тулăх юхать.)*

— Хăва хуллинчен мĕн тăваççĕ? *(Карçинккасем çыхса хатĕрлеççĕ.)*

— Тата мĕн тунине пĕлетĕр? *(Тата кăрмансем, хыçлă пукансем тăваççĕ.)*

— Шкул ачисем çынсене мĕнле пулăшаççĕ? *(Çак йывăçсене лартса ӳстерес ĕçе хастар хутшăнаççĕ, çырма-çатрасемпе юхан шывсен çыранĕсене пиншер сапан лартса хăвараççĕ.)*

— Сапан мĕн вăл? *(Сапан вăл лартса ӳстермелли йывăç турачĕ.)*

**3.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

— Ку калав — ансат ăслăх хайлавĕ.

**4.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туни.

**5.** Киле ĕç пани. «Йăмра» калава ăса хывмалла. Каласа пама хатĕрленмелле.

## 69-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Ç. Элкерĕн «Юман» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (51 с.).

**Урок теми:** Ç. Элкер. «Юман». Сăнлав.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— юман çинчен çĕнĕ пĕлӳ парасси;

— ыйтусем тăрăх текста тишкерес ăслайсене аталантарасси;

— тимлĕ, ăнланулла тата палăртулла вулав хăнăхăвĕсене тарăнлатасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Юман — хисеплĕ йывăç. Чăвашсем ăна авалтанпах çирĕплĕхĕшĕн юратнă. Халăх юррисенче çăкана аннепе, юмана аттепе танлаштарнă. Анчах юман та ĕмĕрлĕх йывăç мар.

**2.** «Юман» калава вулани.

**3.** Вак-тĕвексене палăртни.

— Юман мĕнле йывăç? *(Пиçĕ те питĕ çирĕп.)*

— Юманран мĕн-мĕн тăваççĕ?

— Чăваш юманĕнчен тунă япаласемпе мĕн илемлетнĕ? *(Мускавпа Петербургри керменсене.)*

— Петĕр патша чухне юманпа ăçта усă курнă? *(Карапсем тунă çĕрте.)*

— Юмансене ăçта-ăçта турттарса кайнă? *(Воронеж, Хусан çывăхне.)*

— Кашни лава миçе лаша кӳлнĕ? *(Вуншар, çĕршер лаша.)*

— Юмансене пăчкăпа е пуртăпа касса тирпейленĕ? *(Пуртăпа касса.)*

— Юман вăрманĕсем мĕншĕн сахалланса юлнă? *(Вĕсене ним шелсĕр касса пĕтернĕ.)*

— Ачасем вăрмансене мĕн тăва-тăва çакаççĕ? *(Кайăк вĕллисем.)*

— Кайăксем мĕнсене пĕтереççĕ? *(Юман хурт-кăпшанкисене.)*

**4.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**5.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туни.

**6.** Киле ĕç пани. Вулани евĕрлĕ «Юман» калав ăсламалла, каласа памалла.

## 70-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Г. Орловăн «Вăрманăн пĕрремĕш купченеçĕ» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (52 с.).

**Урок теми:** Г. Орлов. «Вăрманăн пĕрремĕш купченеçĕ». Калав.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— вуланă текст тăрăх сăмахлă ўкерчĕк тума хăнăхтарасси. Калавпа сăнлава пĕр-пĕринчен уйăрма хăнăхтарасси;

— текста пахалас тата тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене аталантарасси;

— çут çанталăкри пулăмсене асăрхама, вĕсемпе киленме хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Калав ятĕнчен унта мĕн çинчен çырнине чухлама пулать-и? *(Пулмасть. Тен, чечек çинчен, тен, кăмпа çинчен, тен, тата ытти мĕн те пулин çинчен çырнă унта.)*

**2.** Калава вулани.

**3.** Вулав тимлĕхне тĕрĕслени.

— Хăш вăхăт çинчен çырнă? *(Май уйăхĕн пуçламăшĕ çинчен.)*

— Вăрман мĕн тăхăнать? *(Çĕнĕ тум.)*

— Вăл мĕнпе тулнă? *(Кайăксен юрри-сассипе, сĕткен юхтаракан тем тĕрлĕ йывăç-курăкпа, нўрĕ çĕр ăшшипе.)*

— Сукмак çумĕнче мĕн ларать? *(Пыл курăкĕ.)*

— Ăвăслăхра сывлăш мĕнлерех? *(Йўçекрех пылак, уçă-уçă.)*

— Кăпăшка çĕрте мĕнле кăмпа ларнă? *(Кăтра кăмпа.)*

— Вăл мĕн тĕслĕ? *(Сарă-хăмăр тĕслĕ.)*

— Вăл мĕн пысăкăш? *(Чăх çăмарти пысăкăш.)*

— Пуçĕ мĕнле? *(Кăтра.)*

— Ку кăмпа хăçан тухать? *(Çур аки вăхăтĕнче.)*

— Автор вăрманăн пĕрремĕш кучченеçĕ тесе мĕне калать? *(Кăтра кăмпана.)*

**4.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**5.** Хушма ыйтусемпе ĕçлени.

— Калаври вăрмана, пыл курăкне, ака кăмпине сăнланă. Пыл курăкне сăнлакан предложенисене тупса вулăр. *(Сайра çулçăллă, туни çăмламас. Тăрринчи хăш-пĕр çеçкисем ватăлса кăвакарма та ĕлкĕрнĕ. Çамрăкраххисем йĕпкĕн хĕрлех-ха.)*

— Кăтра кăмпана мĕнле сăмахсемпе сăнланă? *(Пурте сарă-хăмăр. Тĕксĕмленме, хуралма ĕлкĕреймен. Пурте чăх çăмарти пысăкăш кăна. Пыл карасĕ евĕр путăк-шăтăклă. Унăн пуçĕ кăтра. Хăй çĕр çумнех лăпчăннă.)*

**6.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**7.** Киле ĕç пани. Кăтра кăмпана калавра сăнланă тăрăх ӳкермелле.

## 71-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери М. Волкован «Хурлăхан, ан хурлан» сăвви; Р. Сарпин «Кӳлĕ» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (52—54 с.).

**Урок теми:** Сăнарлăх мелĕсем. Пулăмсемпе ӳкерчĕксене танлаштарни.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— сăвăсенчи сăнарлăх мелĕсемпе хатĕрĕсене сăнаттарасси;

— сăвăсене тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене аталантарасси;

— çут çанталăк пулăмĕсене асăрхама, вĕсемпе киленме хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Хурлăхан, ан хурлан» сăвва сасăпа вулани. (Малтан учитель вулать, кайран — ачасем.)

**2.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**3.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**4.** Пĕтĕмлетни. Чĕлхене илемлĕ те витĕмлĕ тумалли майсене сăнарлăх хатĕрĕсем (мелĕсем) теççĕ. Ку сăмахсем тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшлĕ пулма пултараççĕ. Вăл сăмахсем: эпитетсем, танлаштарусем, метафорăсем т.ыт.те.

**5.** «Кӳлӗ» сӑвва сасӑпа вулани.

**6.** Сӑвва кӗнекери ыйтусемпе ӗҫсем тӑрӑх тишкерни.

**7.** Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени.

**8.** Пӗтӗмлетни. «Кӳлӗ» сӑвӑра ҫут ҫанталӑк пулӑмӗсене чӗрӗ чунлӑ туса сӑнланӑ. Ҫакна сӑпатлантару (олицетворени) теҫҫӗ. Ку мелпе сӑвӑсенче анлӑ усӑ кураҫҫӗ.

**9.** Киле ӗҫ пани. Сӑвӑсенчен пӗрне пӑхмасӑр калама вӗренмелле.

## 72-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери Н. Сладковӑн «Пулӑ тӑвӑнни» калавӗ; ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсем (54—55 с.).

**Урок теми:** Н. Сладков. «Пулӑ тӑвӑнни». Калав. Каласа пани.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— текста ыйтусем пулӑшнипе тишкерес ӑслайсемпе хӑнӑхусене малалла аталантарасси;

— вулав тимлӗхне ӳстерессе;

— чӗр чунсене хӗрхенме, вӗсене сыхлама хӑнӑхтарасси.

### Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи калаҫу. Ҫут ҫанталӑкра эпир пӗлменни, ӑнланманни питӗ нумай. Ҫут ҫанталӑка упрас тесен нумай вӗренмелле. Ҫыравҫӑсем хӑйсем мӗн пӗлнине ҫырса кӑтартаҫҫӗ. Вӗсен хайлавӗсене вуласан пирӗн ӑс-пуҫ та уҫӑлать, кӑмӑл-сипет те тасарах пулать.

**2.** Калава вулани.

**3.** Вулав тимлӗхне тӗрӗслени.

— Ӗҫсем ӑҫта пулса иртеҫҫӗ? ***(Вӑрманти кӳлӗре.)***

— Пулӑ ҫиеле хӑш вӑхӑтра тухать? ***(Хӗвел ансан.)***

— Пур ҫӗрте те мӗн курӑнать? ***(Пулӑ ҫӑварӗ, пулӑ ҫурӑмӗ.)***

— Ирхине мӗн куратӑн? ***(Кӳлӗ хӗрринче тӑршшӗпех вилнӗ пулӑ сарӑлса выртать.)***

— Ҫанталӑк мӗнле? ***(Тахҫантанпах ҫумӑр ҫумасть, ҫанталӑк шӑрӑх тӑрать.)***

— Кӳлӗри шывра сывлӑш нумай-и? ***(Сывлӑш сахал.)***

**4.** Калава кӗнекери ыйтусемпе ӗҫсем тӑрӑх тишкерни.

**5.** Вуланӑ текст тӑрӑх «Пулӑ мӗншӗн тӑвӑнать?» ятлӑ кӗске калав ӑслани.

**6.** Киле ӗҫ пани. Ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсене тумалла.

## 73-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Г. Харлампьевăн «Çумăр» калавĕ; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (55—56 с.).

**Урок теми:** Çанталăк паллисем. Сăнлăхпа сăнарлăх.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— паллăсем тăрăх çанталăк мĕнле пулассине чухлама вĕрентесси;

— текста тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене малалла аталантарасси;

— çут çанталăк илемне асăрхама, унпа киленме хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Çанталăк мĕнлерех пуласса тĕрлĕрен паллăсем асăрхаттараççĕ. Сăмахран, ваттисем çапла сăнанă: ирхине вăйлă сывлăм ÿксен çумăр пулмасть. Чĕкеçсем çĕр çумĕпе вĕçсен çумăр пулать.

**2.** «Çумăр» калава вулани.

**3.** Вулав тимлĕхне тĕрĕслени.

— Чи малтан мĕнле çырла пиçет? *(Хурăн çырли.)*

— Унтан хăш çырласем пиçеççĕ? *(Хăмла çырли, хура çырла, хурлăхан, палан.)*

— Сăр вăрманĕ мĕнле кăмпапа пуян? *(Яка кăмпа, хурăн кăмпи, ăвăс кăмпи, уплюнкка, шур кăмпа, кăрăç, хыр кăмпи.)*

**4.** Калава ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**5.** Калава рольпе вулани.

**6.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**7.** Киле ĕç пани. Калава палăртуллă вулама вĕренсе килмелле.

## 74-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Н. Шупуççыннин «Каç пулчĕ» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (56 с.).

**Урок теми:** Çут çанталăка сăнас ăсталăх. Сăнлăхпа сăнарлăх.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— кунпа çĕр ылмашнă вăхăтри илеме сăнама, асăрхама хăнăхтарасси;

— илемлĕ вулав ăслайĕсене аталантарасси;

— çут çанталăка юратма, унăн илемĕпе киленме хавхалантарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Çут çанталăкра кашни самантăн хăйĕн илемĕ пур. Çыравçăсем, ӳнерçĕсем çав илеме кураççĕ. Вĕсем ăна хут çине çырса, ӳкерсе кăтартаççĕ. Эпир çавна нумай чухне асăрхамасăрах иртсе каятпăр. Кайран çыравçăсем çырнине вулатпăр та тĕлĕнетпĕр, мĕнле асăрхаман-ха çакна тетпĕр.

**2.** «Каç пулчĕ» сăвва вулани.

**3.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Ĕç тетрадĕнчи ĕçсене туни.

**5.** Киле ĕç пани. Сăвва пăхмасăр калама вĕренмелле.

## 75-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери А. Алкан «Малтанхи аслати»; С. Асаматăн «Çумăр ташши» сăввисем; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (57 с.).

**Урок теми:** Сăвăра туйăмсем палăрни. Сасă çырăвĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— çут çанталăк паллисене сăнама вĕрентесси. Сăвăç сасăсемпе сыпăксен янăравлăхĕпе усă курнине асрăхама пулăшасси;

— сăвă текстне тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене аталантарасси;

— çут çанталăк илемне туйма хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** «Малтанхи аслати» сăвва сасăпа вулани. (Малтан учитель, кайран ачасем вулаççĕ.)

**2.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**3.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**4.** «Çумăр ташши» сăвва вулани. (Малтан учитель, кайран — ачасем.)

**5.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**6.** Пĕтĕмлетни. С. Асамат хăйĕн сăввисенче сасăсемпе сыпăксен янăравлăхĕпе выляма юрататъ. Çут çанталăкри сасăсемпе хусканусене евĕрлесе асра нумайлăха юлакан сăнарсем ăсталатъ.

**7.** Киле ĕç пани. Сăвăсенчен пĕрне пăхмасăр калама вĕренмелле.

## 76-мěш урок

**Урокра кирлě хатěрсем:** кěнекери И. Гончаровăн «Аслатиллě çумăр умěн» калавě; ěç тетрадěнчи ěçсем (58—59 с.); ÿкерчěксен альбомěнчи ěçсем.

**Урок теми:** Сăнлавлă калаври ěç йěрки.

**Урок тěллевěпе задачисем:**

— сăнлавлă калаври ěç йěркине сăнаттарасси;

— текста шухăшпа тěллеве кура тивěçлě хăвăртлăхпа тата палăртулăхпа вуласси;

— çут çанталăк пулăмěсене сăнама хăнăхтарасси.

### Урок йěрки

**1.** Умěнхи калаçу. Çут çанталăкра кашни вăхăт, кашни самант хăйне евěр илемлě. Ÿнерçě чунлă çынсем кăсăклине, тěлěнмеллине кашни утăмрах асăрхама пултараççě. Вырăс çыравçи И. Гончаров аслатиллě çумăр мěнлерех капланса килнине сăмахсемпе питě ăста çырса кăтартать.

**2.** Калава вулани. (Малтан ăсра, унтан сасăпа.)

**3.** Вулав тимлěхне тěрěслени.

— Сывлăш пăчă-и е уçă? *(Пăчă.)*

— Вăрмана, йывăç-курăка мěнле тěс çапрě? *(Тискер тěс.)*

— Ял çине, вăрман çине мěн капланса килет? *(Хура, йěркесěр пěлěт.)*

— Йěркесěр пěлěт тенине мěнле ăнланатăр? *(Пěлěт айăн-çийěн çаврăнать. Ним йěрки те çук.)*

— Лашасемпе ěнесем мěн тăваççě? *(Ěнесем пуçěсене усрěç, лашасем хÿрисене пăтратаççě, тулхăраççě.)*

— Мěн капланса килет? *(Çумăр пěлěчě.)*

— Инçетре мěн илтěнсе кайрě? *(Кěрленě сасă.)*

— Вăрман çийěнчен мěн вěçсе килчě? *(Уçă сывлăш.)*

— Ун хыççăн мěн кěрлесе килчě? *(Вăйлă тăвăл.)*

— Вăйлă тăвăл мěн хăтланать? *(Хуралтă тăррисене, хÿмен çěрěк хăмисене илсе ывăтать.)*

— Ун хыççăн мěн пулчě? *(Аслати авăтса ячě, сывлăш уçăлчě.)*

**4.** Калава кěнекери ыйтусемпе ěçсем тăрăх тишкерни.

**5.** Калав содержанине майлаштарнă план тăрăх каласа пани.

**6.** Ěç тетрачěпе ěçлени.

**7.** Киле ěç пани. Ÿкерчěксен альбомěнчи ěçсене пурнăçламалла.

## 77-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Ç. Элкерĕн «Çуллахи ир» сăвви; ĕç тетрадĕнчи ĕçсем (59—60 с.); ӳкерчĕксен альбомĕнчи ĕçсем.

**Урок теми:** Ӳнерçĕ тата сăвăç ӳкерчĕкĕсем.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— ӳнерçĕ тата сăвăç хайлавĕсене танлаштарма хăнăхтарасси;

— сăвва туйăмпа тата палăртуллă вулас ăслайсемпе хăнăхусене аталантарасси;

— çут çанталăкри илеме асăрхама вĕрентесси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Çут çанталăк пулăмне сăрăпа та, сăмахсемпе те ӳкерсе кăтартаççĕ. Сăрăпа ӳкерекене ӳнерçĕ теççĕ, сăмахсемпе ӳкерекен — сăвăç. Сăрăпа куçа мĕн курăннине кăна палăртма пулать. Сăмахсем — вăйлăрах хатĕр. Вĕсемпе хăлхана мĕнле сасăсем кĕнине те, этемĕн туйăм органĕсем мĕн туйнине те палăртма май пур. Çапла вара сăмах питех те вăйлă хатĕр пулса тăрать. 212-мĕш страницăри ӳкерчĕке сăнар-ха. Унта мĕне-мĕне ӳкернине тата вĕсене мĕнле-мĕнле тĕспе илемлетнине асăрхар. (Хĕвел хĕрлĕ, унăн шевлисем сарă, кайăксем вĕçсе пыраççĕ, тӳпе кăвак, лапсака пĕлĕтсем курăнаççĕ, юхан шыв хĕрринче — симĕс тĕмсем, шыв питтинче хĕвел шевлисем, ешĕл çаран, ешĕл хурăн.)

— Ӳкерчĕке пăхса çут çанталăкăн хăш вăхăтне (хĕлле, çулла, çуркунне, кĕркунне), талăкăн хăш самантне (ир, кун, каç, çĕрле) сăнланине чухлама пулать-и? *(Çуллахи ир.)*

— Ир пулнине ăçтан пĕлтĕмĕр? *(Хĕвел хĕрелсе тухать. Тавралăх çап-çутă мар. Кайăксем вăраннă ĕнтĕ.)*

**2.** «Çуллахи ир» сăвва вулани. (Ачасем ăсра вулаççĕ, унтан учитель сасăпа вулать, вара ачасем сасăпа вулаççĕ.)

— Сăвăра тĕсе пĕлтерекен сăмахсене тупăр. *(Шупка шурăмпуçĕ; çăлтăр вучĕ (хĕрлĕ тĕслĕ); кăвак тĕтресем; хĕвел (хĕрлĕ тĕслĕ); çерем, уй, улăх (пурте симĕс тĕслĕ.)* Поэт шупка, хĕрлĕ, кăвак, симĕс тĕс ячĕсемпе усă курать.)

**3.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлени (сăрласа илемлетесси, смайликсем ӳкересси: 1-мĕш ӳкерчĕкре хĕвел анса ларнине сăнланă, тунсăх пусать; 2-мĕш ӳкерчĕкре хĕвел тухнине сăнланă, хаваслăхпа савăнăç çуралать.)

**5.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**6.** Киле ĕç пани. Сăвва пăхмасăр калама вĕренсе килмелле.

## 78-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕр:** кĕнекери Ю. Силэмĕн «Утă çинче вăрманта» калавĕ.

**Урок теми:** Ю. Силэм. «Утă çинче вăрманта» калав, унăн планĕ.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрас, текст содержанине каласа парас ăслайсемпе хăнăхусене малалла аталантарасси;

— вулав пахалăхĕсене тарăнлатасси;

— ĕçе юратма, ĕçпе савăнма хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Этеме ытти чĕр чунсенчен уйăраканни, этеме этем тăваканни вăл — ĕç. «Ĕç — пурнăç илемĕ. Ĕçле, ĕçле, ĕçле çи; ĕçлемесен ан та çи», — теççĕ ваттисем. Чăваш ачисем мĕн пĕчĕкрен ал çемми ĕçе вĕренсе ÿсеççĕ. Анчах кирек хăш ĕçĕн те майĕ пур, ăна пĕлмелле. Майне пĕлмесен ĕç каймасть.

**2.** Калава вулани. (Ачасем малтан ăсра, кайран сасăпа вулаççĕ.)

**3.** Вулав тимлĕхне тĕрĕслени.

— Утта ăçта кайнă? *(Вăрмана.)*

— Вĕсем мĕнле ĕç хатĕрĕсем илнĕ? *(Ашшĕпе амăшĕ — çавасем, Алюнапа Алик — кĕреплесем.)*

— Хăçан çула тухаççĕ? *(Ирхине ирех.)*

— Çитĕннисем утă çулнă чухне ачасем мĕн тăваççĕ? *(Çырла çиеççĕ.)*

— Утта мĕнле курăксем пуçтарăнаççĕ? *(Клевер, люцерна, çĕр çырли.)*

— Мĕншĕн çара пуçăн юлма юрамасть? *(Вĕри тивесрен.)*

**4.** Калава кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**5.** Текста планпа килĕшÿллĕн пайласа вулани.

— Утă вăхăчĕ çитрĕ. (Текст пуçламăшĕнчен пуçласа «...чечек-курăк чĕлтĕртетĕвĕпе кĕтсе илет» таранччен.)

— Аслисем утӑ ҫулаҫҫӗ. («Ҫитӗннисем каҫалӑк умне тӑчӗҫ» сӑмахсенчен пуҫласа «Ҫулакансем йывӑҫ сулхӑнне канма ларчӗҫ» сӑмахсем таран.)

— Ачасем ҫава тытасшӑн. («Аслисем каннӑ хушӑра ачасем ҫулма хӑтланса пӑхрӗҫ» сӑмахсенчен пуҫласа текст вӗҫӗччен.)

**6.** Киле ӗҫ пани. Калав содержанине план ыйтӑвӗсемпе килӗшӳллӗн пайӑн-пайӑн каласа пама хатӗрленмелле.

## 79-мӗш урок

**Урокра кирлӗ хатӗрсем:** кӗнекери А. Костецкин «Утӑра» сӑвви; ӗҫ тетрадӗнчи ӗҫсем (61—62 с.).

**Урок теми:** А. Костецкий. «Утӑра». Автор туйӑмӗ тата шӳт.

**Урок тӗллевӗпе задачисем:**

— шӳтлӗ хайлав паллисене аса илсе ҫирӗплетесси;

— текста тишкерес ӑслайсемпе хӑнӑхусене аталантарасси;

— вулав пахалӑхӗпе хӑвӑртлӑхне ӳстересси.

### Урок йӗрки

**1.** Умӗнхи калаҫу. Пурнӑҫри йывӑрлӑхсене ҫӑмӑллӑнрах тӳссе ирттерме шӳт пулӑшать. Ҫын кӑмӑлне хуҫас мар тесен шӳтлеме те пӗлмелле. Ҫыравҫӑсем ҫак мелпе анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Пулма пултарайман ӗҫсем ҫинчен шӳтлесе ҫырнине вуласан кӑмӑл ҫӗкленет.

**2.** «Утӑра» сӑвва сасӑпа вулани. (Малтан учитель, унтан ачасем учителе евӗрлесе вулаҫҫӗ.)

**3.** Пулма пултарайман, ытлашши ӳстерсе ҫырнӑ пулӑмсене палӑртни:

— Куян ашшӗ утӑ ҫулни; куян амӑшӗ утта купалани; ҫурисем утта турттарни; пӗр сулсан капан пулни.

**4.** Сӑвва кӗнекери ыйтусемпе ӗҫсем тӑрӑх тишкерни.

**5.** Ӗҫ тетрачӗпе ӗҫлени.

**6.** Киле ӗҫ пани. Сӑвва палӑртуллӑ вулама вӗренмелле.

## 80-мĕш урок

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** кĕнекери Г. Тал-Мăрсан «Хирте» сăвви; ĕç тетраденчи ĕçсем (62—63 с.); ўкерчĕксен альбоменчи ĕçсем.

**Урок теми:** Г. Тал-Мăрса. «Хирте». Туйăм тата сăнарлăх.

**Урок тĕллевĕпе задачисем:**

— текста тишкерес ăслайсемпе хăнăхусене çирĕплетесси;

— вулав пахалăхĕпе хăвăртлăхне ўстересси;

— çуллахи çанталăка сăнама, илеме асăрхама хăнăхтарасси.

### Урок йĕрки

**1.** Умĕнхи калаçу. Çулла шкул ачисем канаççĕ. Июнь, июль, август уйăхĕсем — ытла та паха вăхăт. Çанталăк ăшă, сад-пахчасенче тĕрлĕ çимĕç пиççе çитет. Ачасем кану лагерĕсенче канаççĕ, сывлăха çирĕплетеççĕ. Вăй çитнĕ таран аслисене çу ĕçĕсенче пулăшаççĕ. Пушă вăхăтра пулă тытаççĕ, çырлана, кăмпана çўреççĕ. Çу вăхăтĕнче те кĕнеке вулама манмалла мар, çут çанталăка сăнамалла, хальччен асăрхаманнине асăрхама тăрăшмалла, çавна хут çине çырса хумалла.

**2.** «Хирте» сăвва вулани. (Учитель палăртуллăн, туйăмпа вулать, унтан ачасем учителе евĕрлесе вулаççĕ.)

**3.** Сăвва кĕнекери ыйтусемпе ĕçсем тăрăх тишкерни.

**4.** Ĕç тетрачĕпе ĕçлени.

**5.** Киле ĕç пани. Ўкерчĕксен альбоменчи ĕçсене пурнăçламалла.

## Вулав ăслайĕсене аталантармалли хăнăхтарусем

Вулав çын аталанăвĕшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вулав ăслайĕсене аталантарас, çивĕчлетес ĕçре ăнкару-чухлав хăнăхăвĕсене çивĕчлетесси пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пултару ӳссе пынăçемĕн куç пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн ытларах курма хăнăхса пырать. Çапла майпа ăнлану, ăс вăйĕ вулавпа пĕр харăсах вăйланса пыма пуçлать, каярах вара унран иртсе те каять — ăнкару-чухлав пултарулăхĕ аталанса çитсен.

Вулав ăслайĕсене аталантармалли уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ хăнăхтарусем пур. Кашни учитель вĕсемпе усă курса хăй хăнăхтарăвĕсене ăслама пултарать. Акă, сăмахран:

**1.** Юпасенчи сыпăксене пĕрлештерсе хăвăрт вулăр.

Вĕ
Вĕ-рен
Вĕ-рен-ет
Вĕ-рен-ет-пĕр

Шкул
Шкул-та
Шкул-та-вĕ-ре-нет-пĕр
Э-пир
Э-пир-шкул-та-вĕ-ре-нет-пĕр

**2.** Юпасенчи сăмахсене май пур таран хăвăрт вулăр.

Лар
Лар-пар
Лар-пар-тар
Лар-пар-тар-пыр
Лар-пар-тар-пыр-кур...

**3.** Сăмахсене вакламасăр, пĕр сăмах пек вулăр.

Вăрман урлă, кайри-мала, ача сачĕ, час-часах, эпĕ те, пирĕн пата, пĕчĕк ача, Хĕрлĕ Чутай, Мăн Чураш, Тăван çĕр-шыв, пит-куç, супăнь хăмпи, хĕрпе каччă, атте-анне, аш-какай, тĕрĕс çыр, калаçса ан лар, Палюк мучи, юхан шыв, хĕр ача, арçын ача, çумăр çăвать, аслати кĕрлет, лайăх вĕренет.

**4.** Хăвăрткаларăшсене пӳрнепе йĕрлесе пырса вулăр. Секундомерпа усă курсах ăмăртусем йĕркелĕр — хăшĕ хăвăртрах та уçăмлăрах вулать?

1) Пушкăртри паттăр Петĕрĕн пĕртен-пĕр пакăлти Пăлакийĕ пысăклансан пуканесĕр пурăнма пултарайман.

2) Шăрăхăн шăрши çук, шăршăн шăрăхĕ çук.

3) Уçкара уçă, Уçăпра укçа.

4) Çак тимĕре тимĕрçĕ лаççине кайса лаптаклаттар; лаптаклаттаратăн-и, лаптаклаттараймастăн-и, лаптаклаттарсан-лаптаклаттармасан та каялла килсе пар.

**5.** Хăвăрткаларăшсене сăмахсене уйăрмасăр хăвăрт вулăр, кайран кашни сăмаха уйăрса вулăр, унтан кашни сăмаха уйăрса васкамасăр вулăр.

**6.** Малтан вуланине хăвăрт каласа, çĕнĕ сăмахсене пĕрерĕн хушса пырса, предложенисене туллин вулăр.

Петĕр вĕренет. *(Шкулта.)*
Петĕр шкулта вĕренет. *(Пирĕн.)*
Петĕр пирĕн шкулта вĕренет. *(Иккĕмĕш класра.)*
*Петĕр пирĕн шкулта иккĕмĕш класра вĕренет.*

**7.** Вулав хăвăртлăхне пăхăнса вулăр.

1) Васкамасăр, тулли сăмахсемпе. (Сăвва е калав сыпăкне.)

2) Вăтам хăвăртлăхпа, палăртулăх правилисене шута илсе. (Сăвва е калав сыпăкне.)

3) Хăвăрт. (Хăвăрткаларăшсене.)

4) Малтан кашни сăмаха уйăрса васкамасăр, кайран — васкаса, хăвăрт. (Хăвăрткаларăшсене, сăвă, калав сыпăкне.)

**8.** Малтан сасса ӳстерсе пырса, кайран шăпланса пырса (е урăхла йĕркепе) вулăр.

Па-пу-пы-пи-пе Ра-ру-ры-ри-ре...

**9.** Тĕрлĕ хăвăртлăхпа вулăр. Хытă-хуллен-яланхи йĕркепе (е урăхларах вариантсемпе). (Сăвă, калав сыпăкне.)

**10.** Шухăш тĕшшине палăртарах каласа вулăр.

**11.** Кайăк (чĕр чун, йывăç...) ячĕсене ăмăртмалла хăвăрт вулăр. (Сыпăксене ылмаштарса лартмалла.)

калвакă *(кăвакал)* насă *(ăсан)*
какач *(чакак)* акчурх *(хурчка)*
аккаалут *(ула такка)*

**12.** Калав сыпăкне пĕрер сăмахăн вулăр. Ăçта сывлăш çавăрса ятăр?

**13.** Предложенисене условисене пăхăнса вулăр: тĕлĕнсе, сивлесе, тарăхса, пăшăрханса.

**14.** Малтан шăппăн пуçлăр та шава ӳстерсе те ӳстерсе пырса вуласа пĕтерĕр (шавлăн пуçлăр та шава чакарса пырса вуласа пĕтерĕр). (Сăвă, калав сыпăкне.)

**15.** Çак йĕркепе ăмăртмалла вулăр: а) вĕçен кайăксем; ă) шыври пурăнакансем; б) килте пурăнакансем.

Ула такка, акула, ĕне, кит, йытă, ăсан, сурăх, чакак, качака, ăмăрт кайăк, çупах, курак, рак, çерçи, кăсăя, сысна, кушак, кăсăя, карп, карас, чана.

**16.** «Паян лайăх çанталăк» сăмахсене тĕрлĕрен кăмăлпа вулăр.

1) Хăвăр пата пыма чĕнсе кăчăк туртса.
2) Çиллессĕн алăпа юнаса.
3) Саламласа аллуна çӳлелле çĕклесе.

## Терминсен чăвашла-вырăсла словарĕ

Ĕç — действие

Ĕç-хĕл — деятельность

Ăнлав — понятие

Ăнланни — понимание

Ăса хывни — запоминание

Ăслай — умение

Асăмлани — воспроизведение

Аса илни — повторение

Вулавçă ăслайĕ — читательское умение

Йышăну — восприятие

Илемлĕ хайлава йышăнни — восприятие литературного произведения

Литература вĕрентĕвĕ — литературное образование

Литература аталанăвĕ — литературное развитие

Мехел — потенциал

Пĕлӳ — знание

Пĕрремĕш хут пĕрлĕхлĕ вулани — первичное целостное чтение

Палăрту — обозначение

Прозăлла текст — прозаический текст

Сăвăлла текст — стихотворный текст

Туйăмлă йышăну — эмоциональное восприятие

Хăнăху — навык

Хăтланăш — поступок

Чи çивĕч самант — кульминация

# Литература

*Антонова З.С.* Чăваш сăмахлăхĕн вĕрентӳ меслечĕсем: чăваш шкулĕн 5—11-мĕш класĕсенче вĕрентекенсем валли / З.С. Антонова, В.П. Станьял. — Шупашкар, 2006.

*Афанасьев П.В.* Писатели Чувашии: биобиблиографический справочник / П.В. Афанасьев. — Чебоксары, 2006.

*Воюшина М.П.* Анализ художественного произведения на уроках чтения во втором классе четырехлетней начальной школы / М.П. Воюшина. — Л., 1989.

*Выготский Л.С.* Психология искусства / Л.С. Выготский. — М., 1989.

*Кудина Г.Н.* Как развивать художественное восприятие у школьников / Г.Н. Кудина, З.Н. Новлянская, А.А. Мелик-Пашаев. — М., 1988.

*Лазарева В.А.* Технология анализа художественного текста на уроках литературного чтения в начальной школе / В.А. Лазарева. — М., 2001.

*Левин В.А.* Когда маленький школьник становится большим читателем / В.А. Левин. — М., 1994.

*Леонтьев А.* А. Обучение чтению младших школьников: из опыта работы / А.А. Леонтьев. — М., 1981.

*Львов М.Р.* Методика преподавания русского языка в начальных классах / М.Р. Львов, В.Г. Горецкий, О.В. Сосновская. — М., 2000.

*Матвеева Е.И.* Учим младшего школьника понимать текст: практикум для учащихся / Е.И. Матвеева. — М., 2007.

*Метин П.Н.* Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем: шкул словарĕ / П.Н. Метин, А.И. Мефодьев. — Шупашкар, 1997.

*Никифорова О.И.* Восприятие художественной литературы школьниками / О.И. Никифорова. — М., 1959.

*Артемьева Т.В.* Пуçламăш шкулта литература вулавне йĕркелесси: меслетлĕх кăтартăвĕсем / Т.В.Артемьева, А.Р.Кульева, О.И.Печников. — Шупашкар, 2007.

Тăван чĕлхе программи: чăваш шкулĕн 1—4 класĕсем валли / М.К. Волков [т.ыт.]. — Шупашкар, 2008.

Чăваш чĕлхи методики: пуçламăш шкул учителĕсемпе вĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли / Л.П. Сергеев [т.ыт.]. — Шупашкар, 2002.

## Тупмалли

Программăран ........................................................ 3
Литература вулавĕн «Ешĕл калча» кĕнеки тытăмĕ ........ 6
Вулавçă ăслайĕсене йĕркелесси ................................ 9
Ачасен литература аталанăвĕн шайне тĕрĕслесе палăртасси ................................................................ 12
Ӳкерчĕксен альбомĕпе ĕçлесси .................................. 14
Уроксем .................................................................. 18
Вулав ăслайĕсене аталантармалли хăнăхтарусем ........ 106
Терминсен чăвашла-вырăсла словарĕ ...................... 109
Литература ............................................................. 110

*Учебное издание*

Авторы

**Тамара Васильевна Артемьева**
**Олег Иванович Печников**

**ЛИТЕРАТУРА**
**ВУЛАВĔН УРОКĔСЕМ**
**2 КЛАСС**

---

**УРОКИ ЛИТЕРАТУРНОГО**
**ЧТЕНИЯ ВО 2 КЛАССЕ**

Методические рекомендации

*На чувашском языке*

Редактор *М.И. Скворцов*
Корректоры *В.А. Филиппова, Л.В. Егорова*
Верстка *Л.К. Михайловой*

Подписано в печать 23.06.2011. Формат 60x84 $^1/_{16}$. Печать оперативная.
Гарнитура Times. Физ. печ.л. 7,0. Тираж 1000 экз. Заказ № 176.

Издательский центр Чувашского республиканского института образования.
428017, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М.Горького, 5.

Отпечатано с готового оригинал-макета
в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 41-17-87. E-mail: newtime1@mail.ru.

35.2